90-31

ЯЛАВ
БИБЛИОТЕКИ

Валентина ЭЛЬБИ

# КАЧЧА КАЙИЧЧЕН

КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

«ЯЛАВ» БИБЛИОТЕКИ
2 (86) КӐЛАРӐМ

Валентина ЭЛЬБИ

# КАЧЧА КАЙИЧЧЕН

ПОВЕСТЬ

КПСС Чӑваш обкомӗн издательстви
Шупашкар — 1990



Валентина Эльбин малтанхи кӗнеки 1956 ҫулта пичетленнӗ. Унтанпа ӗнтӗ паллӑ писательница ҫирӗм кӗнеке авторӗ пулса тӑчӗ. Вӗсенчен паллӑраххисем — «Пулас кинсем», «Юратнӑ мӑшӑрсӑр», «Куҫса ҫӳрекен ҫурт», «Тинӗс чечекӗ» тата ыттисем.

Тӑван литературӑри ҫитӗнӳсемшӗн В. А. Эльбие Чӑваш АССР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ ятне панӑ.

© «Ялав» библиотеки

Государственная
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чувашской АССР
КОНТРОЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
„21" февраля 1990
№ 31

Йынăшни, айлатни, йывăр лав туртакан лаша урисем евĕр, костыль патаккисем урайне тăп-тăп! таплаттарни, хăвăрттăн утнипе пушмак кĕли тăк-тăк тăклаттарни, алкум вĕçне васкавлă медицина пулăшăвĕн машини кĕрлесе килсе чарăнни, уçса-хупнă самантра ун алăкне тискеррĕн шатлаттарни, коридор тăрăх тĕртсе пыракан урапа кустăрмисем карăлтатни — йăлтах пĕрле хутшăнса чуна сӳлеттерекен илемсĕр сасăпа тулса гăрать çак çурт. Пульница ку. Çыннăн тĕрлĕ инкеке пула сусăрланнă шăммисене юсаççĕ кунта.

1

Хуçара çу кунĕсем... Палатăра тӳсме çук пăчă. Уçă чӳречерен кĕрекен сывлăш эмелпе этем ӳчĕ-тирĕн шăрши-маршине ниепле те сирейместь.

Яланхиллех, ку хутĕнче те ир-ирех санитарка варкăштарса çӳреме тытăнчĕ. Пит патвар, ӳркенмен хĕрарăм. Çулĕпе вăл вăтăралла çывхарнă-тăр.

— Татьене, эсĕ мĕншĕн çутăлнă-çутăлман ура çинче? — терĕ ăна дежурнăй тухтăр.

— Ах, чăнкăрăм, илтмен-и вара эсĕ, Глеб Львович, ир тăракан çерçи тутă пулнă, тет, — шӳтлĕ-мĕнлĕ тавăрчĕ лешĕ, васкасах коридор урайне çума тытăнса.

— Эпир кăмăллă санпа. Спаççип! — тав турĕ ăна тухтăр.

— Чирлисем часрах сывалччăр тетĕп-çке, — йăл-йăл кулкаларĕ Татьене. Тухтăрăн ăшă сăмахĕ вăй вĕрсе кĕртрĕ ăна, чунне хăпартлантарчĕ. — Паян эпĕ пĕччен мар, мана пулăшакан пур.

— Пĕлетĕп. Килчĕ-и?

— Çитрĕ.

Кам-ха вăл, пулăшма килни? Студент-практиканка. Акă кам. Университетри медфакăн пĕрремĕш курсне пĕтерне скер. Пĕччен мар вăл, темиçен çаксем. Пульницана черетпе

çӳреççĕ. Врач пулмалли çыннăн ĕçĕ кунта санитартан пуçланать.

— Мĕн ятлă-ха эсĕ? — ыйтрĕ Татьене практиканткăран.

— Илона, — пĕлтерчĕ лешĕ.

— Эй, чăнкăрăм, темле ят та тупса хураççĕ вара ку чухне! — тĕлĕнчĕ санитарка.

— Ман ятăм сана килĕшмерĕ-и?

— Кама кирлĕ вăл мана килĕшнипе килĕшменни...

Илона хăй тăрăх куçĕсене çутăлтарса пăхкалать.

Татьене çакна асăрхамасăр юлмарĕ.

— Эсĕ ытла чечен тумланнă. Тухтăра, каччăсене сăхлантарасшăн-и?

— Ан мăшкăлла-ха! — Илона хаваслăн ихĕлтетрĕ. Сасси вара кĕслен çинçе хĕлĕхĕнни пек ачашшăн юхрĕ.

Çийĕнче Илонăн шурă капрон халат, пуçĕнче те чăлт шурă капрон калпак. Ун айĕн ни сарă, ни шурă — темле тĕссĕр çӳç пайăркисем тухнă. Пичĕ — çаврака уйăх. Куçĕ вара чăнчăн тĕлĕнтермĕш! Калăн: çăкăр питне пиççе çитмен шупка симĕс фасоль çыпăçнă та ăна çӳл енчен тĕкĕлтура хупласа тăрать, тейĕн.

Дежурнăй сестра сĕтелĕ патĕнчи стенари щит çинче пĕр лампочка мĕлтлете-мĕлтлете çуталса илчĕ.

— Сигнал! Чуп часрах саккăрмĕш палатăна, — хушрĕ Татьене практиканткăна. — Унта пиллĕкмĕш номерлĕ, тимĕр кашталлă кравать çинче Наçтуç выртать. Вăл чĕнет.

Хирĕçмерĕ Илона. Палатăна кĕчĕ, чирлин суднине пушатмалла-мĕн. Практикантка ăна туалета илсе кĕчĕ. Урнăна тăкнă чух ăнсăртран урайне юхтарчĕ.

— Кӳлленчĕке шăлса типĕт халех, — терĕ Татьене, туалета тем вăхăтра кĕрсе тăнăскер.

— Ну тата! Сыпăксăр кĕпçе мар-и сана! — кăшкăрса пăрахрĕ практикантка шутсăр тарăхнипе. Çунакан куçĕпе санитарка çине вут тивертмелле пăхрĕ. — Эпĕ мĕн мар-иç... Йĕрĕнетĕп!

— Тухтăра кала: чирлисен пăх-шăкне тасатма килмен, эпĕ — врач, те, — каялла чакакан йышши мар Татьене. Хăй ĕçĕнче такама итлеттерĕ.

— Мĕнпе шăлса типĕтмелле тет ман? — тарăхса ыйтрĕ хĕр.

— Ав тăлавар татăкĕ, — пуçне сулчĕ Татьене шывпа ларакан витре еннелле.

— Йĕпе ластăкпа мĕнле типĕтес?

— Пăр.

— Ых... — текелесе Илона капрон халат çаннине тавăрчĕ. Вара аллине витрене чикрĕ. Калăн, унта — йĕплĕ чĕрĕп! Практикантка, тăртанчăк тутине пăркаласа, лĕкленсе, чунтан çӳçенсе, кив-кирĕк татăкне аран-аран ярса тытрĕ, пăрчĕ

Пӳрнисем хушшинчен йăр-йăр юхакан шыв йăрпăкĕсем çине темле çĕленсем авкаланса тухнăн сехĕрленсе пăхрĕ.

Пурне те асăрхакан Татьене хăй ăшĕнче Илонăна ятласа тăчĕ: «...Ийе чăмласшĕ. Не най, тухайĕ-ши санран тухтăр. Çакăн йышшисене мĕн-ма вĕренме илеççĕ-ши?»

Анюк асне килчĕ. Çав хĕре Татьене чунтан хисеплет вара. Вăл пĕлтĕр балл çитменнипе университета кĕреймен, кунта санитаркăра ĕçleме килĕшнĕ. Хастарскер Анюк Юлхавланас йăла çук ун. Тирпейлĕхĕпе пурне те тĕлĕнтерет. Вăл ĕçленĕ кун палатăсем çуталса кăна тăраççĕ. Ăшă кăмăлне кура чирлисем те хисеплеççĕ ăна. Травматолог врач пулас ĕмĕтне хăй самантлăха та манмасть.

Татьене экзамен тыттаракансене кӳренет: «Хам кайса ăнлантарăттăм вĕсене, — пуплет вара ыттисемпе. — Анюкран чăн-чăн тухтăр пуласси таçтан паллă. Кăçал вĕренме кĕтĕрччех ĕнтĕ».

Илона туалета илсе килнĕ суднăна Татьене хăй çуса тасатрĕ те саккăрмĕш палатăна йăтса кайрĕ. Ав, ун хуçи пиллĕкмĕш койка çинче выртать. Çап-çамрăк хĕр вăл. Пĕвĕ çинçешке. Пилĕкĕ йĕп çăрти витĕр тухмалла. Сăмси шĕвĕрĕлсе юлнă. Куçĕсем çеç хăй вырăнĕнче — пиçсе çитнĕ икĕ слива, çур пите йышăннă. Çырă çӳçĕ вăрăм.

— Наçтуç, ырă ир пултăр! — ыттисене чăрмантарасран пăшăлтатса саламларĕ ăна Татьене санитарка.

— Хăвна та лайăххи яра куна чунна çăмăллăх кӳтĕр, — тавăрчĕ чирли.

— Каллех çывăраймарăн-и? Тӳсмелле мар ыратаççĕ-и урусем?

— Ыратнинчен ытла шухăшсем канăç памаççĕ.

— Аплах ан кулян. Хуйхăрни сăн-пите шуратать. Глеб Львович тухтăр хăвна утакан пуланах тет иç.

— Йăпатать çеç пулĕ. Нумай вăхăт иртрĕ, вĕçĕ-хĕрри пăхса та курăнмасть, — Наçтуç пичĕ тăрăх куççуль юхса анчĕ.

— Ерипен сывлăху таврăнĕ-ха. Эх, чăнкăрăм. Чир-чĕрпе инкек хапха уçса кĕрет, тухасса тĕнĕ витĕр тухать, теççĕ ге ĕнтĕ ваттисем. Шанчăка ан çухат, ачам.

Палатăна Илона кĕрсе тăчĕ. Вăл, сăмах-мĕн хушма тавçăрманскер, Наçтуç урисем çине куçне ывăтрĕ, тинкерсе-тинкерсе сăнарĕ, — мĕн мурĕ тăхăннă вăл. Паллах, пушмак мар. Пĕр пăхсан, икĕ ури те çĕнĕ çул елкине капăрлатнă пĕчĕк кăна чăрăшсене аса илтерет. Ара, ура пакăлчакĕ, кĕли чĕнтĕрлĕ кĕмĕл евĕр йăлтăртатакан çаврашкасем ăшĕнче. Йĕри-тавра — теттесем: çутă пăркăчсем, майра йĕпписем, хурçă патаксем, кăранташ вăрăмăшĕнчен ытла марскерсем...

«Урунта мĕн япала ку сан?» тесе ыйтассах ҫитнĕччĕ Илона, ăна палатăран Татьене ҫавăтсах илсе тухрĕ.

Коридор тăрăх утрĕҫ хайхискерсем.

— Ҫав Наҫтуҫ текенскере мĕн пулнă вара? — ыйтрĕ студентка.

— Икĕ урине те шартах хуҫнă сиксе. Пĕр уринеултă сехет, теприне тăватă сехет хушши операци турĕҫ, — ăнлантарчĕ Татьене, пульницара мĕн пулса иртнине йăлтах пĕлсе тăраканскер.

— У-у-уй! Вăл парашютистка-и, самолетран сикнĕ-и?

— Хĕр чысне упрас текен таҫтан та сикет, чăнкăрăм.

— Хĕр чысне упрас текен таҫтан та сикет, чăнкăрăм.

— Урисене мĕн тăхăнтартнă унне?

— Эх, эсĕ те ҫав, ху тухтăра тухасшăн, ним те пĕлместĕн. Илизаров аппарачĕ вăл, — тăнлантарать Татьене практиканткăна. — Чаплă аппарат: тĕпреннĕ шăмăсене хăй вырăнне майлаштарса лартать иккен. Пирĕн Глеб Львович ăста тухтăр, сывататех Наҫтуҫа.

— Чим-ха, эсĕ ҫав Наҫтуҫа хĕр терĕн. Анчах ун сылтăм аллин ятсăр пӳрнинче — венчет ҫĕрри, — хивреленчĕ Илона. — Апла вăл — арăм. Эсĕ вăл хĕр чысне упраса сикнĕ тетĕн. Тем ҫыхăнмасть, ваклашан ҫеҫ.

— Ҫапла-ҫапла тенипех Ҫавал урлă каҫаймăн, чăнкăрăм. Пире ĕҫ кĕтет. Пушансан пакăлтатăпăр, шăмăсăр чĕлхесене ирĕке ярса, — сăмах пăявне татрĕ Татьене.

## 2

Пульница вăраннă-вăранман медсестрасем хускалчĕҫ. Пĕри чирлисене укол тăвать; тепри эмел ĕҫтерет; виҫҫĕмĕшĕ хул айне градусник лартса температура виҫет.

Хĕвел ниме уямасăр хăпарать те хăпарать ҫӳлелле. Ун пайăркисем палатăсене кĕрсе шевлеллĕн выляҫҫĕ. Килĕштереҫҫĕ-ҫке вĕсем тасалăха! Ав епле йăлтăртатаҫҫĕ тумбочка, чӳрече янахĕ сăрлă урай ҫийĕн. Куншăн Татьенепе ăна пулăшакан практиканткăна ырламалла. Вĕсем ҫурĕҫ, шăлчĕҫ — ниҫта пĕр тусан пĕрчи хăварман.

Ентĕ чирлисем ирхи апат турĕҫ. Тухтăрсене кĕтеҫҫĕ. Вĕсем тухнă ав палатăсем тăрăх ҫӳреме. Кашни тухтăр хăй дежурнăй чухне пульницана йышăнса пулăшу панă пациентăн инкекĕ пирки ыттисене каласа ăнлантарать. Вăлах кашни суранне ҫĕнĕрен тĕрĕслет: палатăн медсестрине чирлĕ ҫынна мĕнле эмеллемеллине кăтартса хăварать.

Тухтăрсемпе медсестрасем саккăрмĕш палатăна ҫитсе кĕнине асăрхарĕ Илона. Ҫак саманта шутсăр кĕтнĕччĕ-ха вăл. Лешсем алăка хупмарĕҫ темшĕн, манчĕҫ-ши? Кĕтмен ăнăҫу

Илонăна ку çав тери çырлахтарать. Халĕ ун ури кушакăн пит çемçен, сасăсăр пускаласа, никам сисиччен чăмрĕ пала тăна. Çу-у-ук, тухтăрсем сурансене мĕнле сиплени илĕртмест-ха ăна. Ун чунне вĕчĕрхентерекенни — Наçтуç. Кам вăл? «Хĕр чысне упраса» ăçтан муртан сикнĕ? Мĕнле этем вăрласшăн пулнă хĕр чысне тата мĕнле майпа? Кăсăклантараканни тĕнчене шăнăçмасть. Татьене, тен, пĕлет-тĕр, анчах кĕт-ха ăна екки ярасса, каласа кăтартасса... Илонăна каппайланас, «пурне те пĕлсе тĕлĕнтерес» йăла йытпырши евĕр явăннă. Пульницаран илсе тухнă хыпара хăймапа пыл ярса çăрĕ, кункра çине хурса унĕ. Вара тантăш хĕрсене кашнинех кирлĕ таран «хыпар çырли» хыптарĕ. Тĕлĕннипе лешсем урараn йăванĕç.

Тухтăрсем палатăра кĕтесри кравать çинче выртакан аппа умĕнче тăраççĕ-ха.

— Раиса Федоровна, хăвăра кăшт çăмăлтарах туятăр-и? — калаçтарать ăна Глеб Львович.

— Сывлăш уççăн тухмасть çав, — тет хĕрарăм.

x x x

Кăкăр шăммисене хуçнă унне. Хăшпĕр çынсен йĕркесĕрлĕхне пула сусăрланнă вăл.

Раиса Федоровна — строитель. СУран вĕсене, виçĕ çынна, Атăл леш енне пионерсен лагерьне бассейн тунă çĕре янă. Атăл урлă чиперех ишнĕ пăрахут. Сулахай енчи çыранра, пăрахут чарăнас вырăнта, пристань тавраш çук. Трап хучĕç. Халăх пырса тăванчĕ. Кашниех чи малтан тухасшăн. Тĕркĕшӳ!

— Завода мар-çке, канма килетĕр. Ĕлкĕретĕр! Пурне те антаратпăр! Анваскăр! — астутарать матросĕ.

Итлĕç-и! Хĕстерсе лартрĕç ĕçе каякан Раиса Федоровнăна: ни каялла, ни малалла.

Çыран хĕрри çывăхрах, — ирĕклĕн утсан, виççĕ ярса пусмалăх çеç пулĕ... Трап карлăкĕ, пăявранскер, кĕлте çыххи пек, патăрт татăлать. Çынсем çавапа çулнăн тӳнеççĕ, Шăвшав çĕкленет, Раиса Федоровна та ыттисемпе пĕрле ӳкет. Аяла пулать. Ун çийĕнче темиçе пăтлă йывăр пусăркăч — темиçе этем. Аякне шĕвĕр вĕçлĕ-хыскачаллă чул муклашкисем пăралаççĕ. Ăçтан тӳсчĕр капла кăкăр шăммисем хуçăлмасăр!.. Выртать ав халĕ пульницара виççĕмĕш эрне. Çак хушăра сахал мар лайăх эмелпе сипленĕ ăна. Çапах ниепле те сывалаймасть-ха.

Глеб Львович палата сестрине Раиса Федоровнăна ĕçтерме таблетка ячĕсене калать, лешĕ çырса пырать тухтăр мĕн хушнине.

x x x

Юнашарти койкăна сарă та вăрăм çӳлĕ инке йышăннă. Чылайранпа кунта выртать, самаях хăвăрăлнă. Чĕлхи вара хурçă вĕçлĕ темелле. Кирек кама та касать, тататъ. Хăй шутсăр кутăн, чăркăш. Пуринпе те ятлаçать.- Ним те, никам та килĕшмест ăна.

— Мĕншĕн эсĕ ялан çынсен кăмăлне пăсан? — хăтăрчĕ ăна пĕррехинче Наçтуç. — Эпир кунта ĕмĕр пĕрле пурăнма пуçтарăнман. Пирĕн хамăра пачах урăхла тытмалла, пĕр-пĕрине сывалма пулăшмалла.

— Çырт шăлна! — кăшкăрса пăрахрĕ хайхискер. — Хăвна пĕл.

Çыхланиччен çыхăнманни тенешкел, алă сулчĕç ыттисем. Çак инкеке машшина таптанă. Шоферĕ кун сиктерсе килет ун патне. Кучченеç йăтать, тур çырлах!..

Ку инкепе тухтăрсем нимех те калаçмарĕç. Пĕри темле сĕнӳсем пачĕ, анчах Илона ăнланса юлаймарĕ. Тепĕр гесен, шутламарĕ те вăл хăлхине чикме. Кашнин сехметне ăша хурса пĕтереймĕн. Практиканткăн хăйĕн тĕллевĕ.

Акă ĕнтĕ тухтăрсем тинех Наçтуç умне пухăнчĕç. Илона вĕтеленсе ун койки пуçне пырса тайăнчĕ. Ун чĕринчи элекчелек арчи янк уçă, çĕнĕ интереслĕ хыпарпа тулĕ вăл кĕçех.

Глеб Львович аллинчи папкине уçрĕ. Хут листисем чăштăртатрĕç. Илона йĕп çинчи пек тăрать. Тухтăр тем びларĕ: сăмахĕсем вырăсла та, чăвашла та мар. Ăнланаймарĕ. Илона хăлхине вирлĕрех кӳлчĕ. Ăнман япала, шăп та шай çак вăхăтра ун хулĕнчен такам рак хаччипе хĕстернĕ пек ярса тытрĕ. Вăштах çаврăнса пăхрĕ хĕр, хула хĕстерекенĕ Татьенемĕн.

— Атя, чăнкăрăм.

Илона тарăхнипе çурăлмасăр тепле чăтрĕ. Анчах тухтăрсем умĕнче хуравлашма хăяймарĕ хĕр пĕрчи. Ирĕксĕрех санитарка хыççăн тĕнкĕлтетрĕ.

— Кам ирĕк панă сана ман хыççăн вăйкăнма? — мăкăртатрĕ вăл питĕ кăмăлсăррăн.

— Ан чанка-ха, тур пур. Пустуях хирĕлен. — Татьене чĕрине те сулхăн çапрĕ. — Палата урайĕсене çумалла.

— Аху-у! Каймастăп! Анчахрах чĕлхепе çуланă пек йăлт тасатса тухрăмăр-иç...

— Эх, чăнкăрăм, хăçан пулнă вăл! Ирхине ирех, — ярса тытрĕ Татьене ун аллине. — Унтанпа кам кăна таптамантăр! Тусан пĕр вершук купаланнă. Атя, нянюм, ĕçлер.

Витресене кранран шыв юхтарнă чух Илона Татьене куçĕнчен пăхса йăл-йăл кулчĕ. Вара йăваш сассипе ыйтрĕ:

— Çав Наçтуç патне камсем килсе çӳреççӗ? Каччӑсем ӑмӑртмаллах чыхӑнаççӗ-тӗр.

— Пачах асӑрхаман никама та.

— Мӗнле апла, ашшӗ-амӑшӗ те килмест-и?

— Ман хӑраххӑм, вӑл тӑлӑх-турат няк.

х х х

Татьене кӑшт йӑнӑшать. Вӑл каннӑ кунсенче пӗринче Наçтуç патне икӗ аркӑллӑ кӗпе тӑхӑннӑ, чечеклӗ саппун çакнӑ, шурӑ тутӑр çыхнӑ пӗр çамрӑк хӗрарӑм килсе кайнӑччӗ. Ыталансах ларчӗç иккӗшӗ.

— Тӑван мар аннӳ эпӗ сан. Апла пулин те çапман, кӑларса ывӑтман сана, — шав калаçрӗ хӗрарӑм, шывланнӑ куçне пӳрне вӗçӗпе сӑтӑркаласа. — Аçу пурӑннӑ-тӑк, килтен ют-талла ура ярса пусмастӑнах.

— Юрӑхлӑ кил хӗрӗ пулаймарӑм, — каçару ыйтрӗ Наçтуç.

— Араскалӑмӑр çаплалла-тӑр. Турӑ телей салатнӑ чух кирлӗ çӗрте ларма пӗлмерӗмӗр, ахӑртнех. Ӳлӗм утайрӑн-ши-ха?

— Тухтӑрсем шантараççӗ, чупакан пулатӑн, теççӗ.

— Ненай, — пуçне сулкаласа илчӗ хӗрарӑм. — Хулана çул ан тыт, колхозрах ӗçле терӗм те-çке. Итлемерӗн, çак хурлӑха тӳсмӗттӗмӗр.

— Ӗнӳсем йӗркеллех-и? Сӑвӑм мӗнле? — кӑсӑкланансçи турӗ Наçтуç, сӑмаха урӑх еннелле пӑрас шухӑшпа.

— Апачӗ çитлӗклӗ, ӗнисем пӑлан пек, сӗтне çителӗклех антараççӗ.

Амӑшӗ вырӑнӗнче темиçе çул пурӑннӑ çак хӗрарӑма хӑй патне килнӗшӗн Наçтуç савӑнтарасшӑн пулчӗ.

— Лайӑх ӗçленӗшӗн пире, икӗ маляра, преми панӑччӗ. Кӗрсе ил çав укçана, — сӗнчӗ Наçтуç амаçурине.

— Аюк, — килӗшмерӗ лешӗ. — Сывалса тухсан, хӑвна та кирлӗ пулӗ. Ман енчӗк пушансах тӑмасть.

— Общежитире ман койка пушах. Кӗрсе çывӑр.

— Килех çитмелле ман.

Тухса кайрӗ хӗрарӑм.

Наçтуç патне татах тепӗр çын кӗрсе тухнӑ. Вӑл ӗçрен, малярсен бригадирӗ Кузьма Сидорович.

Майӑн пӗрремӗшӗнче пулса иртнӗ пӑтӑрмах пирки йӑлтах каласа пачӗ ӑна маляр хӗр.

— Эх, эсӗ та çав. Халӗ мӗнле ӗнтӗ урасӑр? — шеллерӗ ӑна бригадир.

— Сирӗн шутпа, ман... — лӗпӗр-р йӗрсе ячӗ Наçтуç.

— Çук, çук. Мӗн эсӗ? Пӗртте апла шутламастӑп, — терӗ те Кузьма Сидорович ун аллине тытса ачашларӗ. — Халӗ сан

йышшисем, хĕр чысне упракансем, сахал. Эсĕ маттур, качча аллинче сарăхма килĕшмен хĕр.

Бригадир сумкинчен пакет кăларчĕ. Кучченеç-мĕн — апельсин. Тухса каяс умĕн çапла каласа хăварчĕ:

— Милицие ятарласа кайса калаçатăп-ха. Мĕнле йĕкĕт вăл? Çак ĕçшĕн ăна пуçран шăлмĕç.

## 3

— ...Хăш палатăра выртать-ха вăл? — терĕ милиционер формине тăхăннă çын.

— Наçтуç-и? — халат тӳмисене хыпашлакарĕ Глеб Львович.

— Ахă.

— Саккăрмĕш палатăра.

— Илсе кайăр-ха, тархасшăн, мана ун патне.

— Атьăр.

Тухса утрĕç.

Çак калаçăва кунта, тухтăр пӳлĕмне, урай çума кĕнĕ Илона практикантка йăлтах илтсе юлчĕ. Тĕлĕнчĕ. Ара, тухтăр ним те хирĕçлемерĕ милиционера, кунашкалли йĕрке-йăлана кĕнĕн, лăпкăн кăна йышăнчĕ лешĕ хистенине.

«Ой, мыскара! Кайса курас. Урай çăвасси тарам», — шухăшларĕ практикантка.

Хыпăнса ӳкрĕ Илона. Йĕпетнĕ вырăна йăш-яш типĕткелерĕ шăлса. Вара васкасах витрине йăтса тухрĕ, лапăрчăк шывне тăкрĕ те тасине тултарса илме кран патне пычĕ. Унта хайхи Татьене тăра парать.

— Пăрăн-ха, мана шыв кирлĕ, — айккинелле сирчĕ ăна Илона чавсипе тĕккелесе.

— Ах, чăнкăрăм, — йăл-йăл кулкаласа илчĕ савăннипе Татьене. — Эсĕ техничка ĕçне килĕштерсе пăрахрăн тем? Çитменнине, васкан тата.

— Пит кирлĕ пулĕ мана йĕпе кив-кирĕк йăтса çын хыççăн пылчăк тасатса çӳреме. Эсĕ ăна чунна паран...

— Кашни ĕçĕн хăйĕн кĕвви.

— Эпĕ саккăрмĕш палатăна кĕресшĕн, урай çăвам пек туса, — хыпаланать Илона. — Унта милиционер килчĕ Наçтуçа тытса кайма. Вăл — преступница, ахăр. Хам куçпа курасшăн: ăна утайманскере, пиеленĕ ачана çĕкленĕ пек йăтса кайĕç-ши?

Татьене хăтăрса пăрахрĕ çакскере:

— Тем тесен те ăсран тайăлнă хĕр эсĕ!

Илона тăнласа тăрас пур-и! Алне сулчĕ те йăпăртаттарчĕ шыв тултарнă витре йăтса. Алăк уçма хăлăпне ярса тытрĕ

çeç, ак тамаша: саккăрмĕш палатăра выртакан хĕрарăмсем пурте коридора кĕпĕрленсе тухрĕç. Шалалла талпăнакан студенткăна сарă вăрăм çӳçлĕ инке кăкринчен каялла тĕкрĕ.

— Ăçта сĕкĕнетĕн?

— Урай çума, — хирĕçлерĕ йĕрсе ярасла Илона.

— Юрамасть! Пире те хӳтерсе кăларчĕç. Вăрттăнлăх, ами.

Илона кăмăлĕ шартах хуçăлчĕ. Пĕр чĕнмесĕр коридор тăрăх утса кайрĕ. Ун хыçĕнчен хайхи леш инке костылĕпе такăртаттарса пырать, çиллессĕн ятлаçать:

— Настуç текенскер вăл юхха хĕрача, наркоман.

— Милиционер тытсах кайĕ-ши ĕнтĕ ăна?

— Ха-ха-ха! — ахăлтатрĕ инке. — Милиционерĕ — ун еркĕнĕ. Унсăрăн мĕншĕн иккĕшĕн çеç юлмалла тет? Анашне парса хăварать-тĕр. Çĕрĕпе чăмлĕ, эпир çывăрсан.

— Мĕнле япала вăл анашĕ?

— Темле курăк кипекки. Мĕн мана тĕпчен эсĕ? Чингиз Айтматов çырнă «Плаха» кĕнекене вуламан-и вара эсĕ?

— Çук, вуламан.

— Ай, тепĕр тесен, мĕн ăнлантăр ĕнтĕ техничка! Тăлавар пăраканăн, паллах, ăсĕ хĕсĕк.

— Эпĕ техничка мар! — кӳренчĕ Илона. — Эпĕ — практикантка, тепĕр пилĕк çултан врача тухатăп.

— Ха-ха-ха! Ан култар-ха. Вар хытрĕ сапсим. Ĕмĕтӳ гинĕс пек анлă. Пилĕк çултан асанне пулан!

Илона йĕрсе ячĕ. Çак усал инкене ун витререн кăларнă йĕпе тăлаварпа питĕнчен çатлаттарас килсе кайрĕ.

Хĕр пĕрчи темерĕн çав, кӳренĕвĕ вăраха тăсăлмарĕ. Хурланса та тулхăрса çӳресси чи кирли мар халĕ. Ăна тыткăнлаканни пачах урăххи. Тен, Настуç чăн-чăн парашютистка: сикнĕ чух аманнă? Апла пулсан, ăна хĕрхенмелле. А сарă çӳçлĕ инке ăна хăрăмпа сĕрсе хуратать. Тем тесен те, вăл — пакăç хĕрарăм. Ун йышшисенчен хăтармалла Настуçа.

Пуçа пырса кĕнĕ çĕнĕ шухăш хĕтĕртнипе Илона практикантка, кăштах тăхтасан, таса шыв тултарнă витре йăтса саккăрмĕш палатăна кĕчĕ. Настуç утиялпа витĕннĕскер, выртать кравать çинче. Ун умĕнче, пукан çинче, милиционер ларать.

«...Альберта шыраса тупатпăрах» — Илона хăлхине пырса кĕчĕ милиционер сăмахĕсен пĕр сыпăкĕ. Вара хĕр пĕтĕм тимлĕхне кӳлчĕ, пĕр нимĕн илтмесĕр хăварасшăн мар. Хăй ĕçленçи тăвать-ха, койка тимĕрĕсене нӳрлĕ кив-кирĕкпе шăлкалать. Милиционер тата çапла каларĕ: «Ку ĕçре пуринчен ытла Суссан айăплă мар-ши-ха?»

— Хăвăртрах сываласчĕ. Пĕтĕм ĕмĕтĕм çавă ман, — хурлăхлăн тавăрчĕ ăна хирĕç Настаç.

— Шаңăçна аң çухат, — ура çине тăчĕ милиционер, — хальхи медицина, мĕнле калас та, пĕр уссăрах мар.

Тухса кайрĕ милиционер.

Тăлавар татăкне витрене пăрахрĕ та Илона Настуç умне пырса тăчĕ.

— Леш Альберчĕ сан упăшку-и вăл?

— Мĕн-мĕн? — илтнĕ ыйтăва ăнланмасăр практиканткăна куçĕнчен чăр-р пăхрĕ сусăр выртакан хĕр.

— Парашютпа сиксе урусене хуçнăшăн тиркенĕ-и-мĕн вăл сана?

— Ай-уй, питĕ нумай пĕлесшĕн-çке эсĕ, Илона, çаплаччĕ-и-ха яту?..

— Тем те илтрĕм ĕнтĕ сан пирки, — ниепле те чарăнай-масть Илона сăмах тăкмасăр. — Эсĕ наркоман имĕш. Альберт чăнахах та упăшку пулсан, мĕншĕн тарнă? Енчен те — вăл ют çын тейĕпĕр. Ăçта сан чăн упăшку? Пӳрнӳнте ыл-тăн çĕрĕ...

Тĕпчев çиппи татăлчĕ. Илонан ирĕксĕрех çăварне хупма тиврĕ, ма тесен палатăна сусăр хĕрарăмсем таврăнма ты-тăнчĕç.

4

Татьенепе Илона лапсăркка çăка айĕнчи сак çинче ларас-çĕ. Уçăлма тухнă вĕсем. Палатăсенче чирлисем канаççĕ кăн-тăр апачĕ çинĕ хыççăн.

— Эсĕ мана килĕшетĕн, Татьене аппа, — тет Илона. — Пи-тĕ ĕçчен çын эсĕ. Эпĕ вĕренсе врача тухиччен ĕçлесе пу-рăн кунта. Вара сана ĕçукçи ӳстерсе парăп.

— Асту, мана, хĕтĕхсĕрскере, шăл хушшине хĕстерĕн.

— Йăнăшан.

— Эсĕ вĕренсе тухасси пăхса курăнмасть, — ассăн сывла-са илет Татьене, — эпĕ ун чух кĕркуннехи куян пек шупка-ланăп. Кала, мĕншĕн йăпăлтатан-ха?

— Тавçăруллă çын эсĕ, Татьене. Те калас? Ятламастăн-ши?

— Эпĕ тухтăр мар-иç сана вăрçма.

— Паян иртерех касшăн. Чармăн-и? — нар пек хĕрелчĕ Илона. — Мана пĕр каччă кинона чĕнет. Асту, ку вăрттăн-лăх, никама та шăтса ан пар.

— Юрĕ-çке. Кайсам. Анчах, аннӳ пек пулса, вĕрентем: ан чуптутар.

— Хи-хи-хи! — ихĕлтетрĕ Илона. — Мĕншĕн?

— Хĕр тени пĕр хут çеç чечеке ларать. Путсĕр чунлă кач-чă вăтăрсан хăрса юлăн.

Унччен те пулмарĕ, пульница алкумĕ вĕçне 3-мĕш номерпе чупакан шурă машина килсе чарăнчĕ.

— Такама илсе килчĕç ĕнтĕ, — ахлатрĕ Татьене, хăйĕн алли е ури ыратнăн. — Этем тени нихăçан та сусăрланма чарăнмасть-тĕр.

— Эпĕ самант кайса пĕлĕп, — ура çине сиксе тăчĕ Илона.— Эсĕ, Татьене аппа, лар, лар.

— Ха, ларса юлма шур чул мар пулĕ эпĕ. Сестрасене пулăшма лекет.

Иккĕш те чупрĕç вара. Машшинран пĕр хĕрарăма антарчĕç. Вăл утаймасть иккен. Ăна сĕтелтен вăрăм, кустăрмаллă урапа çине илсе вырттарчĕç.

Урапана Татьене тĕкме тытăнчĕ. Илона та пулăшать.

Пульницан аялти хутĕнче пĕр пысăк пӳлĕм пур. Сусăрланнисене пурне те малтан унта тытса тăраççĕ пĕр кана.

Глеб Львович тухтăр кунта.

— Мĕн пулнă? — ыйтрĕ вăл тин илсе кĕнĕ çынран.

— Ах, ай! -- йынăшрĕ сусăрланнă хĕрарăм. — Машшин çапса ӳкерчĕ. Сылтăм ура хуçăлчĕ, ахăртнех, шутсăр ыратать.

— Тĕрĕслĕпĕр.

Тухтăр тухса кайрĕ. Кунта вара иккĕн тан судри евĕр тĕпчеме тытăнчĕç.

— Мĕн ятлă?

— Христина Акшар.

— Кам пулса ĕçлен?

— Çыравçă эпĕ.

Татах, татах тем те ыйтрĕç: ăçта кайнă, мĕн сăлтавпа урама тухнă...

— Тен, мана малтан пулăшу паччăр мар-и? — сĕнчĕ Христина Акшар. — Сехет ытла иртрĕ-çке, эсир шав пăвăртатăр. Ура, ав, кӳпчет те кӳпчет.

— Анкетăра ыйтусем чикĕсĕр нумай та-ха, айăп пирĕнте мар, — тӳрре тухать сĕтел хушшинче ларакан шурă халат.

Аран хывăнтарчĕç, пульницан çĕтĕк халатне тăхăнтартрĕç амантă хĕрарăма, вара Татьенепе Илона урапапа туртса тухса кайрĕç, рентген кабинетĕнче хăварчĕç ăна. Кунта Христина Акшар урине апла та капла та пăркаларĕç.

— Ӳкерчĕк хатĕр, — пĕлтерчĕ рентгенолог, медсестрана хура пленка тыттарса.

Ĕнтĕ рентген ӳкерчĕкĕ Глеб Львович тухтăр аллинче.

— Христина Акшар, сирĕн сылтăм ура пакăлчăкран хуçăлнă, — терĕ вăл. — Операци тума лекет. Йĕпсем лартмалла.

— Ай-уй, çавнашкалах-и? — хăраса ӳкрĕ çыравçă, халич-

чен тухтăрсен çĕçси вичкĕнлĕхне туйса курманскер. — Операцисĕрех майлаштараймăр-и?

Тухтăр пуçне пăркалать. Операцисĕр утакан пулаймасть иккен, ирĕксĕрех килĕшме тивет.

Укол турĕç. Нумай та вăхăт иртмерĕ, Христина Акшар анкă-минкĕленчĕ. Кунашкал чӳхенчĕк кăмăл хăй миххине нихăçан та нӳчĕркелесе чикменччĕ-ха ăна. Куç уçăлмасть, шăмшак — чӳпĕк.

— Çывăрма чармастпăр, тархасшăн, — тет тухтăр.

Шӳтлет-и ку тухтăр е чăнласах калать-и? Пациентка ăнланмарĕ. Операци сĕтелĕ çинче Христина Акшар ыйха та путмарĕ, ыратнине те туймарĕ. Илтессе йăлтах илтрĕ: шăтăршăтăр шăтăртатрĕ, кăрр-кăрр кăрăлтатрĕ темĕскер. Месерле выртаканскер, пуçа тăратса тухтăрсем мĕн хăтланнине питĕ пăхасшăнччĕ вăл, анчах пуç шăп та шай «пилĕк пăтлă кире пуканĕ», çĕкленме вăй çитмерĕ. Кайран, сурана çыхмалли пӳлĕмре, курчĕ вăл: аманнă ура пакăлчакне çыхнă бинт, юнпа пĕвеннĕскер, хĕп-хĕрлĕ. Çакăнта ĕнтĕ урана çемçе чуста хунă марлĕ çыпăçтарчĕç. Чуста мар — гипс. Часах вăл хытса чулланчĕ. Çийĕнчен бинтпа авăрларĕç.

— Саккăрмĕш палатăна, — хушрĕ тахăшĕ.

Христина Акшаршăн пулсан, пурпĕрех: саккăрмĕш е çиччĕмĕш палатăна...

Каллех Татьенепе Илона туртса кайрĕç вăл выртакан урапана. Алăкран кĕрсен сулахай енчи пĕрремĕш койка çине антарса хăварчĕç.

Çĕрĕпе те çывăраймарĕ Акшар, суранĕ çав тери ыратрĕ. Тул çутипе тин кăтăш пулчĕ. Ыйхăран вара алăка шат! тутарса хупнă сасăпа вăранса кайрĕ. Пĕри урай çăвать-мĕн-ха.

— Ырă кун пултăр, — саламларĕ ăна хайхискер. — Эпĕ санитарка, Татьене тесе чĕнеççĕ мана. Именсе ан тăрăр: ыйтăр, хушăр. Эпир — сирĕн тарçă. Сирĕн ятăр-шывăра пĕлетĕп. Эпĕ сирĕн «Шĕшкĕ чечек çурнă чух» кĕнекĕре вуланă. Питĕ килĕшрĕ. Анчах Анюка, мĕскĕнскере, питĕ хĕрхентĕм.

Христина Акшар ăна тав тума кăна пултарчĕ.

Пĕрремĕш кĕнеке. Кашни çыравçăн пур вăл. Мĕнле туйăмсисĕмпе аллине илсе тытать-ши ăна автор? Христина Акшар ăна хăй çуратнă ача пек йышăнчĕ. Чуптурĕ, кăкăр çумне тытса лăпкарĕ. Чĕре сиксе тухасла тапать, чун савăнать. Кĕнекен çула тухмалла. Эппин, пил ил: «Телей сунатăп! — пăшăлтатрĕ Христина Акшар. — Халăх хушшинче ытларах туссем тупăнччăр! Пурне те юрасшăн тăрăшни кирлех те мар. Унашкал тĕллев лартни — йăнăш».

Кĕнеке тухсан, тус-юлташсем саламларĕç. Паллах, ку çунатлантарать.

 Кĕнекине магазинта сутма тытăнсан, Христина Акшар ăна

икĕ çыхă туянчĕ. Хваттерте чăн-чăн выставка: ăçта май килет, унта кĕнекине тайăнтара-тайăнтара тухрĕ. Хуплашкара чипер пике сăнĕ. Кĕнекен тĕп геройĕ Анюк вăл. Художник ăна ăсласа, сăн-пит парса ӳкернĕ. Килен-каян тишкĕрсе пăхать. «Ах, ăçта лекрĕм эп!» — тет пĕри те тепри. Автор хĕпĕртет ăшă сăмахсем илтсе. Нумай кирлĕ-и çынна савăнтарма.

«Шĕшкĕ чечек çурнă чух» кĕнекене мĕнле туянаççĕ-ши тесе кăсăкланни Христина Акшара кĕнеке магазинне илсе çитерчĕ. Урамрах лавкка йĕркеленĕ-мĕн. Сутăç хăй умĕнчи сĕтелĕ çине тĕрлĕрен кĕнекесем сарса хунă. Çав кĕнекесем хушшинче Христина Акшар кĕнеки те пур. Тăчĕ айккинерех Сăнать. Пĕри те тепри туянать ун кĕнекине. Вĕсем хушшинче ытларах çамрăк хĕрарăмсем. Арçынсенчен чылайăшĕ кĕнекене алла илсе тыткаласа пăхать те каллех хăй вырăннех хурать. Элле вĕсем кĕнекере мĕн çинчен çырнине тытса пăхсах чухлаççĕ-ши?

Акă пĕр пĕчĕк кăна хĕрача пысăккисене тĕккелесе сĕтел умне пырса тăчĕ. Ах, пăрчăкан темерĕн çав. Миçе çултатăр? Тен, вунна çитнĕ. Пуçĕнче хĕрлĕ калпак, çиййĕнче ун куçлă-куçлă пуставран çĕленĕ пальто. Ахăртнех, юмах кирлĕ пулĕ-ха ăна, вичкĕнскере. Чеен пăхкалать, куçĕсем сарса хунă кĕнекесем тăрăх чупаççĕ. Тупрĕ. Чим, ара, хĕрача унăн Акшарăн, кĕнекине алла илчĕ. Ывăçне уçса малалла тăсрĕ. Хут укçа-мĕн ун. Сутăçă ăна илсе ваккине темиçе пус тавăрса пачĕ. Мĕнле тӳсен кĕнеке сутăн илнĕ пĕчĕк хĕрачапа калаçмасăр?

— Эсĕ йăнăшмарăн-и? Мĕншĕн ку кĕнекешĕн укçа тăкакларăн?

Хĕрача чăвашла пĕлмест иккен. Ку Акшара татах тĕлĕнтерчĕ, кăсăклантарчĕ. Малалла вырăсла юмахлама тиврĕ. Пĕчĕк пепкине амăшĕ шăп та шай çак кĕнекене туянса килме хушса янă-мĕн. Сăлтавĕ пур иккен: пĕрле ĕçлекен хĕрарăмсем çак кĕнекене туянса вуласа тухма ĕлкĕрнĕ. Килĕштернĕ. Ахаль каламаççĕ çав çынтан юличчен муртан юл тесе.

— Çак «Шĕшкĕ чечек çурнă чух» кĕнекене туянкалаççĕ-и? Эпĕ çырнă-ха ăна, çавăнпа кăсăкланатăп, — терĕ Христина Акшар, вăтаннипе сасси те тытăнчăклă тухрĕ.

— Лайăх каять. Юлашки кунсенче ăна сутса чылай услам куртăм, — терĕ хайхи сутăçă. — Ĕнер кунта пĕр хĕрарăм питĕ ятлаçса тăчĕ кĕнеке авторне.

— Ай-турах, мĕн килĕшмен-ши?

— Мур пĕлет-и этеме. «Упăшкипе пурăнма пĕлмен!» — тесе шуйăхать. Эпĕ хирĕç çатлаттартăм: «Вăл сан упăшкуна туртса илнĕ-и-мĕн?» — теп. Хĕрарăм татах тем мăркарĕ. Итлеме вăхăт пур-и? Кĕнеке сутмалла-çке ман.

Çак сăмах Христина Акшар кăмăлне пăсрĕ. Лавкка умĕнчен пăрăнчĕ. Ах, чĕре çунать, тĕтĕм тухни çеç курăнмасть. «Мана курайман çынсем те пур-çке, — хурланчĕ Христина. — Никама та усал туманччĕ...» Хурланнипе куççулĕ те тухрĕ. Лăпланас шутпа икĕ таблетка валерианка çăтрĕ. Кĕнекине алла тытрĕ те ларчĕ кресло çине. Хуплашка çине ӳкернĕ Анюк тем каласшăн пек туйăнчĕ.

— Итлетĕп, тусăм, — кăн-н тĕллерĕ Акшар ун куçне. — Ай-уй! Ăнлантăм! Ара, леш хĕрарăм мана мар, сана, Анюк, хĕрхеннипе вăрçнă. Эсĕ çке-ха упăшкупа пурăнма пултарайман.

Ахаль каламан çав ваттисем вăрă-хурахăн пуçĕнчи калпакĕ çунать тесе. Христина Акшар ахăлтатса кулчĕ хăйĕнчен хăй.

Халĕ те-ха, Татьене умĕнче, иртнисем аса килни Акшара тутине йăпăштин сартарса илтерчĕç.

Палатăра никам та çук. Сиплев пӳлĕмсене кайса пĕтнĕ çынсем.

— Наçтуçа ав суранне салтса çыхма ăсатрăмăр, — терĕ Татьене.

— Хăшĕ вăл?

— Сирĕнпе хирĕçле койка çинче выртаканни. Шутсăр телейсĕрскер, икĕ ури те хуçăк. Хăй çап-çамрăк, чипер — чăнчăн çырла. Мĕншĕн сикнĕ-ши, апăрша...

— Сикнĕ? Вăл парашютистка-и-мĕн?.

— Пулĕ, пулĕ, — мăкăртатрĕ Татьене. — Эсир тата урăра мĕнле хуçрăр? Такăнса ӳкрĕр-и? Вată çын ӳпре тĕкнипе те ӳкет теççĕ те-ха. Капла шухăшлани, паллах, йăнăш: ара, эсир у териех карчăкланман.

— Çын айăпне пула нушана кĕрсе ӳкрĕм.

Татьене урай çуса тухса кайрĕ. Наçтуçа урапапа туртса килчĕç.

Тепĕр темиçе кунтан Христина Акшар патне пĕр арçын (ГАИ инспекторĕ пуль-и) пычĕ. Çийĕнче çутă кăвак кĕпе. Хулпуççи урлă шурă халат уртса янă. Вăл пукан çине ларчĕ, аллинче — хутпа кăранташ.

— Аварине мĕнле лекрĕр?

Акшар инкеклĕ куна таврăнчĕ.

...Хальхи вăхăтра Шупашкар урамĕсем урлă каçма хăрушă пулса çитрĕ. Такам та машшинлă, ниме уямасăр чупатаççĕ, кирлĕ çĕрте те чарăнасшăн мар.

Христина Акшар автобус чарăнакан тĕлте тăратчĕ. Çул тепĕр енчи юпа çинче — симĕс çутă. Çул варринчи шурă йĕрсем çывăхне шăкăриех машшинсем пырса чарăнчĕç. Ку ĕнтĕ çурансен çул урлă лăпкăнах каçма юранине пĕлтерет. Христина та утрĕ сынсем хыççăн. Сулахай ура тротуар çине пусма

çĕкленнĕччĕ, сиссе те юлмарĕ хĕрарăм, — сылтăм пĕçĕрен пĕр машшин питĕ вăйлăн килсе çапрĕ. Тăна пырса кĕнĕ чух çул çинче, тротуар çумĕнче, ларатчĕ вăл. Çынсем шуйхашатчĕç. Шофера ятлатчĕç-и, ахăртнех, тем те каласа. Пĕр чиперкке вара водителе хӳтĕлесе автан пек сикетчĕ:

— Вăл айăплă мар! Альберт, ăнлантар çак йĕксĕксене.

— Ха, ӳсĕр шампа! Ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ те шуйăхса тăрать тата. Еркĕн! Пире йĕксĕк теме мĕнле намăс мар сана?!

— Эпĕ арăмĕ! Альберт, кала вĕсене!

— Суссан, кĕрсе лар машшина!

Христина Акшар тек ним те астумасть; ăна пульницана ăсатнă.

— Мĕнле çын вăл мана хăй машшинипе çапса ӳкернĕскер? — ыйтрĕ халĕ кравать çинче выртакан Акшар.

— Альберт Аверкеев-и? — йĕри-тавра чăр-р пăхса илчĕ милиционер. Такамран шикленет-и? — Пуçлăх ывăлĕ вăл. Ниçта та ĕçлемест. Ăна ашшĕ нумаях пулмасть вунçичĕ пин тенкĕлĕх машшин туянса панă. Хăй вунçичĕ пус ĕçлесе илмен. Çӳрет халĕ хĕрсене ярăнтарса.

Сывпуллашрĕ хайхи çын. Ун хыççăнах сарă вăрăм çӳçли тухса кайрĕ. Христина Акшар сисрĕ-ха палатăра çак хĕрарăма килĕштерменнине: ара, вăл пур чух кашниех шыв сыпнăн чĕнмест.

Часах пӳлĕм пушанса юлчĕ. Наçтуç утаймасть, вăл вырăн çинче выртать.

— Эсĕ спортсмен пулас? — тĕмсĕлсе пăхрĕ Христина Акшар ун çине. — Парашютпа ăнăçсăр сикрĕн-и?

— Эпĕ спортсмен мар.

— Акă тата. Мĕншĕн эпĕ çапла шухăшланă сан пирки?

— Эпĕ виççĕмĕш хутран сикнĕ.

— Па-а! Мĕншĕн! Упăшку тискерленчĕ-и?

— Эпĕ хĕр.

— Пӳрнӳнте ылтăн çĕрĕ-çке.

— Тен, çав çĕрĕ айăплă. Анчах, ăнлантăм паян, сирĕнпе иксĕмĕрĕ шатăртатса çунакан вут çине тĕксе яраканĕ — пĕр çын. Лăпкă самантра йăлтах каласа парăп-ха.

Палатăна хĕрарăмсем таврăнчĕç, калаçу татăлчĕ.

## 5

Саккăрмĕш палатăра хĕвĕшӳ. Вăй пухăннă каннипе. Хырăм та тутă явкай апачĕ хыççăн.

Наçтуçпа унăн тусĕсем парка тухма хатĕрленеççĕ. Уçă сывлăш — сим пыл. Уншăн антăхаççĕ пульница çуртĕнче пăчăхнăскерсем. 17

Тĕркĕшнĕ вăхăтра палатăна Илона килсе кĕчĕ. Аллинче ун нӳрĕ пир татăкĕ. Ăна Татьене тумбочка çийĕсене шăлса тухма хушнă.

— Ăçта пуçтарăнтăр капла эсир? — кăсăкланчĕ практикантка.

— Парка уçăлма тухатпăрр, — пĕлтерчĕ Наçтуç. Хăй Илизаров аппарачĕ вырнаçтарнă урисене чечеклĕ-чечеклĕ хутаçа чикесшĕн муталанать.

— Эсĕ утаймастăн-иç, — тет Илона.

— Халех ман пата тăрантас кӳлнĕ сакăлта уралла ут тĕпĕртеттерсе çитет.

Тĕрĕсех, алăк уçăлчĕ те, пĕр хĕрарăм икĕ кускăчлă пĕчĕк ларкăч тĕртсе кĕчĕ, Наçтуç кравачĕ умне çавăрса тăратрĕ.

— Лисук, аллуна ыраттармарăн-и? — пăшăрханчĕ Наçтуç.

— Асăрханулла эп, тата алли вăл, гипсне хăйпăтса илнĕ хыççăн, сурма пăрахрĕ темелле.

— Илона, мĕнле пек тройка? — пуçне сулса илчĕ Наçтуç хăй умĕнчи пĕчĕк урапа еннелле.

— Мĕнле куçса ларăн-ха ун çине?

— Туссем пур чух эпĕ вăйлă.

Наçтуç пулăшасса кĕтмерĕ. Хăех аллисемпе тĕреленсе ларкăч çине куçса вырнаçрĕ. Урисене утиялпа чĕркерĕ.

Раиса Федоровна, халатне улăштарса тăхăннăскер, Наçтуç ларакан урапана хыçалтан тĕксе палатăран тухрĕ. Вĕсем хыççăн ыттисем те Христина Акшара, костыльпе çӳреме вĕренейменскере, сывлăх сунса хăварчĕç.

Саккăрмĕш палатăрисем сусăр хĕрарăмсем икĕ пая уйăрăлчĕç: пĕрисем — палатăрах юлнисем, теприсем — уçăлма кайнисем.

x x x

Палатăра юлнисем хĕрсех сăмаха пуçăнчĕç.

— Христина Акшар, эсĕ коммунистсен партийĕн членĕ-и? Куна вăрăм сарă çӳçлĕ инке ыйтрĕ.

— Çапла, эпĕ коммунист.

— Эпĕ вара иртнĕ çул вĕçĕнче парти билетне секретарь сĕтелĕ çине хурса хăвартăм.

— Ай-уй! — тĕлĕнчĕç хĕрарăмсем.

— Мĕнле сăлтав хĕтĕртрĕ сана ун пек тума? — терĕ Христина Акшар.

— Ă-ăх! Тарăхнипе! Çав кунсенче чунăма тăвăл лăскарĕ, темĕскер ишĕлчĕ, шатăртатсах хуçăлчĕ, — калама тытăнчĕ сарă çӳçли. — Чăрмалакан, сивĕтекен сăлтавсем юр кĕрчĕ пек купаланчĕç. Акă, ман Советсен çуртне кĕме тиврĕ. Çӳретĕп ун-кун пăхкаласа. Пырса тухрăм пĕр пӳлĕм умне. Сăм-

сана тутлă апат шăрши кăтăклать. Столовăй. Мĕн тейĕр? Алăк патĕнче милиционер тăрать. Кĕртмест, мур илесшĕ. Парти организацинче ĕçлекенсем çеç апатланма пултараççĕ-мĕн кунта. Ман кăмăл хуçăлчĕ. Столовăйне, ман пекех, темле пĕр арçын кĕресшĕн пулчĕ, унне те çав милиционер çулне пӳлчĕ. «Эх, санпала, — ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçкаласа илчĕ хайхискер. — Пирĕнтен пухнă партвзнос çак милиционера ĕç укçи тӳлеме те каять-çке...»

Мана тата тепĕр япала чуна ыраттарчĕ. Ман атте вăрçăпа ĕç ветеранĕ. Пенсие тухсан та тата вунă çул ĕçлерĕ заводра. Парти ретĕнче аллă пĕр çул. Чирлерĕ вăл. Сывалма партстационара хурасшăн чупрăмăр. Яхăнне те ямарĕç. Унта иккен партипе Совет органĕсенче ĕçлекен пуçлăхсем кăна тивĕçлĕ сывалма. Анчах, тĕрĕссипе илсен, пачах апла мар. Пуçлăхсен килйышĕсем: хунямăшĕ, хуняшшĕ, пăянамăшĕ, ывăлĕсем, мăнукĕсем — пурте, пурте унта.

— Сана, Христина Акшар, шăпах çавăн йышшин ывăлĕсенчен пĕри машшинпа çапса ӳкернĕ ĕнтĕ, — сăмаха хутшăнчĕ ку таранччен чĕнмесĕр ларнă Натали. Йĕтес шăмми хуçăлнă ун. Нӳхрепе çĕрулми суйлама аннă чух бригадир, тулăксăрскер, тĕксе янă имĕш. Ун вырăнĕ чӳрече çывăхĕнче. — Шухăшлатăп та, çав пуçлăх, тем тесен те, взятка илекенскер, унсăрăн ăçтан тупăн çавăн чухлĕ укçа — вунçичĕ пин!

Ăна никам та хирĕçлемерĕ, çак шухăшпа кашниех килĕшрĕ.

— Пирĕн пӳртре акă мĕнле кинемей пурăнать, — куçĕпе ухтарса илчĕ палатăри хĕрарăмсене сарă çӳç инке. Вăл ыттисем хăйне итлеме хатĕррипе хатĕр маррине пĕлесшĕн пулчĕ пулас. Çавăнпа, ахăртнех, кăшт чарăнса тăчĕ.

— Мĕнле кинемей? — тӳсеймерĕ Натали. Вăл халап тӳнине килĕштерни таçтан паллă.

— Çав кинемей, патне ан пыр, — эх, куштан! Ахаль çынсемпе пуплемест. Унăн партстационарта сывалма правă пур. Упăшки тахçан хаçат редакторĕнче ĕçленĕ тет-и. Хăй вăл патшалăха пĕр пус усă кӳмен. Нихăçан та, ниçта та ĕçлемен, ача-пăча çуратса ӳстермен. Кунне-çĕрне ирттернĕ упăшки çумĕнче кушак ами пек ачашланса та йăпăлтатса. Упăшки вилнĕ. Патшалăх ăна, тăрантаракан çук тесе, пенси парать. Ку çитмест, чĕрне вĕсне шăрпăк кĕрсен те ăна партстационарта йышăнаççĕ. Усраççĕ вара ăна унта уйхи-уйхипе, парти мĕн иккенне ăнланманскере. Вăл тата çавăн йышши ытти ханттарсем заводра е учрежденинче ĕçлекен, калăпăр, тăват-пилĕк ачаллă хĕрарăм-коммунист, партвзнос тӳленине ним вырăнне хумаççĕ. Анчах вĕсене стационарта чи лайăх эмелсем ĕçтерсе, чи тутлă апат-çимĕç кӳптерсе усраççĕ.

— Ма ун пекех «кӳптерессӗ» тесе калан? — терӗ Христина Акшар.

— Партстационар выртакан пӗр ҫыншӑн талӑкра ҫирӗм тенке яхӑн укҫа тӑкаклать. Ку кӳптерни мар-и?

Христина Акшар йӑл кулчӗ.

— У-ух! Пирӗн хуларах ҫӑтмах пур-ҫке, — тӗлӗнчӗ Наталипе юнашар выртакан хӗрарӑм. — Ҫирӗм тенкӗшӗн эпир, строительсем, темиҫе кун, уйрӑмах хӗллехи кунсенче, сивве е ҫил-тӑмана уямасӑр тулта раствор тӑватпӑр, кирпӗч йӑтатпӑр.

— Эпӗ партипе мӗншӗн сывпуллашнине ӑнлантӑр-и? — мухтанчӑклӑн тухрӗ сарӑ ҫӳҫлӗ инке сасси. — Сӗтел-пукан туса кӑларакан фабрикӑра ӗҫлетӗп. Мана лайӑх ӗҫлеме никам та чӑрмантармасть. Эпӗ ӗҫ ударникӗ.

— Парти эсӗ ун ретӗнчен тухнӑшӑн пӗтмест. Вӑл сансӑрах пурӑнать, малалла утать, — Христина Акшарӑн пичӗ туртӑнса илчӗ, куҫӗ хӗсӗнчӗ. Ури, хуҫӑлнӑ тӗлтен, аптри вӗҫӗпе яшлаттарса чикнӗн ыратса кайрӗ. — Парти билечӗпе витӗнсе пурӑнакан йӑх-яхсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларасси коммунист тивӗҫӗ. Тӗрӗслӗхшӗн кӗрешмелле, йӑмӑкӑм.

— Эх, ӑҫтан ҫӗнтерӗп вӗсене...

— Христина Акшар, эсӗ коммунист терӗн-и-ха? — ыйтрӗ тепӗр хут Натали.

— Ахӑ.

— Чирлесен-тусан партстационарта сывалатӑр-и?

— Курмастӑр-и? Эпӗ сирӗнпе, халӑхпа. Партстационар ҫывӑхӗнчен иртсе ҫӳретӗп кӑна. Эпӗ такам мар, мӗн пурӗ те ҫыравҫӑ ҫеҫ.

— Ман сӗнӳ пур, — терӗ стройкӑра ӗҫлекен хӗрарӑм, — акӑ, эсӗ, Христина Акшар, вун-вунпӗр кун выртатӑн кунта, а лешӗ, сана машшинпа ҫапса ӳкерни, пӗрре те килсе курмарӗ. Ӑна ашшӗ хӑтарса хӑварать. Юрӗ тейӗпӗр. Сусӑрланнӑ ҫынсене сыватнӑшӑн кунта, пульницӑра, ӗҫлекен медиксене тата апатлантарнӑшӑн ҫав айӑплисенчен укҫа шыраса илмелли саккун кӑлармалла. Вӑра руль тытакансем аҫа-ҫиҫӗм кӑларса хӑваламӗччӗҫ машшинсене, тимлӗрех пулӗччӗҫ. Ку саккун хулигансене те пырса тивмелле.

Кирлӗ сӗнӳ ку.

х х х

Илона чӳрече умӗнче тӑрать. Вӑл парка тухнӑ йыша сӑнать-мӗн. Наҫтуҫ пӳрничи ылтӑн ҫӗрре хӗвел пайӑрки шыраса тупнӑ та ялтӑртаттарса вылять. Практикантка, тем чухлӗ тӑрӑшсан та, Наҫтуҫ кам иккенне пӗлес йӗр ҫине ӳкеймерӗ-ха.

Такам чĕнчĕ Илонăна. Ирĕксĕрех пăрахса кайма тиврĕ ăна чўрече умĕнчен.

Настуç тăрантасне тĕксе пыракансем вată юманăн мăн тураттисен сулхăнĕнче шăкăл-шакăл юмахласа ерипен утаççĕ. Лисук ятлă çамрăк хĕрарăм ку ушкăнта çĕнни. Иртнĕ эрнере лекнĕ вăл пульницана. Питĕ йĕретчĕ. Сулахай ал тунине бинтпа çыхнă.

— Тўсмелле мар ыратать-и? — ыйтнăччĕ унран саккăрмĕш палатăрисем.

— Хама хам ятлатăп та хурланатăп. Йăлтах çитмен пурнăç айăплă. Тарас упăшкам инвалид, ывăлăм та аркă çинчен анман-ха.

— Каласа пар-ха хăвăн пурнăçу çинчен, — терĕ Настуç, юман тавралла хăйĕн урапине тĕксе пыракан Лисука. — Мăшăру çапса хуçман-и сан аллуна?

— Пурăнасса пĕрле нумаях пурăнмастпăр — виçĕ çула яхăн. Ку тарана çитсе те ун патакне çисе курман. Анчах унăн вичкĕн чĕлхин чăпăркки ман тўсĕм черккине час-часах çĕмĕрлессе çитерет.

x x x

Лисук сывлăхлах мар иккен. Укça-тенкĕ нумай илеймест. Шупашкарти пĕр мастерскойра ĕçлет — арçын брюкисем çĕлет. Упăшкин пенсийĕ — сакăрвун тенкĕ.

Мĕнле чир-ха Лисукăн? Хăшпĕр чух тăнĕ улшăнать. Малтанхи юрату ăнăçсăрлăхĕ пуçне минретсе хăварнă.

Çуллахи каникулсенче Лисук мĕн пĕчĕкренех яла кайнă, кукамăшĕ патĕнче пурăннă. Çапла çулсем пĕрин хыççăн теприн вĕлтлетсе иртрĕç. Ĕнтĕ тăххăрмĕш класс хыçа юлчĕ. Лисук каллех ялта. Кўршĕри пĕрле ўснĕ пĕтĕм яш-кĕрĕм сывăх тус, ялан колхоз хирĕнче ĕçленĕ йыш. Кăçал ушкăнра çĕнĕ çамрăк пур: ютран килнĕ, вăйăç, клубра ĕçлет. Ячĕ ун — Арçук. Айпарăш йĕкĕт: çутă чакăр куç, сарă вăрăм çўç, кĕрнеклĕ пў-си.

Яла килсен, Лисук малтанхи каçах вăййа тухрĕ. Çавăнта курчĕ Арçука, ура тапса купăс калакансkере. Ун умĕнче Лисук та ташларĕ тăпăртатса. Юлашкинчен вăйăç умне тăрса пуç тайрĕ ăна. Аш пиллĕн йăл кулчĕ йĕкĕт. Лисук юратрĕ те пăрахрĕ ăна, пĕрре курсах. Ах, иртинччĕ инкек Лисука сĕртĕнмесĕр. Темĕн çав...

Колхоз пысăк лаптăкра хуратул акнă. Ăна çумкурăкĕнчен тасатма çамрăксем йышăннă. Ир-ирех пухăнчĕ яш-кĕрĕм укăлча патне. Лисук та чупса çитрĕ. Тĕлĕнтермĕш! Вăл Арçука курчĕ. Аллинче ун купăс.

— Пурте килнĕ! Каяр! — кăшкăрчĕ бригадир.

Йыш хапхаран тухрĕ. Арçук купăсне тăсса ячĕ. «Уçланкăри палан» юрă кĕвви янăрать. Çĕнĕ юрă ку. Яла ăна Арçук купăсçă илсе килнĕ.

Тавралăхри илеме, çак кунхи пек, нихăçан та асăрхаманччĕ Лисук. Уй-хир ăста пикисем тĕртнĕ чăн-чăн кавир: симĕссĕн, саррăн, шуррăн йăлкăшать вăл. Çил ачисем хаваслăн выляççĕ уй тăрăх чуччу ярăнса. Вĕсем, ашкăнса, çынсен питкуçне çупăрлаççĕ. Хĕвел хăйĕн шевлине тăкать кăна çĕр çине. Тӳпе, тӳпе мĕн тери илĕртӳллĕ! Кам алли сенкерлĕх кӳнĕ-ши ăна? Аякри вăрман тумне улăштарнă темшĕн. Вăл — кăн-кăвак.

Пуçа çĕклемесĕр ĕçлет Лисук ыттисемпе тан. Хуратул анинче писçен çĕкленнĕ. Мур илесшĕ, йĕппи хурçăран-тăр, ыраттарса алла чикет. Пурпĕрех тăпăлтармалла ăна. Лисук хушăран куçне вăрттăн икĕ хĕр леш енче ĕçлекен Арçук çине ывăтать. Сисмест йĕкĕт. Те юри палăртмасть...

Кунсем иртрĕç. Пĕррехинче вăйăран Арçук ăсатса ячĕ Лисука. Хапха айĕнчи сак çине ларчĕç. Пуплерĕ каччă пачах кирлĕ маррине. «Юрататăп сана» темерĕ, сывпуллашрĕ шанчăк хăвармасăр. Суккăр-шим вăл пачах: ара, асăрхамасть те, курмасть те вăл хăйне савакана. «Мĕншĕн юратмасть вăл мана? — хăйĕнчен хăй ыйтать Лисук. — Эпĕ чипер мар-и?»

Тепри... тепри ăмсанăччĕ ун хурлăхан куçне, пĕрлĕхен питне, çулçă пек çӳхе тутине, Атăл хăви пек пӳ-сине...

Пĕлесчĕ, мĕнле хĕрсене юратаççĕ-ши каччăсем?

Лисук вăййа та, ĕçе те тухма пăрахрĕ. Ăшра юратăвăн шĕл кăварĕ. Чуна çунтарать пĕр шелсĕр. Хаваслăх сӳнчĕ, ыйхă вĕçрĕ. Çĕр каçа та куçа мăч хупаймасть, выртать тĕлĕрсе. Вĕри сывлăшпа тути хăпаланса тухрĕ. Хăй татти-сыпписĕр пăшăлтатать: Арçук ятне асăнать. Каччăпа иккĕшĕ вĕсем ялан улăхра çӳреççĕ пек. Лĕпĕшсем пек, чечекрен чечеке вĕçеççĕ пек. Кăкăр çумĕнче пĕр ытам шурă çеçке — Арçук парни. Ах, хаваслă-çке савнипе юнашар чухне! Савăк кулă шăнкăрав евĕр чăнкăр-чăнкăр чăнкăртатать.

Сисрĕ ватă кукамăшĕ: мăнукне чир хупланă, хăрушă чир... Тухтăрсем Лисука психиатри пульницине вырттарчĕç.

— Тарас вара тиркесе тăмарĕ-и сана качча илме? — кăсăкланчĕ Наçтуç. Хăйĕн куçĕ ыттисем ăнланмалла мар темле çутала-çутала илчĕ.

— Ăçта паллашнă эсĕ пулас упăшкупа?

— Дискотекăра. Хăйĕнпе ташша илсе тухрĕ те тек вĕçертмерĕ.

— Вăл сан пекех çамрăк-и?

— Тарас-и? — Наçтуç мĕншĕн çапла ыйтнине ăнланчĕ Лисук: ара, ун упăшки инвалид-çке-ха. Кăшт куларах хуравла-

рĕ: — Пĕр çул аслă манран. — Лисук ассăн сывласа илчĕ: — Çӳрерĕмĕр, çӳрерĕмĕр... Унтан вăл мана хăйне качча тухма ыйтрĕ. Каларăм эпĕ ăна хам сывах маррине.

...Тарас ĕненмен варлин тӳрĕ сăмахне. Хĕрсем чее, темĕн те пĕр эрешлесе кăтартма пултарĕç. Тен, вăл ăна лайăхрах сăнаса пăхасшăн.

Йĕкĕт шаннă савăнăçлă кун çитессе. Анчах çав кун алăк хăлăпне тытса уçиччен унăн вут-хĕм çине ӳксе ăшаланма, вилĕме куçран пăхма тивет.

Çуллахи тӳлек каç. Хула лăпкă ыйхăра. Çил ачисем кун каçа йывăç çулçисемпе выляса ывăннă ĕнтĕ, çул хĕрринчи тирексем шăп-шăпăрттăн лараççĕ. Таврара — пыл шăрши.

Кинорах тухрĕç Лисукпа Тарас. Утрĕç, утрĕç çуртсем çумĕпе нимле усал-тĕселе кĕтмесĕр. Кулатчĕç-ха кинори геройсен пăтăрмахĕсенчен. Çавтăнса чиперех пыраканскерсем умне таçтан муртан сикрĕ тухрĕ çамрăксен ушкăнĕ. Унччен те пулмасть, пĕри, яштаки кăна пӳлли, Тараса кĕпе çухавинчен ярса тытрĕ. Укçа кăларса пама хистет.

— Çук ман çумра укçа, — тавăрать Тарас.

— Халех тупăнать! — кĕсйисене тавăрттарать ăна хурах.

Тăкăнчĕ вак укçа чăнкăртатса. Нихăшĕ те пуçтармарĕ ăна.

Кăпăр-р хупăрларĕç хурахсем Тараса. Тытăнчĕç хĕнеме.

Лисук кăшкăрать, çынсене пулăшăва чĕнет. Картран тухнă яшсене пĕрне те теприне тытса сиресшĕн тĕрмешет. Ăçтан çĕнтерĕн! Ăна, вăйсăрскерне, кушак çурине тытса ывăтнăн, айккинелле ывтăнтараççĕ кăна.

Пĕр çуртран та çын тухмарĕ ӳсĕр пуçтахсене хӳтерсе яма. Илтмерĕç пулĕ-и? Асту! Хăйсен кантăкĕ умĕнче çынна вĕлереççĕ иккен те... Чӳрече каррисене сирсе вăрттăн пăхса тăчĕç, ахăртнех. Эх, çын тенин çапла пулмалла-и вара?

Йӳçсе хăпарнă чунĕсене кантарчĕç тăрлавсăрскерсем. Юлашкинчен, Тараспа Лисук умне мĕнле килсе тухнă, çавăн пекех пĕр самантра çухалчĕç.

Тарас ура çине тăраймасть, чӳпĕк чăмакки пек выртать.

— Эсĕ вилмен-и?

Чĕнмест. Лисук ун кăкри çине пуçне хурса итлет. Сывласса сывлать, чĕри тапать, анчах тăнне çухатнă.

Лисук аран-аран телефон тупса машшин чĕнет.

— Ненай, пурăнайĕ-и, — иккĕленеççĕ тухтăрсем Тарас пирки. Унне атă кĕлипе тапса пӳрине вырăнтан тапратнă, пĕверне юн хĕвĕнтернĕ, аяк пĕрчине виççĕшне, сылтăм урине чĕркуççинчен çӳлерех хуçнă.

Йĕкĕт пульницара вилес пек йывăр выртнă кунсенче, пĕррехинче, Лисук Тараса ыталаса, йĕре-йĕре, чуптуса ăна качча тухма сăмах парать. Ĕненчĕ Тарас, чĕри лăшах пул- 

чӗ... Пурах ҫав вӗри юратӑвӑн пысӑк тӑтӑрха. Тапаҫланса тухрӗ Тарас тамӑк хуранӗнчен.

Аппӗ-амӑшӗн тулӑх апачӗпе мӑнтӑра тухнӑ, ӗҫ тӗлне пӗлмен услапсем, вӑййӗсене ниҫта хума аптракан алхасуҫӑсем ҫаплах ҫӳреҫҫӗ-ха ҫӗр ҫинче. Вӗсем шӑлӗсене хӑйраса татах ӗмӗтленеҫҫӗ кама та пулин урараи ҫапса ӳкерме, пурлӑ-ҫуклӑ укҫи-тенкине хӑйпӑтма, ҫири тумтире хывса илме. Паллах, ӳкнин тӑма хал ҫитмест, сывлӑх час юсанмасть. Патшалӑхӑн вара тӑкакланма тивет. Пенси, пулӑшу памалла тата ытти те.

Тарас иккӗмӗш группӑри инвалид. Пенси пӗчӗккӗ — сакӑрвунӑ тенкӗ. Ҫемьене тӑрантараймӑн унпа. Мӗнле саплаштармалла? Ирӗксӗрех мӑшӑрсем хушшинче «вулкан» сирпӗнсе тухать. Айӑпӗ йӑлтах ҫитмен пурнӑҫра.

Хальхинче те, ак, ҫав сӑлтавах тӑлларӗ. Лисук пельмен пӗҫерчӗ, паллах, хӗссе-пӗссе. Упӑшки тӑранаймарӗ.

— Ых, серепсӗр этем! — кӑшкӑрчӗ вӑл арӑмне шурӑ куҫӗпе пӑхса. — Апата ытлӑн-ҫитлӗн хатӗрлеме те пӗлместӗн...

— Эпӗ икӗ кастрюль тӑп-тулли пӗҫерӗттӗм, анчах туянса пар ҫителӗклӗ аш-пӑш, — каларӗ Лисук лӑпкӑн, анчах ҫил хумӗ капланса хӑпарса ҫӗкленчӗ. Тепӗр сӑмах ҫеҫ хуштӑр упӑшка, вара чараймӗ, хум ҫырана пырса кӗрслеттерӗ. Ҫаплах пулчӗ те. Упӑшкан тӑранман хырӑмӗ хӗм кӑларакан вичкӗн хӗҫ султарчӗ:

— Ана пыйти, сырӑнтӑн ман таса чуна!

Пӗтрӗ Халӗ ӗнтӗ чӑн-чӑн тӑвӑл ҫӗкленет. Лисукӑн арки ҫинче ачаччӗ. Ӑна хул хушшине тытса хӗстерчӗ те вӑркӑнса пычӗ балкон умне. Ҫат! ҫапрӗ чӳречене сулахай аллипе. Чӑнкӑр-чанкӑр-р! ҫӗмӗрӗлчӗ кантӑк. Ал тунинчен юн тухрӗ пӗрӗхсе.

— Тарас, вилетӗп! — хӑраса ӳкрӗ Лисук сирпӗнекен юна курса.

— Лисук, мӗн турӑн? Эх. Эпӗ те ҫав, лапра ҫӑвар... Каҫар мана, упӑтене, — хыпӑнса ӳкрӗ упӑшка, тӗпӗртетет кӑна: арӑмӗн аллинчен ачине самант илсе диван ҫине лартрӗ, тутӑр тупса Лисукӑн хулне туртса ҫыхрӗ, вара пульницана илсе кайрӗ, ачине те хӑйсенчен хӑвармарӗ.

Кашни кун ҫӳрет халӗ Тарас арӑмӗ патне, вӑл юсанса тухасса тӳсейми кӗтет.

## 6

Наҫтуҫ кравать ҫинче выртать, месерле, тарӑн шухӑша путнӑскер. Сулахай алли кӑкӑрӗ ҫинче. Ятсӑр пӳрнинче венчет ҫӗрри йӑлтӑртатать.

 Илона урай ҫума кӗчӗ. Тӳрех ун куҫне ылтӑн ҫӗрӗ тӑрӑн-

чĕ. Амсанать, чунне пăлхатать. Анланмасть ним те: çĕрĕ, хĕр чысĕ, хуçăк ура...

Пульнипана лекнин сăлтавĕ çак çĕрĕре мар-ши? Каланă пек, çĕрĕ çын мар, анчах, тепĕр чух, чунсăр япаласем этем пурнăçне айĕн-çийĕн çавăраççĕ.

Палатăри ытти хĕрарăмсем те кăсăкланаççĕ Наçтуç пурнăçĕпе. Мĕншĕн? Вăрттăн ихиклетсе кулма-и, чĕлхе вĕçне якатса элек сарма-и е, такăнса ÿксен, çĕнĕрен çĕкленес меслете ăтса юлма-и? Авăртнă тĕшĕрен пучах тума çук. Çапах та кашни çыннăн утса тухнă пурнăç тапхăрĕ теприне шухăшлаттаратех.

Юрĕ. Юмăç ярар мар.

Пĕр Христина Акшар кăна Наçтуçăн калăпăшĕпе ытлах чăмăрланма ĕлкĕреймен кунçулĕн çăмхине кăлт тĕртрĕ. Самант, тытăнчĕ çăмха сÿтĕлме, ялт-ялт сикет иртнĕ кунсен картлашкиçем урлă. Юлчĕç ав пир тăрăхĕ пек тăсăлса вăхăт виçисем: çу, ака, пуш, нарăс. Çăмха тăп чарăнчĕ. Халĕ кăрлач уйăхĕ. Çĕр пичĕ шурă пĕркенчĕкпе витĕннĕ — хĕлле. Лапка-лапка юр çăвать. Наçтуçăн пурнăç çăмхин çиппи тĕвĕллĕ-тĕвĕллĕ. Салтса майлар майĕпен.

...Троллейбус чарăнчĕ. Алăкĕ уçăлнă-уçăлман пĕр-пĕринпе тĕрткелешсе çынсем палкаса тухрĕç. Вĕсем хăраххăн е йышпа утрĕç тĕрлĕ еннелле. Акă çул урлă икĕ хĕр каçрĕ. Пĕвĕпе çÿллĕреххи хăнтăр сухаллă хура кĕрĕк тăхăннă. Пуçĕнче — тилĕ тирĕнчен çĕленĕ çĕлĕк. Унпа юнашар пыраканни çийĕнче пилĕклĕ симĕс пустав пальто. Кĕскескер вăл. Арки сарлака-сарлака. Ура хырăмĕсем янках курăнаççĕ, пушмак кунчи вара ура пакăлчакĕ таран çеç. Наçтуç ку. Кĕрĕкли ун училищере пĕрле вĕреннĕ тантăшĕ. Хула хĕрĕ вăл. Малярта ĕçлемест. Ăна ашшĕ çăмăл ĕç тупса панă: темле министрăн секретарĕ.

Хĕрупраççем инçех те каяймарĕç, вĕсене шинеллĕ каччă хуса çитрĕ. Хулпуççинчи пакунĕ çинчи паллăсем ку йĕкĕт çар училищинче вĕреннине кăтартаççĕ.

— Чиперуксем, — чĕнчĕ вăл куçне çиçтерсе, — калăр-ха, ăçтарах-ши «Çеçпĕл» кинотеатр?

— Урам вĕçĕнче, веç ав! Эпир те унта каятпăр, — пĕлтерчĕç хĕрсем.

— И-и , телей! Мана, тархасшăн, хăвăртан ан хăварсамăр.

Хĕрсем ихĕлтеткелерĕç.

— Паллашар, — сылтăм аллине тăсрĕ çар каччи, — ятăм шывăм — Питахир. Ан ятласамăр. Атте чăваш ман. Хăй çар офицерĕ, апла пулин те тăван чĕлхепе литературăна пите юратать. Пирĕн Ашмарин словарĕ те пур — вунçичĕ

том. Çав словарьте тупнă пулас ман валли авалхи чăваш ятне.

— Суссан, — пĕлтерчĕ Наçтуçăн юлташĕ хăйĕн ятне, аллине Питахирĕн уçă ывăç тупанĕ çине хурса. Лешĕ ун аллине шатăр-р чăмăртарĕ. Хĕр çари-и! çухăрса ячĕ те пӳрнисене лĕнчĕр усрĕ, урипе тăпăртатрĕ.

— Мĕн пулчĕ? — куçне чарса пăрахрĕ шинеллĕ каччă. Наçтуç курса юлчĕ: тĕсĕ ку куçăн пĕлĕтсем хушшинчен курăнакан тӳпе кĕтесĕ — сеп-сенкер. Туйрĕ пике çакна та: çак куçран сирпĕннĕ хĕлхем чунри чечек-çеçке çине пĕрхĕнчĕ. Юрату тенийĕ мар-ши?

— Ах, лӳппер-çке эсĕ! Тукмака хĕстеретĕп терĕн-им? — ятланçи тăвать Суссан. Кунашкал ыратнине татах та тӳсме хатĕр хăй, анчах çак умри каччă, пĕрре пăхсах килĕшнĕскер, пăрахса ан кайтăрччĕ çеç.

— Каçарăр, Суссан. Питĕ ыраттартăм-и? Кӳр, ксам пипине, — Питахир хĕр аллине тытрĕ те пӳрнисене ӳф! ӳф! теkелесе вĕрме тытăнчĕ.

Наçтуç, йĕтĕр çăтнăн, ним чĕнмесĕр пăхса тăчĕ Суссанпа Питахир айкашнине. Савăнчĕ те вăл, кӳренчĕ те хĕрпе каччă хаваслăн вылянăшăн. «Иккĕшĕ те чипер: пĕрне хурласа, теприне ырлама кирлĕ мар. Телейлĕскерсем. Ман ятпа пачах кăсăкланмарĕ...» Çапла шухăшларĕ те малалла утрĕ Наçтуç. Ытахальтен тенĕн, кинотеатрăн алкум вĕçĕнче чарăнса тăчĕ. Каялла çаврăнса пăхмасăр ăçтан тӳсейĕн? Курчĕ вăл: лешсем çавтăннă та — эх! тĕрлеттерсе килеççĕ. Çитрĕç. Хытă чупнипе иккĕшĕ те хашкаççĕ. Каччă Суссана Наçтуç çумне пырса тăратрĕ.

— Эсир мана çакăнта кĕтĕр, — хушрĕ хайхискер. — Эпĕ халех билетсем туянса таврăнатăп.

Вăл кассăсен пӳлĕмнелле вĕçтерчĕ.

— Мĕнле чипер каччă! — куçне вылятса илчĕ Суссан. — Наçтуç, ман шутпа, вăл сана юратса пăрахрĕ.

— Кирлĕ мара ан юптар. Качака купăста юратать, каччă сар хĕре юрататъ, теççĕ. Эсĕ, ав, хăяр чечекĕ евĕр сап-сарă, — çапла пулчĕ Наçтуçăн халапĕ.

Суссана тантăшĕн сăмахĕсем питĕ килĕшрĕç. Савăнăçне пытараймарĕ, чунтан ихĕлтетрĕ.

Шăнкăрав кинокуравçăсене зала йыхăрать. Кĕрсе вырнаçрĕç хайхискерсем. Питахир икĕ хĕр хушшине ларчĕ.

Пуçланчĕ кино, Францире кăларнăскер. Ячĕ ун — «Скупой». Ăна Жан-Батист Мольер комедийĕ тăрăх ӳкернĕ.

Каччă юнашар ларакан хĕрсене часах манчĕ тейĕн. Вăл— фильм тыткăнĕнче. Путишле урçа старик хăтланăвĕсем тӳсмелле мар култараççĕ ăна. Ахăлтатать Питахир каçса кайсах. Наçтуçăн та тути хупăнмасть. Суссан вара хавассăр.

Вăл çав тери кĕтрĕ хăйĕн аллине каччă чăмăртасса. Çук, ун пекки пулмарĕ. Тавçăраймасть-ши? «Ых, çăм сакки!» — ятлаçать вăл йĕкĕте хăй ăшĕнче. «Тен, тепĕр енчине ачашлать?» Куçне, экранран пăрса, Наçтуç еннелле ывăтрĕ. Сисĕнмест апли-капли. Лăпланчĕ пек кĕвĕç чун, анчах çинеçинех ассăн сывласа илет. Пуçра тытăнчĕ тем те пĕр пăтранма. Шухăш кӳллин тĕпĕ тарăн, теççĕ. Çиеле тухма кам пусма лартса парĕ?

Кино курса тухсан та кĕске вăхăтра виçĕ çынтан чăмăртаннă эртеле ваштах салатмарĕ Питахир. Хĕрсене Атăл хĕррине илсе тухрĕ те, карлăк çумĕпе утса кайрĕç ак. Сукмакĕ такăр кунта. Çăван юрне таптасах тăраççĕ ĕнтĕ савнисем.

Питахир фильм картинчен тухайман-ха.

— Çав старик рольне вылякан питĕ паллă артист-ха вăл. Ятне мантăм, — аса иленçи туса çамки тирне пĕркелерĕ. Суять. Артист ятне лайăх астăвать, хĕрсен пĕлĕвне тĕрĕслесшĕн. — Суссан, эсĕ астăватăн-и?

— Пит кирлĕ пулĕ такам мур артисчĕпе пуç мимине типĕтме.

— Луи де Фюнес, — терĕ Наçтуç. — Тĕнчипе паллă артист вăл. Шел, нумаях пулмасть çĕре кĕчĕ.

— Ай-уй, эпĕ илтмесĕр юлнă ку хурлăхлă хыпара, — кулянанçи тăвать Питахир. Вара вăл çак артист мĕнле-мĕнле киносенче вылянине аса илсе каласа пама тытăнчĕ, култарать. Анчах хăш пике енне кăмăлĕ ытларах туртăннине нимпе те палăртмасть хăй.

Суссан вĕчĕрхенме тытăнчĕ. «Юратăвăн пурçăн укине майланă чух виççĕмĕш çын ытлашши, — ăшăнче юнарĕ вăл Наçтуçа. — Сисмест-ши вара çавна? Эх, тăм камит. Паçăр Питахир кам енне сулăннине питĕ лайăх кăтартрĕ-çке. Ху чухлаймастăн пулсан, халех сана çухатма тивет». Мĕн тумалли ун пуçĕнче самант тĕвĕленчĕ. Юнашар пыракансене аслă урама илсе тухрĕ те уттарчĕ тăвалла. Халĕ ĕнтĕ хăй никама та çăвар уçма памасть, шĕшкĕ тăвăл туланипе мăйăрне тăкнăнах тăкать сăмахне. Такăлтатнă май ихĕлтете-ихĕлтете илет. Уншăн пас тытнă йывăçсен тураттисенчен юр лăстăртатса ӳкни те нимĕн те мар.

— Итлĕр-ха, итлĕр! — чарать вăл хăй çумĕнче пыракансене. — Сире пĕр мыскара каласа парам.

— Мыскарасем итлеме килĕштеретĕп, — тет Питахир.

— Итлĕр, эппин. Çулла Атăл хĕрринче тĕлĕнтермĕш куртăм. Икĕ арçын туран юхса анакан пĕренене пакурпа çаклатса çыран хĕррине илсе тухрĕç. Пĕренен алă чăмăрĕ кĕмелĕх çаврака хăвăл пур. Тахши асăрхарĕ: унта тем çатăлтатать! Курах кайрăмăр: пулă хӳри! Тыткăнтан хăтарса Атăла ярасшăнччĕ. Анчах хăвăлтан пуçĕ тухмасть. Вăт амак! Шă-

тăк анине аслăлатма тиврĕ. Кăларчĕç. Çуйăн кĕрсе вырнаçнă-мĕн. Тупсăмĕ мĕнле? Пулă хăвăлта ӳснĕ-и? Апла теес, мĕн çинĕ вăл унта?

— Шухăшламалăх пур, — пуçне сулса илчĕ çар каччи.

— И-и-их, Наçтуç, çитрĕнте-çке. Мĕнле телейлĕ эсĕ, — тантăшĕ малалла та хăйсемпе утасран шикленсе васкасах сăмах вĕçертрĕ Суссан. — Уру вĕçĕнчех сан общежити.

— Сывă пулăр! — Наçтуç кĕлентĕрленĕ аллине вăшт вĕçертрĕ те тĕк пек вĕçтерчĕ пусма картлашкисем тăрăх çӳлелле.

— Пастай! Ма капла сасартăк? Тăхта-ха! — кăшкăрса юлчĕ Питахир.

Наçтуç ĕнтĕ алăкран кĕрсе курăнми те пулчĕ.

7

— Çапла мăнаçлă эпир, Шупашкар хĕрĕсем. Каччăсене шуç чуман çине лартса хăваратпăр. Тьхик! — кулчĕ Суссан йĕкĕте хулĕнчен ярса тытса.

— Чим-ха, — терĕ Питахир.

— Тен, сан ун хыççăн общежитие кĕрес килет? Ан та тăрăш, кĕртмеççĕ унта.

— Кирлĕ мара ан тӳ-ха.

— Эппин, мĕн-ма юпа пек хытса тăран? — ирĕксĕрлесе малалла тĕкрĕ Суссан качча.

Утрĕç пĕр хушă ним чĕнмесĕр. Ура айĕнче кăна юр чăкăрчăкăр чакăртатать.

— Чăн тăмсай эпĕ, — ассăн сывласа илчĕ Питахир. — Ятне те ыйтса пĕлеймерĕм. — Ăçта ĕçлет сан юлташу?

— Кам, Наçтуç-и? — йĕрĕннĕн тухрĕ Суссанăн сасси. — Маляр çеç вăл. Сана меле килмелли хĕр мар.

— Ăнланмарăм.

— Каччăсем, уйрăмах, çар çыннисем, сăрăсемпе вараланнă хĕрсене юратмаççĕ, сире ятарласа писев сĕрнисем килĕшеççĕ, — пуплеме тытăнчĕ Суссан. — Эпĕ акă министр секретарĕ. Ман çире яланах яка тум, алăсем те таса ман. Пурпĕрех хам ĕçе тиркетĕп. Пирĕн çывăхри парикмахерскинче мастерта летчик арăмĕ ĕçлет. Упăшки питĕ юратать имĕш ăна. Хам та парикмахера тухасшăн-ха.

— Юратсан, ăçта ĕçленине пăхмаççĕ-тĕр, — терĕ Питахир.

— Эсĕ ху мĕнле хĕре тиркетĕн? Паллах, чипер маррине, чикан пек хурине. Çапла-и?

— Йĕкĕтсен аллинче сарăхнă хĕре тиркетĕп.

Суссан, каччăран илтнĕ ку сăмахсене питĕ лайăх ăнланчĕ пулин те, илтмĕше хыврĕ, хăй юрринех тăсрĕ:

— Акă, эсĕ пулас летчик.

— Çук, вĕçевçе вĕренместĕп, — ĕнентерме пăхрĕ Питахир.
— Эпĕ...

— Эсĕ летчик тумĕпе. Тап-таса. Стройкăра ĕçлекен арăму çийĕнче — фуфайка, йăлтах пурă шывĕпе вараланнăскер. Мĕнле пек? Çавнашкал хĕрарăмпа, ненай, çавтăнса иртĕн-и юлташусем умĕпе.

Каччă чĕнмерĕ.

— Ха-ха-ха! — кулса ячĕ Суссан. — Тĕл лектертĕм-и? Тотă.

Вулаканăм, çакă хĕрпе каччă мĕн сӳпĕлтетнине мĕн тума итлес-ха? Пире кирлĕ мар ку. Чимĕр-ха, асăрхарăр-и, пурнăç çăмхи кăлтăртатса сӳтĕлнĕ май, кăрлач уйăхĕн варринче, Наçтуç шинеллĕ çамрăк çынпа (вăл никам та мар — Питахир) утни ӳкерĕнсе юлчĕ. Апла пулсан, вĕсем тĕл пулаççех. Эппин, юлар мар Питахиртан. Çитер хăваласа.

— Итле-ха, эсĕ хусах-и? Тен, эпĕ урçапа утатăп, тен, эсĕ майраллă? — харсăрланать Суссан. — Пуçăм тӳпине юман йĕкелĕсем патлатмĕç-и?

— Авланасси автан тукмакки çиесси мар, тенĕ, — таварчĕ Питахир. — Пике тени нумай: мăшăрланас шухăш тытсан, пĕри те тупăнмасть.

— Çав тери тиркетĕн-и? Ваттисен сăмахне ан ман: «Лайăх хĕр шыракан — инке арăмсăр юлакан».

— Ан хăрат-ха. Юратнă хĕр тупас шанчăка çухатман эпĕ.

Суссан ун хулĕ çине пуçне хучĕ, ачашланать мар-и. Театра çӳреме юратни çинчен халаплама тытăнчĕ. Вăл иккен курмасăр пĕр кино, пĕр спектакль хăвармасть.

— «Нарспи» курма тахçантанпах ĕмĕтленетĕп, — пĕлтерчĕ Питахир хăйĕн кăмăлне.

— Эпĕ чăваш театрне хисеплеместĕп. Çапах та ан кулян, пырăп санпа.

Вĕсем пилĕк хутлă çуртăн виççĕмĕш алкум вĕçне çитсе чарăнчĕç. Суссан хăйне ăсатакан йĕкĕте килне илсе кĕрессшĕн, ах туртать шинель аркинчен. Лешĕ килĕшмест, кутăн чакать.

— Мана çутă тĕнче парнелекенсемпе паллашмаллах-çке сан, — тилмĕрет хĕр. — Ырă кăмăлласкерсем, уйрăмах анне — чăн-чăн пирĕшти. Эпĕ аннене хывнă...

— Тавтапуç! Тепĕр чух кĕретĕпех, — тет йĕкĕт. — Халĕваскатăп. Кая юлса çитсен, асанне ятлĕ ыйхине сирнĕшĕн. Сывă пул, Суссан!

— Çапла çеç-и? — ихĕлтетрĕ хĕр. Вăл каччă тутин шерпетне тутанса пăхасшăнччĕ. Пуçне ырă шухăш пырса кĕчĕ: ку е пиçмен пашалу, е халиччен хĕрупраçпа çӳресе курманскер. Эппин, алла çавăрса илмелле чăннипех. Вара

ачашшăн вулашрĕ: — Эх, эсĕ те çав, пахчана иленмен шăпчăк.

Уйрăлчĕç. Питахир, такам хăваланăн, ури шунине уямасăр чупрĕ пăрлаклă çулпа.

x x x

Алăк уçса кĕртнĕ амăшне мăйĕнчен уртăнчĕ Суссан, вара, чăп-чăп чуптунă май, çепĕççĕн пыл юхтарма тытăнчĕ.

— Эй, çуратнисем, хĕрĕр туйне кĕрлеттерме хатĕрленĕр.

— Альберт тинех килĕшрĕ-и авланма? — йăпăштин кулчĕ амăшĕ.

— Çу-у-ук! Унран чун сивĕнчĕ. Вăл айван этем. Эрех кӳпет те хĕрсен чысне пылчăклă аттипе таптать.

— Ăçта-ха вăл халĕ?

— Альберт-и? Пĕр-пĕр инке арăм патĕнче шапа урине таканласа çĕр каçать-тĕр. Май çук вĕçкĕнленет: вăрман институтне заочнă та пулин вĕренме кĕрсен, ăна пуçлăхра ларакан ашшĕ машшин туянса парать.

— Вăрман улпутне тухать. Чуну кĕвĕçмĕ-и?

— Вăл вĕренме пултарнине ĕненместĕп. Пуçĕнче хывăх çеç. Сăнĕ пур ĕнтĕ. Куçне алхасуллă хĕсме ăста.

— Кама качча тухан? — кăсăкланать амăшĕ.

— Летчика, — Суссанăн сасси мухтанчăклăрах тухрĕ.

— Айтурах! Тĕрĕс. Эсĕ начар хĕр мар. Ахаль каламаççĕ тӳшекне кура уруна тăс тесе, — савăннипе тӳсейместь куçне йăлтăртаттармасăр амăшĕ. — Пӳрни килчĕ, эппин, пусма вĕçне.

— Эх, çуратни, халĕ ĕлĕкхи мар: пӳрни те çук, пусма вĕçне те никам та килсе тăмасть, — ассăн сывласа илчĕ Суссан. — Йĕкĕтсем хушшинче пирĕн тимĕр тылăпа шартлаттарса çӳремелле. Мăйлăраххине хăй сисиччен самант хамăр çумма чĕнрен явнă вĕренпе çыхмалла.

— Пĕркун, эсĕ Альберта качча кайма пикеннĕ чух, эрех çирĕм бутылка туяннăччĕ. Татах черете çӳреме тивет, эппин.

— Туя эрехсĕр ирттерсе яраймăн. Йăли-йĕрки çапла хушать.

— Çиетне?

— Паллах. Каçхи апат ирхи вăй, тесе ху кашнинчех нăйлан-çке.

Хĕр, йывăр ĕçпе ывăнса таврăннăн, пукан çине лап ларчĕ. Умĕнчи сĕтел кĕтессине, юмахри пек, туххăм пĕр татăк шăрттан хунă, хуратул пăтти тӳпеленĕ турилкке шуса çитрĕ.

— Тутишĕн чей çине лимон яма ан ман, — асăрхаттарчĕ Суссан плита умĕнче тăрмашакан амăшне.

— Сахӑрне миҫе катӑк чӑмтарас?
— Тӑваттӑ.

8

Умлӑ-хыҫлӑ темиҫе кун иртрӗ.

Наҫтуҫӑн пурнӑҫ ҫӑмхи шав пӗр тӗлте тӑрать. Сӳтӗлме чаракан нимӗнле хӳме те ҫук. Вӑл тунката ҫумне те пырса тӑрӑнман. Ҫаплах кӑрлач уйӑхӗ. Эппин, ку тӑрӑхра пӗлмелли татах пур. Тӗрӗс, тӗрӗс! Ав, Наҫтуҫ урампа пырать. Ӗҫрен тухнӑ вӑл. Ах, ҫав Суссана, мӗншӗн хурларӗ малярсене Питахир умӗнче? Ун ҫийӗнче пӗртте вараланчӑк фуфайка мар, шурӑ кӗрӗк, пуҫӗнче те шурӑ ҫӑм ҫиппинчен ҫыхнӑ калпак. Уринче атӑ. Хулпуҫҫи урлӑ пӗчӗк ҫеҫ тӑпӑл-тӑпӑл сумка ҫакнӑ. Хыпаланни таҫтан паллӑ. Тен, каччӑ кӗтет ӑна пӗр-пӗр кӗтесре. Ма тӗлӗнес? Пиҫнӗ ҫырла-ҫке вӑл.

Хӗвел куҫне хӗсе-хӗсе, йӑлтӑр-йӑлтӑр кулкаласа алӑ сулчӗ те ҫӗр чӑмӑрӗн тепӗр енче пурӑнакан ҫынсене савӑнтарма ӑсанчӗ. Хурала ҫаврака уйӑх хӑпарчӗ. Кӗвентеллӗ хӗр чӑваш ялӗсем ҫине салхуллӑн пӑхать, ҫаплах шырать-тӗр хӑйӗн савнине. Телейлӗ пикепе йӗкӗте курсан, пӗр савӑнать, тепӗр ӑмсанса хурланать-тӗр.

Васкать Наҫтуҫ. Магазин умӗнчен те вӑштах иртсе кайрӗ. Ҫимӗҫӗ пур-тӑр сӗтел сунтӑхӗнче. Выҫӑпа тӑн панине ӑса хывайман: ара, ун вӗренме каймалла-ҫке каҫхи художество училищине.

Общежити тӗлӗнчи ҫӳллӗ юпа тӑррине хӗвел хӑйӗн ылтӑн пайӑркине ҫакса хӑварнӑ. Кӑнтӑрлахи пекех ҫутӑ кунта.

Крыльцан ҫӳлти картлашки ҫинче, хӳтлӗхре, темиҫе ҫын. Вӗсем хушшинче Суссан та пур. Вӑл Наҫтуҫа курчӗ те ӑна хирӗҫ пусма тӑрӑх качака путекки пек тринк-тринк сиккелесе анчӗ, ҫинҫе сассипе кӑшкӑрчӗ:

— Наҫтуҫ! Ох-и, пӑрӑҫ хутаҫҫи эсӗ! Кӗттерсе чуна кӑларattӑн!

— Ай-уй, сана кӑчӑк туртман пек астӑватӑп-ҫке. Мӗн амакӗ ҫавӑтса килчӗ?

— Амакӗ, амкӗ, — виртлесе илчӗ Суссан. — Атя-ха хӑвӑртрах пӳлӗмна, каламалли хыпарсем мӑй таран.

— Эй, ҫырлах. Тем хӑрататӑн.

— Ан шиклен. Хыпарӗсем — караслӑ пыл. Тата вар-хырӑм хытиччен ахӑлтатӑн, ха-ха-ха! — пӗчӗк чансен сасси пек чӑнкӑлтаттарчӗ куллине Суссан.

Хӗрсем пусма тӑрӑх хӑпарнӑ чух вӗсен ҫулне пӗр хӗрарӑм пӳлчӗ. Ни ватӑ, ни ҫамрӑк теме ҫук ӑна. Кӗл тӗслӗ кӑпӑшка ҫухаллӑ хура пальто ун ҫийӗнче. Пуҫӗнче ҫӑм тутӑр.

— Kaçар та-ха, эсĕ-и вăл маляр-отделочник? — Наçтуç ку-çĕнчен шăтарасла пăхрĕ хĕрарăм.

— Эпĕ. Мĕн тесшĕнччĕ?

— Кăшт тытăнса тăрăр-ха, тархасшăн. Паллашар-ха. Мана Анна Трофимовна тесе чĕнеççĕ.

Суссан тулхăрма тытăнчĕ. Тутине пăркаласа, йĕрĕннĕн куçне çиçтерсе пăхрĕ хĕрарăм çине. Çитменнине, тата ăнланмалла мар тем мăкăртатрĕ. Наçтуç вăтанчĕ юлташĕ ют çын умĕнче çапла курнăçланнăшăн. Ăна пысăк алăка уçса шала кĕме хушрĕ. Юрать-ха шăртланмарĕ лешĕ.

Ĕнтĕ тинех пуплеме май килчĕ хăйне кĕтекенпе.

Нумаях та пулмасть Наçтуç ĕçлекен строительсен бригади тăхăр хутлă чул çурт туса пĕтерчĕ. Лайăх хак парса йышăнчĕç ăна. Ку хĕрарăм çемйине шăп та шай çав çуртра хваттер панă-мĕн тăвата пӳлĕмлине.

Анна Трофимовнăн упăшки — капитан, Атăл тăрăх ишет иккен. Хăй вăл — медсестра.

— Тав тума тата çĕнĕ çурт ĕçкине чĕнме килтĕм ятарласа, — терĕ хĕрарăм. — Ан тĕлĕнĕр: илемне эсĕ парнеленĕ, терĕç. Уйрăмах ачасем хăйсен пӳлĕмне пăхса ытараймаççĕ. Эсĕ маляр çеç мар, чăн-чăн художник та-мĕн.

Тĕрĕсех калать хĕрарăм. Çав ырă сĕнкер Наçтуçра амăшĕн варĕнчех тĕвĕленнĕ пулас. Унсăрăн тĕнче илемне асăрхамĕччĕ мĕн пĕчĕкренех. Курнине, кăмăлĕ хушнипе, ӳкерме чун хистет ăна вĕçĕмсĕр. Анчах пултарулăха ăсталăх кирлĕ. Çавна ăнланни ĕнтĕ ăна каçсерен художество училищине вĕренме çӳреттерет.

Тăхăр хутлă çуртри икçĕр хĕрĕх иккĕмĕш хваттере сăрласа сăн кĕртнĕ чух Наçтуçăн сасартăк ăшри художникĕ вăй выляма тытăнчĕ, уйрăмах ачасен пӳлĕмне кĕрсен. Вылять пулсан, тыткăнлать вара. Укçине те хĕрхентермест: туянмалла-çке-ха тĕрлĕ тĕслĕ сăрăсем.

Рабочисен ĕç вĕçленет, Наçтуçăн çĕнĕрен пуçланать — чуна килентерекенни. Никам та чăрмантармасть. Хĕр юрă шăрантарать. Çепĕç çемĕпе стенасем чечек çураççĕ. Куçĕсене уçнăскерсем, чĕлтĕртетеççĕ вĕсем чĕп-чĕррĕн. Урам енчи чӳречен икĕ айккинчи стенасенче чакăр тутăрлă утмăлтуратсем, алăкран кĕрсен сулахайри стенара — упасаррисем, вĕсем айĕнче — хĕп-хĕрлĕ хурăн çырлисем, сылтăмри стенана лилипе сив курăкĕсем илĕртӳлĕх кӳреççĕ. Кăчăк туртса, ăшпиллĕн ырă суннине те илтетĕн: «...Телей сунатпăр. Кунçулăр вăрăм пултăр!»

Асăннă çуртри кашни хваттер хăйĕн хуçине йышăнчĕ. Алăкĕсем пĕр вĕçĕм уçăлса хупăнаççĕ. Хĕвĕшет халăх. Тем те туянать çын тени пурăнмалли килне хăт кӳме. Сĕтел-пукан хăй вырăнĕнче ĕнтĕ. Çутă чӳречесем эрешлĕ чĕнтĕрсем-

пе карăнчĕç. Кăмăл тулнă, Эппин, çĕнĕ çурт уявне килччер ырă сунăмпа тăван-тĕрĕш, тус-тантăш. Унсăр çемьене телей иленмĕ. Кил хуçисен парăмра юлма юрамĕ: хăйсене ырлăх кӳнисене тав тумаллах, йĕрки çапла хушать. Ахальтен мар ĕнтĕ Анна Трофимовна маляр-художник хĕре çĕнĕ çурт сăйне чĕнме килнĕ. Наçтуç питĕ савăнчĕ: ара, ăна халиччен нихăçан та, никам та çакнашкал уява чĕнмен. Курнăçланмарĕ вăл, пыма пулчĕ хăнана. Иккĕшĕ те кăмăллăн алă тытса уйрăлчĕç.

Суссан вара урчĕ. Мĕнле хăять «Наçтуç у териех кĕттерме!» Крыльцана çуйхашса тухрĕ вăл.

— Хаспати! Шухăшламанччĕ эсĕ мана çакнашкал мăшкăл кăтартасса! Çав ăçтиçук камит манран хаклăрах иккен!

— Кам пирки эсĕ? — чухламăша хыврĕ ун сăмахне Наçтуç.

— Сана кам тытса чарчĕ? Ы-ых, тĕклĕ кăпшанкă!

— Э-э, йăнăшан! Унашкал ăшпиллĕ хĕрарăмсем сахалтарах халĕ пурнăçра. Атя, кĕрер, — чĕнчĕ ăна Наçтаç.

Суссан кирлĕ-кирлĕ маршăн чунне вăрахчен ыраттармасть. Ав, манчĕ те вăл хăй тарăхнине. Тантăшне хулĕнчен ярса тытрĕ те, çӳлти хута чупсах хăпарчĕç пулин те, чарăнмасăр пакăлтатрĕ, ихĕрчĕ, юрларĕ:

Хура вăрман çинче кăвак тĕтре,
Мĕн кун сирĕлессине пĕлмерĕм;
Мĕн кун сирĕлессине пĕлнĕ пулсан,
Пăхса юлнă пулăттăм алă витĕр.

— Мĕнле юрă пулчĕ ку сан? — терĕ Наçтуç. — Хаваслă туйăма йывăр чулпа хупласшăн. Хурлантаракан сăлтав минтевлет-и?

— Куна эпĕ мар, чунăма шала пытанни, такам, палламанни, ĕнрешет. Пĕрмаях ахăлтатни те мăй таран тăрантарать.

— Кам кăтăклать вара сана? — сăмах вĕçертрĕ Наçтуç ытахальтен.

— Кам пултăр! Питахир. Пĕлетĕн-и, Питахир çав тери путишле этем. Шӳтлет,. вар хытиччен култарать.

— Ырламалла ăна уншăн, — мухтарĕ Наçтуç. — Шӳт туни çур кашăк çăва тăрать, теççĕ.

— Çур кашăк? Ха-ха-ха! — çĕнĕрен кăлтăртатрĕ Суссанăн кулли. — Тупнă мĕнпе танлаштармалли. Тăраниччен çиме çу та туянайман мĕскĕн çын сăмаххи ку.

— Мĕн тесе култарать Питахир? — кăсăкланчĕ Наçтуç.

— Пĕтĕм тĕллевĕ те ун мана качча илесси. Çав кулăшла мар-и вара?

— Куншăн савăнмалла çеç.

— Кам мĕнле, эпĕ хаксăр хĕр мар.
— Ăна та сумсăр каччă теме çук.
— Тĕрĕс. Вăл — летчик.
— Летчик? Йăнăшан эсĕ, — ĕнентересшĕн ăна Наçтуç. — Петлицисем...
— Мĕн тума кирлĕ мана ун петлицисем? — ÿпкелешсе илчĕ Суссан.
Акă вĕсем Наçтуç пурăнакан пÿлĕме кĕчĕç.
— Манерсĕр лайăх-çке кунта сирĕн! Чечексем!
Чăннипех кунта тирпей куçа лăпкать. Таса. Ниçта пĕр тусан пĕрчи кураймăн. Хăтлă. Чÿрече янаххи çинче — фиалка, пĕчĕк сĕтел çинче — олеандра. Краватьсем çине шурă вителĕк сарнă. Урайĕнче — кавир.
Суссан тĕкĕрлĕ шифоньер умĕнче чарăнса тăчĕ. Питнекуçне вылятса куçкĕскинчи сăнне чĕлхе кăларса витлерĕ. Хăй ташлать: пилĕкрен икĕ алăпа тытса вăр-вар çавăрăнкалать, атăллă урипе тăпăртатать.
— У-ух! Ăшăм пиçрĕ! — Суссан хăнтăр çухаллă хура кĕрĕкне хывса пукан çине лаш-ш пăрахрĕ те шкап алăкне уçма пикенчĕ. Кăлахах. — Ых, пăрăç хутаççисем, кăнтăрла та шкап алăкне питĕрсе тăратаççĕ. Курасшăнччĕ мĕн пуррине.
Тĕрĕссипе илсен, ун пуçĕнче пархатарсăр шухăш явăнать: ыйтмасăр-тумасăр Наçтуç нумаях та пулмасть кооперативра туяннă сарă пурçăн кĕпене йăрхахран вĕçертсе илесшĕнччĕ. Платьи çĕнĕ модăпа çĕленĕскер — тĕнчипе те пĕртен-пĕрре!..
— Наçтуç, эпĕ санăн чи çывăх тусу, — Суссан кушак пек çăвкаланса ăна пырса ыталарĕ. — Ĕмĕр туслă пурăнăпăр-и?
— Юрĕ теепĕр.
— Апла пулсан, эсĕ мана пĕр инкекрен хăтарма тивĕç.
— Эсĕ инкеке лекнĕ-и? — пăшăрханса ÿкрĕ Наçтуç.
— Манăн юлашки модăпа çĕленĕ кĕпе пачах çук. Çитес вырсарникун театра каятпăр.
— Альбертпа-и?
— Мĕн эсĕ! Эпир унпа тахçанах сивĕннĕ. Питахир илсе каять, вăл билет пырса пачĕ. Шутсăр тилмĕрчĕ шеремет çынни. Хĕрхеннипе каяс терĕм театра. Сарă пурçăн кĕпÿне тăхăнтарт мана. Нихçан та манмăп. Театртан таврăнсан, çийĕнчех леççе парăп кĕпÿне.

x x x

Сĕмсĕр хĕр, тупата. Чике тăршшĕ лартрĕ тантăшне. Питахир паллашнă кун ăна килне çитиччен ăсатнăранпа Суссан патне ура та ярса пусман. Ку чăнах та хĕре туллаштаракан, иккĕлентерекен япала. Суссан вăш-вăшах каялла чакакан йышши мар. Вăл каскăн хĕрсен çăхан саккунĕпе пурăнать.

Куç хывнă майлăрах качча хăй çумне тимĕр тăлăпа тăллама хыпăнать. Пуçра шухăш юр пек çăвать лăпăс-лăпăс. Упăшка — çар çынни. Вăл — пуян. Унăн арăмĕн пурнăçĕ — пыл та çу. Ĕмĕр иртни сисĕнмĕ! Апла-тăк, мăшăрланассишĕн пĕтĕм вăя кӳлмелле. Çавăнпа та Суссан ашшĕ кĕсйинчен йăкăртнă укçана пĕрре те шеллемерĕ: «Нарспи» спектакле кайма икĕ билет туянчĕ театр кассинче. Питахире унăн асламăшĕ патĕнче тĕл пулчĕ.

— Ма чăрмантăн? — терĕ йĕкĕт, ним калама аптранă енне.

— Пурпĕрех мар-и, — питне-куçне йăлкăштарчĕ Суссан. — Тепрехинче эсĕ илĕн, уйрăмах — укçа хутаççи иксĕмĕрĕн те пĕр пулсан.

Питахир çакна илтсе шак хытса тăчĕ. Кирлĕ сăмахсем ун таçта мура кайса çухалчĕç. Ĕлкĕреймерĕ çăвар уçма, Шалти пӳлĕмрен асламăшĕ тухрĕ кăштăртатса. Самаях самăрскер хăй. Куçĕ ăшă. Таравак чунли таçтан паллă. Килнĕ хĕре вăл чейпе сăйласшăнччĕ. Ку Суссанăн шанчăкне ӳстерет. Анчах сĕтел хушшине ларма май килмерĕ, темшĕн Питахир ăна ăсатма васкарĕ. Хăй коридора çарамасах тухрĕ. Хĕр ăнланчĕ: каччă ăна киле çитермест... Мĕнех, халлĕхе тӳсмелле. Туратсăр йывăç ӳсмест, теççĕ. Вара хăй çеç туякан серепе çипписене ывăтрĕ хĕр:

— Паян каçпа пыр. Театра кайма шифоньера уçса платье суйлăпăр ман валли.

х х х

Суссан пĕр вăтанмасăр мухтанать тантăшĕ умĕнче.

— Хамăр туя Питахир Ленинград хулинче кĕрлеттерессшĕн. Эпĕ хавас.

Настуç сасартăк чĕрине ухă йĕппи пырса тăраннăн туйрĕ. Питçăмарти тĕлкĕшме тытăнчĕ вутпуççипе тĕкнĕн. Хĕр аванмарланчĕ хăйĕнчен хăй. «Чим, — терĕ вăл ăшĕнче, — тантăшăм ăнăçлăхне ăмсанатăп мар-и? Путсĕр çын апла эпĕ. Ман платье юлташăма урату пахчинче варлипе çӳреме савăнăç кӳрет пулсан, ăçтан чарам?»..

— Мĕн чĕнместĕн? Пар ĕнтĕ, пĕрре тăхăннипех çĕтĕлмĕ, — тилмĕрет Суссан. — Эпĕ хамăн тупрама пĕртте хĕрхенместĕп. Пыр та тăхăн акă е юбка, е кофта.

— Каччуна хăв çумна çирĕпрех кăкарса лартма пулăшать пулсан, шеллеместĕп. Ил. — Настуç шифоньер патнелле ерипен утрĕ. Ун хыççăн аллисене саркаласа Суссан ташласа пырать.

Унччен те пулмарĕ, Настуç урисем урай варринче тăп чарăнчĕç. Куç умне пасăрхи хĕрарăм, Анна Трофимовна тенĕскер, тухса тăчĕ. Вăл хăнана чĕнчĕ-çке ăна: вырсарникун

пымалла, терӗ. Мӗн тăхăнса кайӗ-ха унта, сарă пурçăн кӗпе сӗр?

— Э-э, лекмест сана ӗмӗтленни, — палт каялла çаврăнса тăчӗ Настуç, — ан та çашла.

— Мӗн терӗн? — тăпăртатнă май куçӗнчен вут-хӗм сирпӗтрӗ Суссан. — Ах, кӗвӗçетӗн-и? Питахир сана лекмерӗ-и?

— Айван эсӗ, пакăлтатан кирлӗ мара.

— Апла-тăк, пар кӗпӳне, — йӗрсе ярасла тилмӗрчӗ Суссан. — Эсӗ ырă тунине нихçан та манмăп.

— Хамăн хăнана каймалла. Маншăн вăл театртан пӗрре те кая мар.

— Пăркаланчăк çынна ӳкӗте кӗртме питӗ йывăр, — Суссан, хăнтăр тыттарнă хура кӗрӗкне алла илсе, тухса кайрӗ пӳлӗмрен ятлаçса.

Настуç пӗччenех кулчӗ. Кичем пусрӗ ăна. Кăмăлӗ пăсăлчӗ ун. Пăлханнă ăшне никампа пуплесе пусарма çук. Пуçра шухăшсем пăтранаççӗ. Суссан сасартăк театра кайма килӗшмесессӗн? Питахир, паллах, кăмăлсăрланать, кулянать. Хур курни-çке ку. Ленинград каччине, хăнана, юрать-и вара çапла кӳрентерме? Шупашкар хӗрӗсем пирки япăх шутлӗ. Сурӗ çеç вăл пирӗн çине.

— Каям та парам пӗреххут, — Настуç çӗнӗ кӗпине целлофан пакета чикрӗ те общежитирен тухса чупрӗ. Тем самантра çитрӗ вăл юлташӗ патне.

Алăка Суссан хăй уçрӗ.

— Ан ятла ӗнтӗ мана, айвана, — каçару ыйтрӗ Настуç тутине тăснă тантăшӗнчен. — Паçăр тем ухмаххи аташтарчӗ. Платьӗне илсе килтӗм. Ме!

— Эх, пăрăç хутаççи! — Суссан кап ярса тытрӗ Настуç тăснă пакета. Хăй качака путекки евӗр йăлт-ялт сиккелет. Чарăнусăр ахăлтатать. Тав туса юлташне тыта-тыта чупăвать. — Пӗлетӗн-и, театрта капла чи чиперри эпӗ пулăп. Пӗтӗм çын ман çине пăхӗ. Питахир кӗвӗçӗ те-ха. Маххă памастпăр!

Настуç çăмăл туйăмпа каялла таврăнчӗ общежитие. Ӗç кунӗ вӗçленмен-ха ун. Апатланнă хыççăн пуçтарăнса каçхине вӗренмелли художество училищине тухса вӗçтерчӗ. Ялан хиллех, васкама тивет. Урок пуçланиччен çитрӗ-çитрех вăл. Анчах никампа та сăмах хушма ӗлкӗреймерӗ, аудитори преподаватель килсе кӗчӗ. Питӗ пуçтаруллă çак этем. Ыттисем пек, вăхăта нихăçан та талпас çапса ирттермест. Пуçларӗ лекци вулама. Теми питӗ кирлӗскер: «Çурт стенисене мозаикăллă эрешпе илемлетесси».

x x x

Вырсарникун çитрĕ. Çак кун никамăн та илĕм-тилĕмлех сиксе тăрас килмест.

Хĕвел ерипен хăпарать тӳпенелле. Вăл та ыйхăллă, ахăртнех. Çапах та тӳсеймест хăйĕн ярапипе тутлăн çывăракан чипер хĕр питне кăтăкламасăр.

Наçтуç вăранчĕ. Чӳречерен пăхрĕ тулалла. Сивĕ пулас, унсăрăн хĕвел хăйĕн икĕ аяккине икĕ ачине тăратман пулĕччĕ. Виççĕн тан ăшăтасшăн хĕллехи тĕнчене...

Выртрĕ-ха Наçтуç татах реххетленсе. Çакăн пек чух пуçра шухăш тăпăртатать. Таçта та чупан, ӳкен, сулăнчăксенче йăванса юлан. Акă, хăлхара çинçе сасăллă шăнкăрав янăрарĕ. Мĕне астутарать ку? Эх, çапла-иç: çĕнĕ хваттер сăйне чĕннĕ-çке ăна.

Тухса кайăн-и ир-ирех? Килте тытса тăраканни тем те пур. Эрне хушши пӳлĕмре тусан, лĕкĕ тĕрĕлетет, сĕтел-пукан çийĕ çине витĕнет çӳхе ейме пек. Пурне те тасатмалла, çумалла. Наçтуç тата çĕркаç простыньсем, минтер кипкисем ислетсе лартнăччĕ. Вĕретмелле çавсене пысăк бакра. Пуçланчĕ ĕç, арман аваăртнăн. Ăна та, куна та тăвать хĕр. Калăн, канмалли мар, турпатти кунĕ тейĕн. Сехет йĕпписен ав хăйсен хĕсмечĕ: лăш канмасăр виçеççĕ вăхăта. Наçтуç çывăрма выртнă чух сехетĕн виçĕ йĕппи те, çĕнĕрен талăк пуçланнине пĕлтерсе, шăп та шай çур çĕрте «çула тухнăччĕ». Мĕн чухлĕ шунă вĕсем! Кăнтăр апачĕ тĕлĕнче пысăк бак вĕреме кĕчĕ...

Аранах общежитирен пуçтарăнса тухрĕ Наçтуç. Магазина кĕрсе торт туянчĕ. Хăнана пушă алăпа каймаççĕ — йăли çапла.

Ĕнтĕ кăнтăр апачĕ хыççăн пилĕк сехет иртнĕччĕ. Тен, хуçисем хăнисене ăсатрĕç те пулĕ? «Капла аван та, — шухăшларĕ хĕр. — Хуçисене кӳрентермен. Вĕсене сума суса килнĕçке-ха. Пĕччен ирĕклĕ. Никамран та именесси-тăвасси çук». Шăнкăрав янăрарĕ. Уçрĕç алăка.

— Тинех килчĕ! — кăшкăрса ячĕ Анна Трофимовна хавас сасăпа. — Кĕрĕр, кĕрĕр, Наçтуç.

Шалти пӳлĕмрен темиçе арçын тухрĕ. Кĕпĕрленсе пырса тăчĕç хĕр умне. Вĕсем хушшинче пĕр çамрăкĕ çар тумĕпе. Йăл-л çиçсе пăхрĕ ун çине Наçтуç. Лешĕ куç сиктерсе илчĕ. Тĕлĕнтермĕш! Ку йĕкĕтпе пĕр хут çеç курнăçнă пулин те, ăна самант палларĕ. Питахир ку. Епле майпа кунта лекнĕха вăл?

— Анна аппа, эсĕ хăвăн ĕçне ту. Эпĕ Наçтуçа хам хывăнтарăп.

Пурте тĕпелелле кайрĕç.

— Сана курма эпӗ питӗ хавас, — терӗ Питахир.

— Эсӗ кунта пуранатӑн-и-мӗн? — хӑюлланса сӑмах хушре Наҫтуҫ.

— Ҫук-ҫке. Эпӗ — хӑнара. Анна аппа — ман аттен чи кӗҫӗн йӑмӑкӗ.

Хывӑнтарчӗ каччӑ маляр художнике. Тухса тӑчӗ вӑл Анна Трофимовна хӑнисем умне чӑн-чӑн вутӑш! Пӑхса ытармалла мар чипер пике. Ҫиййӗнче ун леш ҫӗнӗ модӑллӑ сарӑ пурҫӑн платье мар, мӗн пурӗ те шурӑ свитер, симӗс юбка ҫеҫ.

9

Выртаҫҫӗ-ха саккӑрмӗш палатӑри сусӑр хӗрарӑмсем иртен куна хутӑрласа. Вӗсен шучӗ ни сайраланман, ни хушӑнман. Наҫтуҫ та кунтах. Хӑҫан ура ҫине тӑрать вӑл, паллӑ мар.

Яланхиллех, тухтӑрсем ирхи ҫӳревре. Акӑ, саккӑрмӗш палатӑна ҫитрӗҫ. Кашнинех канаш параҫҫӗ. Христина Акшар та унсӑр юлмарӗ.

— Ӗнтӗ костыльпе ҫӳреме юрать, — терӗ ӑна дежурнӑй врач.

Хавасланчӗ ҫыравҫӑ. Акӑ, тыттарчӗҫ ӑна костыль. Асту! Асӑрханулла пул! Кашнинех пӳрмен спортсмен ӑсталӑхне. Патак тӑрринче ҫакӑнса ҫӳресси ача-пӑча вӑййи вӑл. Тӗрӗсех. Ҫав кунах, кирлипе пӗр ҫӗре кайма тухсан, цемент урайлӑ коридорта Христина Акшар костылӗ-мӗнӗпех кӗрӗслетсе ӳкрӗ.

— Ай-ай!.. — сехӗрленӳллӗн янӑрарӗ коридорта. Хӑйӗн кабинетӗнчен Глеб Львович тухтӑр хыпӑнса тухрӗ. Алхапӑл ҫитсе тӑчӗ вӑл урайӗнче ахлатса выртакан хӗрарӑм патне.

— Ерипенрех ҫӳремелле. Капла пуҫна ҫурӑн, — терӗ тухтӑр, — пульницаран тухаймасӑрах леш тӗнчене ӑсанӑн.

Ытла ырӑ кӑмӑллӑ ҫав Глеб Львович. Христина Акшара ачана ҫӗкленӗ пек йӑтса илчӗ те, палатӑна илсе кӗрсе, кравачӗ ҫине вырттарчӗ. Ҫӗнӗрен аманман-и? Пӑшӑрханни тухтӑра тӗрӗслеме хистет. Турра шӗкӗр, пурте йӗркеллех.

Пульницарах-ха Христина Акшар. Ир те, каҫ та йӗппе тиреҫҫӗ — укол тӑваҫҫӗ. Мӗнле эмел чупать-тӗр ӗнтӗ юн тымарӗ тӑрӑх. Шанмалла, ырриех пулӗ-ха, суран вучахне вӗрсе сӳнтерӗ.

Костыльпе ҫӳреме хӑнӑхаймарӗ вӑл, татах, татах ӳкрӗ.

— Ҫӗнӗрен уруна хуҫиччен киле кай, — ҫапла йышӑнчӗҫ тухтӑрсем. — Йӗпсене кӑларма тепӗр уйӑхран килен.

Кулянса юлчӗ Наҫтуҫ. Хӑнӑхнӑччӗ вӗсем пӗр-пӗрне. Ыттисем те, салхуллӑн сывпуллашса, часрах сывалма сунчӗҫ ӑна.

— Килте эпӗ хӑвӑртрах ура ҫине тӑрӑп, — терӗ Христина Акшар.

Çирĕм çиччĕмĕш кун уксах ĕнтĕ вăл. Мĕн тери асап, ырату. Мăшкăл... Юрать-ха кӳршĕ-аршă пулăшать. Тавтапуçах вĕсене.

Телефон шăнкăртатрĕ. Кам аса илчĕ-ши? Аппарат алăк патĕнчи сĕтел çинче. Унта çитме ансат мар.

Христина Акшар, диван çинче выртаканскер, урайне шуса анчĕ. Кунта — кивĕ пиншак-кимĕ. Ларчĕ ун çине. Вара аллипе тĕккелесе шурĕ. Ĕнтĕ телефон трубки хăлха анинче.

— Итлетĕп. Кам калаçать? Малышев милиционер? Мĕн тесшĕнччĕ? Э-э-, йышăнмастăп. Хама япăх туятăп, — хирĕçлерĕ Христина юлашкинчен.

Милиционер алăк çĕмĕрсе кĕме хатĕр. Тем пит васкамалла. Темиçе минут иртме ĕлкĕрчĕ, алăка уçрĕ кил хуçи. Хваттере кĕчĕ хайхискер. Лешĕ пульницана пынă милиционер мар, пачах урăххи. Ку та çамрăк, пĕр вăтăрсем урлă çеç каçнă-тăр. Çийĕнче ахаль тум — хăмăр костюм. Типшĕм пит, юсман евĕр çӳхе тута, шĕвĕр сăмса, айăн куç. Самантрах папкине уçса сĕтел çине хучĕ. Ручки те хатĕр.

Хысчă пукан çине ларчĕ хайхискер тайăнса. Допрос тума манчĕ-ши, пачах урăххине ваклать — хăй пурнăçĕ çинчен. Унăн ĕçĕ питĕ йывăр, çав тери яваплă тата хăрушă та-мĕн: ăра, вăрă-хураха, шулĕксене тытать, тĕпчет, тăрă шыв çине кăларать. Пурнăçĕ те ав чаплах мар: хваттер те çукпа пĕрех. Пӳлĕмĕ иккĕ-ха, анчах кухньăра темиçе çемье пĕрле тĕпĕртетет. Пĕр ача ӳсет, халь-халь тепри çуралмалла. Çавна пула арăмĕ ĕçлеймест-мĕн-ха. Хăйне Малышев артак кăмăллă çын пек кăтартма тăрăшни сисĕнет. Вĕçкĕн те пулас. Калаçнă май сулахай аллине тек-текех сывлăшра сулкаласа илет. Качи пӳрнинче ун аматист куçлă çĕрĕ.

Тĕпĕпех ăнланса çитеймерĕ-ха ку çынна Акшар. Хăйне вăл те хĕрхентересшĕн, те пулăштарасшăн?

Хĕрсех сăмах йывăççине силленĕ май, пач кĕтмен çĕртен, пат ыйтрĕ хучĕ:

— Хăвăра машинăпа çапса ӳкернĕ çамрăка сута парас тетĕр-и? — чăр-р пăхрĕ вăл Христина куçĕнчен. Каллех сулахай аллине сулса илчĕ. Çĕрĕ куçĕнчен сывлăшра, вĕреçĕлен хӳри евĕр, кăвак хĕлхем ярăмĕ йăр-р тăсăлса сӳнчĕ. — Сута парсан та усси çук. Правине çийĕнчех тавăрса параççĕ.

— Шухăшламан-ха кун пирки. Путех, çӳрейместĕп уксах урапа, — терĕ Акшар.

Малышев милиционер ручкине йăпăр-япăр ярса тытрĕ те хут листи çине тем çырса хучĕ. Пуçне çĕклеме ĕлкĕрчĕ çеç, сăмах арманне хута ячĕ те. Сăмах кĕрпи вара ытла та хылчăклă. Пĕр хĕре йĕкĕтсем пусмăрласа мăшкăлланă. Чи айăплине тĕрмене хупма тивет. Нумай та вăхăт иртмест, хайхи хĕр нихăшне те мар, шăп та шай çав тĕрмерине качча ту-

хасшăн, мĕншĕн тесен вăл пĕртте айăплă мар. Малышев слдователь тискер çын имĕш. Ун пирки мăшкăл ят илтнĕ хĕр прокурора жалоба парать. Халĕ мĕнле çăлăнмалла çав тимĕр тăлăран?

— Ăнланма хĕн, — пуçне пăркаласа илчĕ кил хуçи. Ăна икĕ урине те шатăртах хуçса тĕпретнĕ Наçтуç аса килчĕ. Вăл, ав, хĕр чысне сыхласа, виççĕмĕш хутран сикнĕ.

— Итлĕр-ха, Христина Акшар, поликлиникăна сипленме таксипе çӳретре? — терĕ Малышев милиционер.

— Мĕн терĕн? — ăнланаймарĕ çыравçă, йĕкĕтсем сумсăра кăларнă хĕре шеллесе шухăша путнăскер.

— Такси мĕн чухлĕ тăпăлтарать, тетĕп.

Нумай тăккаланать Христина Акшар хăйĕн хуçăк урине юсасшăн. Поликлиникăна сипленме пĕр хут кайса килме кăна таксиста кĕсъерен çичшер тенкĕ кăларса памалла. Мумие текен эмел тата — мĕнле хаклă! Çăмах пысăкăш сăмала евĕр хура чăмаккана спекулянтсенчен çĕр тенкĕ тӳлесе туянма тиврĕ ăна. Мĕн тăвăн! Хуçăлнă шăмма сыпăçтарать теççĕ те, ирĕксĕрех унпа эмелленес килет. Аптекăра пур имĕш çав япала, анчах ахаль çынсене лекмест.

Килнĕ тĕпчевçĕ хăй каластаракан хĕрарăм кăмăлне систермелле мар шав шахвăртать. Тем те пĕлмелле ун. Уйрăмах акă мĕнпе кăсăкланчĕ: лешинчен, машшинпа çапса ӳкернинчен, укçа ыйтас темест-ши? Акшар ун пеккине хирĕç-мĕн. Çын укçи сиппе пымасть. Укçапа чыслăх пĕр енчĕке кĕмеççĕ, тенĕ ваттисем.

Çакна илтсен Малышев милиционер пит-куçĕ самантрах çуталса кайрĕ. Тути йăл-йăл сарăлса пĕрĕнет. Унччен те пулмарĕ, папкинчи хучĕ çине каллех тем çырчĕ васкасах. Кил хуçи ăнланмарĕ ун савăнăçне.

Каллех тапратрĕ милиционер каруçельне çавăрма, ваклать кăна сăмаха. Ăçтан тупса пĕтернĕ вăл чуна чăрмалакан тĕрлĕрен ăнсăртсем?

...Кооператорсем хулара, халăх нумай иртсе çӳрекен кĕтесре, кафе уçнă. Хăйсем кунтисем мар. Магазинта аш туяннă çакскерсем. Авăртнă ăна. Унпа-кунпа хутăштарса вĕт кукăль пĕçерме тытăннă. Ăна хаклă хакпа сутнă. Ăçта кăна шывпа юхса каймасть ĕç тăвакан çыннăн укçи!.. Кукăль сутакансен арчи тулать те тулать укçапа, тапса тăраканах пулать. Анчах татах тултарас килет, эсреметсен, арчине. Май тупаççĕ хайхи. Вичкĕн кусарсемпе кĕреçесем илсе каяççĕ выльăх масарĕ çине. Тинтерех вилсе пытарнă ĕнесене чавса кăлараççĕ. Касса тураса «аш тăваççĕ», михĕсене чышса тултараççĕ. Никам та курмасть — ăнăçлă иртет «операци». Авăртсан, ăшаласан, пиçеççĕ вара кукăльсем каллех. Ăна-

кăна та ăша илмен çынсем чип-чиперех туянса чăмлаççĕ че пурекки тесе.

— Юмах-и ку? — тĕлĕнчĕ Христина Акшар. — Пĕтĕм ăшăм йĕкленсе хăпарчĕ.

— Пĕрре те кулăшла халап мар, — çирĕплетрĕ Малышев. — Мана тыттарчĕç çак ĕçе тĕрĕслеме.

Çĕнетÿ тапхăрĕн пуçламăшĕнчех кооперативлă кафесем уçма ирĕк пани йăнăш пулчĕ-тĕр. Коллективлă спекуляци пуçланчĕ. Кооперативлă кафесем уçиччен малтан выльăх-чĕрлĕхне лайăхрах ĕрчетмелле, пахчаçимĕç ытларах туса илмелле. Вара, тархасшăн, кукăльне те, яшкине те, тултармăшне те пĕçер, шăрттанне те ту. Пурне те таса чунпа сут.

Христина Акшар сывалса çитсенех кун пирки статья çырам-ха тесе шутласа хучĕ.

— Поликлиникăна хăвăр урăра хуçнисен машшинипе çÿрес теместĕр-и? — ыйтрĕ милиционер.

Пуçран тукмакпа кĕрслеттернĕнех туйăнчĕ çакă Акшаршăн. Çав йĕксĕксен машшини çине ларĕ-и? Пĕр-пĕр çырмана та йăвантарса хăварĕç вĕсем, шан-ха çăмăлттайсене. Пăлханнипе-тĕр ун аманнă ури аптрипе тирнĕн яшт-яшт чиксе кайрĕ, хаяррăн ыратма тытăнчĕ.

— Ну, калăпăр, сире илме çав çамрăк машшинипе кăрлаттарса килтĕр-и? Ним мар илсе кайма пултарать вăл сире тухтăр патне.

— Тупата, мана ним те кирлĕ мар.

Малышев çын нушине чухлама пĕлмест-ши е юри чунсăрланать? Вăл самант хут листи тăсса пачĕ, алă пусма хушать. Унта хайхи амантнă хĕрарăм машшин хуçине йăлтах каçарни çинчен çырнă.

— Чим-ха, — чарчĕ ăна кил хуçи, ăна пульницăра хĕрарăмсемпе калаçни асне килчĕ те ыйтрĕ: — Мана машшинпа таптанă çамрăкăн хушамачĕ мĕнле?

— Альберт Аверкеев.

— Ах, чăнах та çапла терĕç-ске-ха. Ашшĕ ăçта ĕçлет?

— Ашшĕ-и? — милиционер тем чăлханчĕ. Вара ирĕксĕртерехxĕн каларĕ: — Хула Советĕнче ĕçленĕ, халĕ унта мар вăл.

— Амăшĕ пур-и?

— Ăçта кайтăр, паллах, пур — врач.

Пĕр вăхăтра хула Советĕнче ĕçлекенсем взятка илни çинчен хаçатра çырнăччĕ. Эппин, тĕрĕсех, Альберт ашшĕ те взяткăпа сыхланнăскер пулĕ-ха.

## 10

Çамрăк мăшăр çĕнĕ çурт умне çитсе чарăнчĕ. Вăл темиçе хутлă, хулан икĕ тĕп урамĕ хушшине вырнаçнă.

— Ах, мĕнле чаплă кермен! — çĕкленӳллĕн калаçать арăмĕ. — Хăшĕ пирĕн хваттер, мистер Малышев?

— Тăваттăмĕш хутра ав, — аматис куçлă çĕрĕ тăхăнтартнă кача пӳрнипе тĕллерĕ çӳлелле упăшки. — Чӳречисем епле пысăк, алăк пек. Виçĕ пӳлĕмĕ те хĕвел енче, пĕр чӳречи тухăçалла тухать.

— Маттур эсĕ, ман милиционерăм!

— Çапла. Алăпа алла хире-хирĕç çусан, иккĕшĕ те шурă пулать. Çавна пĕлет сан мăшăру, хăçан мĕн тумаллине хăнăхса çитрĕ.

Малышев хăй ĕçне тĕрĕс хак пачĕ. Христина Акшар патĕнчен тухсан вăл тӳрех Аверкеев патне тĕрлеттерчĕ. Алăк урати урлă каçнă-каçман пуçлăхăн ывăлĕ Альберт ун çулне кап картларĕ.

— Ĕç тухрĕ-и? Атту атте йĕрĕнтерсе çитерчĕ.

Çăварне уçма ĕлкĕреймерĕ Малышев, шалти пӳлĕмрен хуçа тухрĕ. Ывăлĕ çапла çĕнĕ машшинпа аташса çӳресе сыннa таптанăшăн пуçран лекесрен чĕтресе пурăнать вăл. Çитменнине, ăна нумаях та пулмасть ӳстернĕ — тата пысăкрах пуçлăх пуканĕ çине лартнă. Ывăлĕ амантнă хĕрарăмăн сывлăхĕ пирки ыйтса пĕлесси, ăна пулăшасси асра та çук çак сĕмсĕрсен. Инкекрен хăйсен хăтăлса пултăр.

— Ан кĕттер, — питне-куçне темле илемсĕррĕн пĕрĕнтерсе илчĕ ывăл ашшĕ Аверкеев.

— Эпĕ ĕçе хамăра мĕнле тивĕçтерет, çапла майлаштарма хăнăхнă, — мăнаçлăн пуçне каçăртрĕ Малышев милиционер. — Анраскер вăл Акшар, йăлтах каçарчĕ. Халĕ ĕнтĕ сирĕн çумăра ниепле те çулăхма пултараймасть.

— Алă пусрĕ-и?

— Унсăр мĕнле тухса килĕп тет! Ахальтен ун патĕнче пилĕк сехет лармарăм пулĕ.

Малышев милиционера тулли апат-çимĕçлĕ сĕтел хушшине кĕртсе лартрĕç.

— Кӳр хăвăртрах водитель правине! — тӳсеймесĕр хистет нĕрсĕр ывăл.

— Хуп çăварна, — хăтăрчĕ ăна ашшĕ. — Çут ав лампăсене.

— Прави кунтах, — Малышев сулахай алă лаппипе папкине çăт-çат çапса илчĕ, качи пӳрнинчи çĕрĕ электролампа çутипе çиçĕм евĕр йăл-ял çуталчĕ. Çӳхе тути сарăлчĕ те сарăхарах панă шăлĕсем курăнчĕç. Вара куçне хĕссе каларĕ: — Ывăç тупанĕ çине мĕн хума пулнăччĕ-ха эсир?

— Манман ĕнтĕ, — Аверкеев сасси чул айĕнчен хĕсĕнсе тухнă пек тухрĕ. Вăл сĕтел ещĕкĕнчен портфельне кăларса уçрĕ те хваттер илмелли ордер туртса кăларчĕ. Хире-хирĕç тыттарчĕç вара: Малышев милиционер Аверкеева — права. Аверкеев Малышев милиционера — ордер.

— Тăвата пÿлĕмлинех-и? — иккĕленерех тишкерчĕ Малышев ордера.

— Суйман ĕнтĕ. Хăватăм пур-ха, мĕн хушнине самант туса параççĕ, — мухтанчĕ Аверкеев кăкăрне каçăртса.

Икĕ çăткăн çыннăн таса мар ĕçĕ çапла çырлахрĕ. Тахăш пĕрин хваттер илмелли черечĕ каялла чакни те, пуçтах ывăл амантнă хĕрарăмăн сывлăхĕ те пĕр нимĕн чухлĕ пăшăрхантармасть. Ара, вĕсен кермен пек хваттерсем пур, шăмшакĕсем тĕрĕс-тĕкел, ним те, ним те, пÿрне вĕçĕ те пулин ыратмасть.

x x x

Кун кĕскелнĕçем кĕскелет. Хĕвелĕ те сисĕнмеллех сÿрĕкленчĕ. Тÿпере вăрах тăмасть вăл, часах каçалана сулăнать те вăшт çеç ярăнса анать — сывă пул ирччен! Хура шăналăклă каç самантрах йăпшăнса хуплать çĕр питне.

Пĕр чаплă çуртри темиçе пÿлĕмлĕ хваттер чÿречисем тĕптĕттĕм. Мар-ха, шалта çутă çукран мар — чÿрече каррисем пиçĕ те хулăн пиртен. Хваттерĕн алăкĕ те питĕрĕнчĕк. Ан та шаккаччăр, ан та шăнкăравлаччăр — пурпĕрех уçмĕç. Ĕненес те мар килте никам та çуккине. Унта вăрттăн ĕçкĕ-çикĕ пуçланнă.

— Тавсье!

— Тавсье!

Хрусталь черккесем пĕр-пĕринпе перĕнсе чăнкăр-чăнкăр-р янăраççĕ. Çăвар уçăлать те, çутти янк çеç çăтăнать. Самаях хĕрчĕç хваттер хăтлакансем. Кĕтмен çĕртен пĕр хăни чуна пăшăрхантаракан сăмах пуçларĕ:

— Кĕçех парти область организацийĕн конференцийĕ пуçланать. Суйлĕç-ши-ха пире обком составне?

— Самана улшăнчĕ. Пуçлăхсене сирпĕтесшĕн тапаçланаççĕ хăлтăхсем. Ых-хх! Курайместăп-çке çавсене, — шăлне кăчăртаттарчĕ кил хуçи. — Пирĕн хамăр айри пукансене çирĕп тытмалла.

— Эпĕ юлсан та юлăп-ха. Сан, Аверкеев юлташăм, хăрушлăх пур.

— Мĕн пирки эсĕ, тусăм?

— Ара, ывăлу хĕрарăм çыравça машшинпа çапса ÿкернĕ, урине хуçнă... Ай-ях, ырах мар. Журналистсем халĕ пирĕнтен, пуçлăхсенчен, хăрами пулчĕç. Уççăнах çыраççĕ те çыраççĕ.

— Ку пăтăрмах пирки никам та пĕлмест, — пуçне пăркаласа илчĕ Аверкеев пуçлăх. Юлташĕ пуçарнă калаçу ăна урăлтарсах ячĕ. — Хăй вăл, сусăрланни, тухса çÿреймест тет-ха. Тата, каларăм-çке, Малышев милиционер ĕçе шăлса якатнă

— Эхе-хе-хе, тăванăм-юлташăм, пăшатана михĕре пытараймăн.

Çур çĕр тĕлĕнче юлташĕ тухса кайрĕ. Анчах вăл ăша шĕл кăвар хурса хăварчĕ ĕнтĕ. Аптранă енне, Аверкеев кĕленче тĕпне юлнине янклаттарчĕ. Çук, сӳнмест вут амак. Çемçе, меллĕ вырăн та лăплантараймасть-мĕн. Самайччен енчен енне çаврăнкаласа выртрĕ вăл. Тем хушăра кăтăш пулнă вара.

Тĕлĕк тени çакнашкаллине çеç кĕтет тейĕн. Çавăтса та кĕчĕ, ав, хăйĕн тĕнчине. Çавăрттарать кăна.

...Керменре пек. Аллине çурăм хыçне çавăрса тытнă та çӳрет Аверкеев мăнаçлăн каллĕ-маллĕ. Халăх пасарти евĕр хĕвĕшет, иртсе пĕтмелле мар. Çитменнине тата ăна пурте сывлăх сунаççĕ пилĕн таран тайăлса, кукша пуçĕсене çутăлтарса. Мĕнле этем кĕтĕвĕ ку? Тăна илесшĕн пуçне сулкалать Аверкеев.

«Эх-е-е, ара партконференци-иç», — çамкине çат çапса илет хайхискер.

Шăнкăрав янăрарĕ. Пуху пуçланма вăхăт. Аверкеев сцена çине хыпаланса хăпарчĕ. Вăл та ытти пуçлăхсем хыççăн сĕтел хушшине вырнаçрĕ. Унччен те пулмасть, сăмах параççĕ ăна. Тухрĕ трибуна умне.

«Эпĕ хура халăха ытлăн-çитлĕн пурăнма пулăшас тесе çĕнетӳ хумĕ çине куçрăм. Малашне кашни çын ырă курса пурăнма тытăнĕ. Пурне те пулăшатăп, никама та хур кӳместĕп», — çапла калаçма тытăнчĕ Аверкеев. Сасартăк çав вăхăтра пысăк алăк уçăлчĕ те, зала темле пĕр асар-писер хĕрарăм кĕчĕ тăчĕ. Куçĕсем алтăр пек, çăлтăрла ялтăртатаççĕ. Хул айĕнче — костыль. Хулăн сасăпа кăшкăрса ячĕ çак:

— Суя-я-ять! Вăл тӳрĕ кăмăллă çын мар! Çемйи те путсĕр! Унăн тăрнаккай ывăлĕ мана машшинпа таптарĕ. Ура хуçăлчĕ.

— Пулăшрĕç-и хуть сывалма? — залра ларакансенчен пĕри ыйтрĕ пек. — Укçа пачĕç-и, ăшă сăмахпа йăпатрĕç-и?

— Ненай! — тепĕр уçă сасă илтĕнчĕ халăх хушшинчен. — Эпĕ ăна витĕр пĕлетĕп. Вăл хăлăхсăр çын. Вăл взяточник!

— Пĕтĕм нушине пĕччен тӳсетĕп, — ӳлесех йĕрсе ячĕ хайхи костылĕ çине тайăнса тăракан хĕрарăм. — Пĕр хутчен те пымарĕç.

— Аверкеев çынна пулăшакан йышши мар! Хăвалăр ăна трибуна çинчен!

Халăх урса кайрĕ. Залра шăв-шав çĕкленчĕ. Темиçен чупса пычĕç. Алăран, пиншак аркинчен туртаççĕ. Аверкеева тăлпалантарса антарчĕç сцена çинчен.

— Пĕт!

— Тĕп пул!

— Эсĕ коммунист мар!
— Пуçлăха лартмастпăр. Çитет! — ĕрлешеççĕ хăлхана йӳ-çĕтсе. Тахăшĕ ыратмаллах тапрĕ хырăмран.
— Х-х--ху-рах! — çухăрса ячĕ Аверкеев.
Çав вăхăтра ăна арăмĕ айăкран чавсипе чышса вăратрĕ.
— Мĕн, вăрăсем тапăнчĕç-и?
— Ах, усал тĕлĕкпе аташса выртнă, — пашка-пашка калаçрĕ Аверкеев, месерле майлашса выртнă май. — Партконференцире ыррине кĕтме хĕн: инкек сиксе тухатех, ахăртне. Тытать те акă лешĕ, Альберт амантнă хĕрарăм, президиума жалоба çырса парать. Сывă пул вара ĕç, парти, чап. Урам шăлма кĕрĕшесси çеç юлать.
Юнашар выртакан арăмĕ тăрса ларчĕ яштах. Тытăнчĕ сăхха яма... Турра хута кĕме тилмĕрет. Упăшкине пуçлăхран кăларса çапсан, ыррине кĕтме çук. Вĕсенчен пĕр çын та хăрамĕ. Халĕ ырлăхчĕ-ха. Апат-çимĕçе киле кӳрсе параççĕ, холодильнике чыхса ĕлкĕр çеç.
— Хĕрарăм пуçупа хăть сан кайса килесчĕ çав сусăрланнăскер патне. Çапах та вăл çыравçă. Таçта, пирĕн пурнăçа пăсса ан хутăр, — йĕрмешрĕ пуçлăх-упăшка.
— Хăнăхман эпĕ çавнашкал сĕренсĕрскерсем умĕнче мĕскĕнленсе çӳреме, — тутине пăрать арăмĕ. — Эпĕ камне ан ман эсĕ. Хăвах майлаштар.
— Сан шутупа, мĕнле, ăна кайса пуççапас-и ман?
— Эх, анра-сухра! Тупата, тăмран туса хĕвелпе хытарнă телле эсĕ.
Пĕр хушă шăпланса выртрĕç. Унччен те пулмарĕ, упăшкин чĕрине хĕртнĕ тимĕр пырса перĕнчĕ тейĕн. Мĕн амакĕ?
Тĕлĕрсе кайма та ĕлкĕрнĕ арăмне шуйланса Аверкеев вăратрĕ.
— Çывăр! — кăшкăрса пăрахрĕ ăна арăмĕ.
— Чим-ха, вăран. Ăçта пирĕн юратнă кутюкăмăр?
— Ка-ам? — тĕлĕнчĕ арăмĕ.
— Альберт ывăлăмăр, ара. Хăçантанпа куçа лекмест, хăрать-и çаплах эпĕ патакласран?
— Юлташĕ патне Якутие кайрĕ терĕм-çке сана пĕркун.
Амăшĕ ывăлĕ мĕнле сăлтава пула килтен тухса кайнине чăннипе каламарĕ. Ăна прокуратура шырать. Вăл темле хĕре пусмăрласшăн тапăннă. Мĕскĕнĕ пульницана лекнĕ. Урисем хуçăлнă имĕш. Мĕншĕн уйрăмах урисем? Ыйтса тăрас килмерĕ ун. Çын нуши-инкекĕ кăсăклантармасть ăна, Альберчĕ ирĕкре çӳретĕр тĕнчере. Чи кирли — çакă амăшĕшĕн.
Аверкеев пуçтах ачин çак çылăхне пĕлмест. Вăл тусĕ хăратнă хыççăн леш сусăрланнă çыравçă хĕрарăмран шикленме пуçларĕ чăнласах. «Тен, каçарĕ. Кайса тилмĕрес ăна». —

хăйпе хăй сăмах татрĕ вăл. Тул çутăласса аран-аран кĕтсе илчĕ Аверкеев. Ĕçе хыпаланса çитрĕ те начальниксене çеç тăрантаракан буфетран пысăк та пахалăхлă торт илсе килме хушрĕ секретарьне.

## 11

Путсĕр çын ури йĕрри çине пусасран сыхланма хушнă авалтан. Пуссан мĕн пулĕ? Пуссан, ху та этем ĕренкинчен тухăн. Ах, пусас марччĕ-çке унашкал йĕр çине! Анчах пурши çав йĕксĕк пусман сукмак е çул? Темĕн çав. Апла пулсан, кам тĕллесе кăтартĕ çав хăрушă йĕре? Çын кăтартĕ! Çын! Ăçтан тупăн унашкаллине: курма, ыттисене тĕллесе кăтартма пултаракана? Çук ун пек çын. Шел. Çын мар-тăк, тен, хĕвел кăтартĕ çав йĕксĕк çын йĕрне? Хĕвел кăнтăрла çеç курать, уйăх — çĕрле. Эппин — сывлăш! Вăл ялан çынпа. Уншăн пĕрех: кăнтăрла-и, çĕрле-и, сывлăш çын умĕнче, ун ăшĕнче. Вăл йăлтах курать, унтан ниçта та тарса пытанма май çук. Тата сывлăшăн ăстăнĕ, вăй-халĕ пысăк. Чĕлхи çук-и? Пур, пур! Ăна тăнлама çеç пĕлмелле.

Кам ура йĕрри çине пусасран хăрамалла? Тӳрех калар, акă — Альберт ура йĕрри çине. Наçтуç маляра, Христина Акшар çыравçа чутах леш тĕнчене ăсататчĕ. Вĕсене çеç-и? Вăл тунă тискерлĕхсен шучĕ те çук. Мĕнрен пуçланнă-ши Альбертăн çав пархатарсăрлăхĕ?

Итлер-ха сывлăша. Мĕн курнă, мĕн илтнĕ вăл?

...Альбертăн ашшĕпе амăшĕ иккĕшĕ пĕрлешиччен темиçе хут та мăшăрланса уйрăлнă. Аслă ачи-пăчи тĕнче тăрăх саланса пĕтнĕ, тахçанах манăçа тухнă. Альберт — çĕнĕ юратуран çуралнă папак. Халĕ вăл сухаллă тете, апла пулин те ашшĕ-амăшĕншĕн сăпкари пепке çеç. Сыхлаççĕ ăна, айăпне сирсе хӳтĕлеççĕ. Усал ĕç тунă пулин, ара, пурпĕрех вăл мар, ыттисем тӳсчĕр асапне.

Темиçе, темиçе çул иртнĕ унтанпа. Альберт пĕчĕкчĕ-ха. Мĕн ытлашши пĕчĕкки-качки — виççĕре. Мĕн лайăхпа мĕн начаррине ăнланать. Çуллаччĕ-ха ун чух. Хĕвел лăпкатчĕ çĕр çинчи пĕтĕм чĕрĕ чуна, йывăç-курăка. Хула паркне пырса кĕчĕç Аверкеевсем ачипе. Виççĕшĕн çийĕнче те яка тум. Пĕтĕм халăх вĕсем çине пăхать. Пĕри ăмсанса, тепри — кураймасăр... Ытармалла мар клумбăсем хушшипе утаççĕ хайхискерсем. Альберт куçĕ те курма пĕлчĕ илеме. Ак, хăпарчĕ чечек йăранĕ çине мĕштĕртетсе. Вăтăрчĕ чечексене, чи хитрисене. Аллинче — астрăсем.

— Ай, маттур! — мухтарĕ амăшĕ ывăлне. — Аппĕ, курха пирĕн йĕкĕте! Илеме мĕнлерех туять вăл!

— Ырлатăп сана, Альберт ывăлăм. Ялан çапла паттăр та ăслă пул! — Аверкеев ачине çурăмĕнчен лăпкарĕ. — Мĕн лайăххине аллунтан ан тарт.

— Намăс мар-и сире ачăра киревсĕр ĕçшĕн мухтама?! — сиввĕн пăхса иртрĕ вĕсем çине пĕр ватăрах хĕрарăм. — Каш-ниех çапла чечек çăлсан, йăран çаралса юлать.

— Сан мĕн ĕç пур? Ку пирĕн ача, — хÿтĕлерĕ амăшĕ пĕчĕк Альберта.

— Тьху! — сурса илчĕ айккинелле хĕрарăм, тек питлеме сăмах хĕрхеннĕн.

— Гражданка, иртсе кай хăвăн çулупа! — хăтăрчĕ ăна Аверкеев.

Хĕрарăм пăрахса кайрĕ, тек çыхăнас мар терĕ-тĕр пайтасăрсемпе.

Шел, сисмерĕç Аверкеевсем ачин чунĕнче сĕмсĕрлĕх вăрри акăнса юлнине.

x x x

Вăхăт иртет сисĕнмесĕр. Аверкеевсен ывăлĕ те пĕве кайрĕ. Ÿсет. Шкула çÿреме тытăннăранпа та çулсем юлчĕç хыçа. Альберт туслă пурăнаймасть никампах та. Кам пит хăрать ун чышкинчен? Учительсем тарăхаççĕ акă йĕркене пăснăшăн.

x x x

Çил ачисен йăли — ашкăнасси. Йывăç тăррисене аваççĕ кăна. Сывлăш хумханать. Эппин, вăл тем вуласшăн. Итлес, итлес ăна.

...Кам-ши, мĕн-ши уйри çул çинчи тусана мăкăрлантараканни? Мотоцикл! Ăна хăвалаканни — Альберт. Мотоцикла чуптарма ăна ашшĕне пăхăнса тăраканăн ывăлĕ вĕрентнĕ. Анчах виçене картманни инкек патне илсе пырать... Мотоцикла пулах суд умне тăмаллаччĕ ун. Ашшĕ, çав вăхăталла пуçлăх пуканне йышăннăскер, хăтарса хăварчĕ ăна шар курасран. Ун вырăнне урăххи — Тяпуç — тертре.

Тяпуç кукамăшĕпе çырма сĕвекĕнче пĕр тайлăк-тейлĕк пÿртре пурăнать. Йĕри-тавра — çап-çара. Картишĕнче пĕртен-пĕр пĕчĕк сарай кăна, хăма татăкĕсенчен çапкаласа хайланăскер. Унта вут-шанкă тытаççĕ тата çуркунне кÿршĕсем

парнеленĕ качака путеккине хупаççĕ. Тяпуç юратать путеке. Ăна усрама хĕллене утă хатĕрлет.

Вĕсен тĕлне мотоциклпа Альберт тĕрлеттерсе çитнĕ чух Тяпуç, курăк тултарнă михĕ çĕкленĕскер, калинкке алăкне уçасшăн муталанса тăратчĕ. Курăкне вăл вăрман уçланкинче çурлапа вырнă. Çулĕ утмалăх пур, тӳпере, ав, çăлтăрсем мĕлтлетме тытăнчĕç.

— Хăта, салам! — сывлăх сунчĕ мотоциклĕ çинчен анса Альберт.

— Хăвна та салам. Мĕн эсĕ çĕр хута çӳрен?

— Эсĕ, Тяпуç, манăн чи çывăх тус. Çапла-и?

— Çывăхĕ-мĕнĕ... Пирĕн тĕле ăçтан шыраса тупрăн?

— Сана курас килни туптарчĕ.

— Эпĕ саншăн юратнă хĕр-и-мĕн?

— Чарăн-ха лĕпĕртетме, — тĕттĕмре такама курасла, йĕри-тавралла тинкерчĕ Альберт. Вара çапла сăмах тытрĕ: — мотоцикл туянтăм. Пирĕн ăна усрама вырăн çук. Вăрăсем хыптарасран хăратăп. Ларттар-ха хăвăрăн сарайне.

— Сарайĕ пирĕн чăх йăви пек çеç, тăвăр, — терĕ Тяпуç.

— Вырнаçтаратпăр епле те пулин.

— Асанне ятлĕ-ха.

— Кала эсĕ ăна: атте пулăшĕ. Ăна мĕн те пулин кирлехтĕр. Çăкăр-тăвар хире-хирĕç, теççĕ.

Килĕшрĕ Тяпуç. Мотоцикла картишне сĕтĕрсе кĕчĕç. Мекеçленсен-мекеçленсен, вырнаçтарчĕç Альберт мотоциклне.

Тепĕр кунне милици персе çитрĕ Тяпуçсем патне. Тупрĕç мĕн шыранине сарайĕнче.

Мотоциклĕ ку завод умĕнче ларнă çĕртен çухалнă-мĕн. Хуçи ун — пĕр рабочи.

— Эсĕ вăрланă мотоцикла, — тапăнчĕç Тяпуçа.

Лешĕ ĕç-пуç мĕнле пулса иртнине ăнлантарса пачĕ.

— Суян! — юнарĕ ăна милиционер. — Аверкеев ывăлĕ вăрă ĕçĕпе çыхланса ухмахланмĕ ĕнтĕ.

Ĕненмерĕ пулин те, унăн Альбертпа курса калаçмаллах. Урăхла юрамасть.

Килте Аверкеевпа арăмĕ çеç, ывăлĕ таçта. Хăйне кунта мĕнле сăлтав хăваласа килни çинчен тăхçаларĕ милиционер.

— Мĕнле хăян эсĕ темле тăмсай пакăлтатнипе пире чăрмантарса çӳреме! — кăшкăрсах ячĕ Аверкеев. — Ман ывăл ăçтиçуксемпе çыхланмасть. Чухламалла кăшт: юланпа çуран пĕр тан мар.

Арăмĕ упăшкине куç хĕсрĕ. Ку ĕнтĕ йĕрке хуралçисемпе ăшшăнрах сăмахламаллине пĕлтерчĕ. Хăй вара йăл-йăл кулкаласа сăмах тытрĕ:

— Ырă çыннăм, ан ĕненĕр хăвăра анра-сухра вырăнне хуракансене. Чухăн пурăнакансен ĕмĕртен пыракан йăли —

çын туприне хапсăнасси. Паллах, хăй вăрланă вăл, çав ачи. Ку кушакшăн та ăнланмалла. Хăранипе пирĕн ывăл çине йăвантарать. Нивушлĕ пĕртен-пĕр чĕппĕмĕре эпир мотоцикл парнелейменпĕр-и! Пепки тата çавнашкал япалапа пĕртте кăсăкланмасть, мотоциклне чуптарма та пĕлмест.

Ку суя. Альберт мотоциклшăн килте пĕрре мар шав çĕкленĕ. Амăшĕ тем тусан та туянма килĕшмен, укçине хĕрхенсе мар, çапăнса тем шар курса ларасран сехĕрленнипе.

— Ывăлăрпа курнăçмаллах ман, — терĕ милиционер, карттусне хывса çамкине тутăрпа шăлкаланă май.

— Эсĕ ăна кĕтсе илеймĕн. Ăна ĕнер кăна самолетпа ларт-са ятăм. Кукамăш патне Якутие вĕçрĕ, — суйрĕ хĕрарăм. Вăл ачине шанмасть: мотоцикла вăрланă, ахăртнех. Юлашки вăхăтра итлеменнипе тарăхтарать. Милиционер кăмăлне хăйсем майлă çавăрас шутпа илĕртўллĕ калаçу пуçларĕ: — Эпĕ тухтăр. Ху та, мăшăру та пырăр приема, хуть те хăш вăхăтра. Лайăх эмелсем çырса парăп.

— Çын сехметсĕр пурăнмасть,—савăл çапрĕ калаçăва Аверкеев. — Эпир пĕр-пĕрне хўтĕлемелли çынсем.

— Спаççип, — тав турĕ милиционер.

Милиционер çапла мотоцикл пирки уççи-хуппине пĕр нимĕн пĕлмесĕрех тухса кайрĕ.

Иккĕшех юлсан, Аверкеев сăмах тапратрĕ:

— Ывăл турта хушшинчен тăварăнса тухмасть-и пирĕн, э?

— Мĕн, эсĕ ывăла сутасшăн-и, мотоцикла вăл вăрланă теесшĕн-и? — шăмарчĕ арăмĕ.

— Пĕртте иккĕленместĕп. Ытлашши алхасать. Ман тивĕç, паллах, ăна хўтĕлесси.

— И-и, ара, ашкăнин! Йăваш çынтан кушак та кулать. Пирĕн Альберта çутта кăлармалла. Вăл, санашкал, пуçлăхра лармалли çын пулса ўстĕр. Мăшкăллама та, хăратма та пултартăр.

Тяпуçа суд тумалли кун çитрĕ. Альберт хăйне суда пырса та кăтартмарĕ, иçмасса. Кĕнтелем çук. Тĕрĕссипе илсен, Альберт завод умĕнче тăнă мотоцикл çине ларса айккинелле вĕçтернине пĕр çын курса юлнă — ресторан директорĕ. Вăл сăмах вĕçтерĕ-и! Аверкеев кирлĕ çын: хваттер илесси-мĕн тăвасси унран нумай килет. Чавка чавканăн куçне чавмасть. Ресторан директорĕн икĕ ывăл. Аслине виçĕ пўлĕмлĕ хваттере куçарчĕ. Пушă алăпа пулнă япала мар ку — тыттарма тивнĕ Аверкеева сулмаклăн укçа. Шел-и-мĕн! Пулин! Тар тăкса тунă укçа мар, кĕсъене хăй тĕллĕн юхса кĕни. Ресторанра мул пухма майĕ пысăк. Халăх хăйне мăй таран улталанине нимĕн те сисмест, тўлет апатшăн икĕ хут хакпа. Директорăн кĕçĕнни çитĕнет. Каллех хваттер кирлĕ. Вырнаçтарсан, тĕрĕссине калама та юрать, анчах взятка панăшăн

хăйне те пуçран шăлмаççĕ-çке. Ăçтан тупрăн ун чухлĕ укçа тейĕç. Тытăнĕ вара карусель çаврăнма! Кĕтсех тăр, тĕрме алăкĕ те уçăлĕ. Курман, илтмен — пĕр сăмах. Çӳрет вăл шăлне çыртса, шыв сыпнă пек.

Мотоцикл вăррине, чăн-чăн хурахне, тăрă шыв çине кăлараймарĕç. Арпашăннă çинçе çипе майласси çăмăл ĕçех мар ĕнтĕ. Çитменнине, тата шыравçăсем, ĕç-пуç пуçлăхпа çыхăннине пĕлсен, тăрăшмарĕç те. Мотоцикла Тяпуç сарайĕнче тупнă. Эппин, сарай хуçи Тяпуç айăплă. Тек никам та нимĕнле йĕк шырамĕ. Ĕçĕ те пĕтнĕ. Судра пăхса тухрĕç. Çăл шывĕ пек таса Тяпуçа айăпласа, юсанма тесе ачасен колонине ăсатрĕç. Асламăшĕ юлчĕ тăшмана ылханса та куççулĕ тăкса.

Çапла тӳсеççĕ хăш чух хӳтлĕхсĕррисем çав çуллă пурнăçăн мăнтăрĕсемшĕн.

x x x

...Çӳрет шавлăн Альберт. Умĕнче ун — уçă хапха. Театра, кинона çул хывман вăл. Урам — ун килĕ. Йĕри-тавра кам мĕнле пурăнать — йăлтах пĕлет. Хăравçăсем, хăюсăррисем ун чышкине тутансах тăраççĕ: ара, вăл урам йĕкĕчĕсен йышăнчĕ-çке, çапăç, тӳпелеш — урине тăллама хăяймĕç.

Пĕррехинче урамри йышра «кăтăклă» хыпар сӳтсе яврĕç. Чылайăшĕ кино курнă-мĕн: «Легенда о Нарайяме».

— Эх, хăтланаççĕ хĕрарăмсемпе арçынсем!

— Пурăнаççĕ те вара японецсем!

— Хальхине мар, тахçанхи пурнăçа кăтартнă, — хирĕçлерĕ пĕри.

Ăна çийĕнчех хăр-хар кăшкăрса тăкрĕç.

— Ай, ман хамăн та мĕн тăвас килет!.. — персе ячĕ йышра тахăшĕ.

— Кино ячĕ мĕнле терĕр-ха? — кăсăкланчĕ Альберт. — Эпĕ те кайса курам.

Тепĕр кунне шкул сукмакне манчĕ вăл, кинона чупрĕ. Кинора хайхи чăн ухмаха тухрĕ тейĕн. Кăшкăрашрĕ те ахăрашрĕ. Ăна темле ăнланмалла мар туйăм çулса илчĕ — пĕр вĕçĕм йăшăлтатрĕ, пăркаланчĕ. Ун хăйĕн те пĕр-пĕр хĕр тупса тутанса пăхас килчĕ çав япалана. Киноран тухсан та иртмерĕ çав кăмăл. Шухă шухăш Альберта çăра йывăçлă, çырма-çатраллă пысăк парка илсе çитерчĕ.

Çăткăн кашкăр çывхарнине сисмесĕр шар курчĕ мулкач çури.

Ытла çамрăк-çке-ха хĕрачи, ăна-кăна ăнланмалăх ӳсеймен те...

Килне аран-аран ҫитсе, йӗре-йӗре каласа пачӗ амӑшне хӗрача: «Пӗр тете пусса выртрӗ те тӗс-ҫ тумаллинчен патакпа чышрӗ, чышрӗ... Ах, ыратать-ҫке...»

Пульницара тухтӑрсен тар тӑксах тӑрӑшма тиврӗ хӗрачан суранне юсассишӗн.

Хӗрачана пусмӑрланӑ. Ку судпа айӑпламалли япала. Йӗр ҫине ӳкрӗҫ. Аверкеев сисрӗ, вӑл ывӑлне ку ҫӑрӑнчӑкран туртса кӑлараймӗ. Ним тӑхтаса тӑмасӑр вӑл ҫемйипех (тыт ман хӳрене! тенӗн) хуларан тухса вӗҫтерчӗ.

Вӑл ҫитнӗ хулара ун тӑванӗ пӗр аслӑ вырӑнта-мӗн. Чӑвашра чӑваш ҫук пекех. Аверкеева пуҫлӑх пуканӗ ҫине лартрӗҫ. Хаваспах ӗҫе пуҫӑнчӗ: ара, сисрӗ вӑл кунта та взятка илме май пуррине. Акӑ ӗнтӗ вӗсен пӗр алли — пыл ҫинче, тепри — ҫу ҫинче.

Пурпӗрех пурнӑҫ улшӑнмасӑр тӑмасть, тӑвӑл та килсе ҫапать. Ахаль каламаҫҫӗ-тӗр халӑхра: «Турӑ Микуш пичче мар, вӑл курсах тӑрать, анчах час каламасть кӑна», теҫҫӗ. Шӑпа урлӑ сиксе каҫаймӑн ҫав.

## 12

Куҫран йӗппе чиксен те курӑнмасть темеллех мар-ха, пач тӗттӗмленсех ҫитмен. Ҫапах та ҫуртсенче хӑй ҫутнӑ. Чӳречесенчен ӳкекен ҫутӑ ярӑмӗсем урам урлӑ пир тӑрӑхӗ сарса пӑрахнӑн ярт тӑсӑлса выртнӑ.

Травмотологи пульници шӑплансах ҫитеймен-ха. Сусӑрланнисем нумайӑшӗ палатӑсене пуҫтарӑннӑ темелле. Коридор тӑрӑх ҫӳрекенсем те курӑнкалаҫҫӗ. Ав, пӗри, ури хуҫӑлни, хул айне костыль хӗстернӗ те мелсӗррӗн яра-яра пусать. Тепри, шӑмми хул тӗпӗнчен хуҫӑлни, аллине темле аппарат ҫумне майлаштарса ҫирӗплетни, хӑрах ҫунат ҫеҫ сарнӑ пек, ӑнсӑртран ӑҫта та пулин пырса ҫапӑнасран ӗнтӗ, питӗ асӑрханса утать.

Алӑк уҫӑлса хупӑнчӗ. Пульницана Татьене санитарка килчӗ-мӗн. Ҫӗрлехи смена ун. Дежурнӑй пӳлӗмне кӗчӗ тӳрех. Кунта никам та ҫук. Шурӑ халат тӑхӑнчӗ. Пуҫӗнче те ӗнтӗ шурӑ тутӑр. Унпа пӗрле ӗҫлекен Илона практикантка курӑнмасть. Пӗр-пӗр палатӑра-ши? Хӑнӑхса ҫитрӗ вӑл кунта. Чӑн-чӑн санитарка, тупата. Хура ӗҫрен йӗрӗнмест халӗ. Ку — чи ырри. Тата чирлисене те юрама пӗлет.

Татьене тухтӑр кабинетне кайма тухрӗ. Пыратчӗ хайхи коридорпа, сасартӑк сӗр-р! кулса яни илтӗнчӗ. Кӑн-н хытса тӑчӗ санитарка. Саккӑрмӗш палатӑра шавлаҫҫӗ иккен. Ун алӑкӗ умне пӑрӑнчӗ хӗрарӑм.

«...Христина Акшар, сан вырӑнта пулсан, тортне эпӗ ун пуҫ тӳпине ӳпӗнтереттӗм, ха-ха-ха!» Куна сарӑ вӑрӑм ҫӳҫлӗ

инке койкине йышăннă çамрăк хĕрарăм (ячĕ ун — Санюк) каларĕ. Тата хытăрах ахăрса ячĕç.

Палатăна кĕмесĕр тӳсеймерĕ Татьене.

— И-и-хи, кĕр-кĕр, хаклă тусăм! — кăчăк туртрĕ ăна Христина Акшар. — Мĕнле пурăнатăн?

— Эпĕ чиперех-ха, — таварчĕ санитарка. — Ху тата çаплах утаймастăн-и? — алă пырса тытрĕ ăна вăл.

— Ыран Глеб Львович пакăлчак шăммисене сыпăнтарма лартнă йĕпсене туртса кăларать те, вара киле чупсах каятăп.

— Ун хыççăн эпир те, кăвакал чĕпписем амăшĕ йĕрĕпе карталанса йăраланнăн, киле вĕçтеретпĕр, — сăмах хушрĕ Наçтуç.

— Тем пекехчĕ. Атту йăлăхтартăр пире, —шӳтлерĕ Татьене.

Христина Акшар тумбочки çинче торт хунă курупка. Торчĕ çав тери илемлĕ. Пĕрре пăхса илнипех сĕлеке юхать. Хăмăр шăккалат çийĕнче кĕп-кĕрен чечек — розăсем. Шурă çеçкесем те пур.

Торт касса ваклама Санюка уйăрчĕç. Хаваспах килĕшрĕ çын. Костылĕ çине тайăнса тумбочка умне пырса ларчĕ, аллине çĕçĕ илчĕ те тытăнчĕ ĕçе. Чи пысăк турам — Татьенене. Вăл ăна тивĕçлĕ: ара, кунта юсанакан хĕрарăмсем ун умĕнче пурте парăмра. Кантăк умĕнчи кравать çине вырнаçнă хĕрарăм, сулахай аллине хуçнăскер, чиперех утать. Çавăнпа та вăл торт касăкĕсене палатăрисене пурне те пыра-пыра тыттарчĕ.

— Кучченеç килех тăтăр, эпир çисех тăрар, — тирпейлĕн чăмлама тытăнчĕ Наçтуç. — Ай-ай, кунашкал тутлă торт хам ĕмĕрте тутанса курман!

— Кайăк сĕчĕпе тутăлантарнă, — пĕленçи пулчĕ Санюк. — Кунашкаллисене магазинсенче кăнтăрла çурта çутса шырасан та тупаймăн. Шышкарсем тăранса пурăнакан, милиционерсем хуралласа тăракан лавккара çеç сутаççĕ. Унта пуçлăхсен çемйисене апат-çимĕçе халăх курасран вăрттăн тыттара-тыттара яраççĕ.

— Çавнашкал магазинсем те пур-и тĕнчере? — тĕлĕнчĕ çамрăк хĕр Наçтуç.

— Эпир пĕлменни тем чухлех!

Пурин аллинче те торт. Анчах, çиекенсем, тимсĕр, усал, çăткăн этемсене пула килнĕ ыратупа асапланаканскерсем, такама ятларĕç, такама тарăхрĕç. Çав «такамсем» тĕнчере ырă курса пурăнаççĕ...

Татьене ним шарламасăр тăнлать. Вăл нумайăшне ăнланмасть. Ыйтса пĕлес кăмăл та çĕкленчĕ, уйрăмах торт çинчен. Çак тутлă торта кам пуç тӳпине çатлаттарасшăнччĕ? Мĕнле сăлтава пула? Тата тӳсмелли çынĕ кам-ши? Татьенен

сӑмахӗ чӗлхе вӗҫне те ҫитнӗччӗ, вӗҫертеймерӗ, шӑп ҫак самантра алӑк уҫӑлчӗ те — Илона курӑнчӗ.

— Эсӗ кунта-ҫке, Татьене, — терӗ вӑл. — Сана Глеб Львович чӗнет.

Пуҫӗнчи чалӑшнӑ капрон калпакне юсакаланӑ май Илона кравать ҫинче ларакан сусӑр хӗрарӑмсене куҫӗпе пӑхса ҫаврӑнчӗ. Пурне те ырӑ каҫ сунчӗ те санитаркӑна аллинчен ҫавӑтрӗ. Часах иккӗшӗ те палатӑран тухса ухӑнчӗҫ.

Ҫапла, Татьене ӑнланаймарӗ торт мыскарине.

Ӗҫ-пуҫ акӑ мӗнле пулса иртнӗ.

Христина Акшар пульницана кайма пуҫтарӑннӑччӗ (ун уринчи хуҫӑлнӑ шӑммине тӗрӗс ҫыпҫӑнма чикнӗ йӗпсене кӑларттармалла). Шӑп ҫак вӑхӑтра алӑк уҫма хистесе шӑнкӑрав янӑрарӗ. Тархасшӑн, кӗрӗр. Арҫын иккен. Вӑтам ҫулсенелле ҫитнӗскер. Тӑваткал питлӗ, сарӑрах сӑн-сӑпат. Сӑмси ҫинче — куҫлӑх. Аллинче темле ҫыхӑ. Ҫук, ҫыхӑ мар — хӑюпа ҫыхнӑ курупка. Паллах, унта — торт.

— Эпӗ — Аверкеев, урӑра амантнӑ ҫамрӑкӑн ашшӗ, — паллаштарчӗ килнӗ этем хӑйӗнпе. — Сирӗн ятӑра пӗлетӗп.

Килнӗ ҫын кухньӑналла утрӗ. Курупкине тумбочка ҫине хучӗ. Пӳлӗме кӗрсен вӑл, кил хуҫи сӗннипе, журнал сӗтелӗ ҫумӗнчи пукан ҫине ларчӗ. Хаҫат-журнал илӗртмерӗ ӑна. Христина сывлӑхӗпе те кӑсӑкланмасть пачах. Мӗн мурла ҫын ку? Тытӑнчӗваскасах тӳрре тухма. Унӑн ырӑ ҫемье иккен. Альберт ывӑлӗ шутсӑр йӑваш кӑмӑллӑ. Ӗҫре хӑйне питӗ хаклаҫҫӗ, хисеплеҫҫӗ, тав туса ҫитерейместӗ. Ара, хӑшпӗрисем пек, пулӑшу ыйтма пыракансенчен взятка илмен, илмест те.

— Куна ӗненместӗп, — пат татса хучӗ Христина Акшар. — Сирӗн учрежденире ӗҫлекенсем взятка илни ҫинчен хаҫатра та ҫырчӗҫ-ҫке.

— Пӗр хӗрарӑм кӑна ҫапла аташнӑччӗ, — терӗ Аверкеев нар пек хӗрелсе.

— Эппин, ачӑра ҫав тери хаклӑ тӑракан машшин туянса пама мӗнле мехел ҫитертӗр? Ывӑлӑр ҫирӗмрен иртнӗ пулин те ӗҫ умне тӑрайман-ха сирӗн.

— Машшини ывӑлӑн мар, хамӑн. Ӑна эпӗ хам ӗҫ укҫине перекетлесе туяннӑ.

— Пӗччен ӗҫлесе-и?

Тек тавлашмарӗ хӑна. Аверкеевӑн пичӗ темшӗн сасартӑк ӳпне ҫӑпан шӑтнӑн талӑрчӗ, талккишипех хӗп-хӗрлӗ, кӑн-кӑвак сӑрӑ. Куҫӗ хӗсӗнчӗ, унтан куҫ лупашкинчен тухса ӳкесле чарӑлчӗ. Вара шӑл витӗр тухрӗ сӑмахӗ сӑрхӑнса:

— Каҫарӑр. Альберт ывӑлӑм сире юри мар, ӑнсӑртран машшин сӑмсипе пырса ҫапса ӳкернӗ. Каҫарттарма хаклӑ тӑракан торт илсе килтӗм.

Кил хуҫи ӑшра тулхӑрсах кайрӗ. Торт тенине кӗтмен хӑна-

на ним тăхтамасăр хăйпе пĕрле илсе кайма хушрĕ. Ҫынни ĕнтĕ те шикленсе ÿкрĕ, пуҫран ҫапнăн хăвăрт тухса шурĕ хваттертен. Тортсăрах.

Христина Акшар вара курупкана пульницана илсе кайрĕ. Санюк, тарăхнипе тортпа Аверкеев пуҫ тÿпинчен ҫатлаттармаллаччĕ, тет. Юрĕ, паха ҫимĕҫе ма сая ямалла? Саккăрмĕш палатăри сусăр хĕрарăмсем торта кăмăлласах айлантарчĕҫ.

13

Настуҫ уринчен Илизаров аппаратне илчĕҫ. Утаять-ши ĕнтĕ? Тухтăрсем, иккĕленмеҫҫĕ, ĕненеҫҫĕ, шанаҫҫĕ пулин те, саккăрмĕш палатăрисемпе пĕрле, хĕр хăй урипе ярса пусасса кĕтеҫҫĕ чунтан.

Ҫыпҫăннă-ши тĕпреннĕ шăмăсем пĕр-пĕринпе? Ахаль куҫпа кураймăн ÿт айĕнче. Рентген кабинетне илсе кайрĕҫ ăна. Унтан массажистка-медсестра тăрăшсах массаж тума тытăнчĕ: ара, ура шăнăрĕсем темиҫе уйăх утманнипе ҫемҫелсе чÿпĕкленнĕ.

Акă Настуҫ, кравать ҫинче лараканскер, хул айĕсене костыль хĕстерчĕ. Палата сестри пилĕкĕнчен тытса ҫĕкленме пулăшрĕ ăна. Глеб Львович тухтăр та ҫывăхрах тăрать — сыхăра.

Урайне пусрĕ урисемпе Настуҫ.

— Хурах! — кăшкăрса ячĕ сасартăк вăл. — Ура тупанне пин-пин йĕп тăрăнчĕ. Ура хырăмĕсене вĕлтрен чĕпелет!

— Ан хăра: иртет, иртет вăл, — йăпатать хĕре тухтăр.

Темиҫе ярса пусрĕ пусрех Настуҫ. Вара ăна чарчĕҫ, каллех кровать ҫине лартрĕҫ. Ҫакнашкал, кун каҫа татах, татах ура ҫине тăма, утма хушрĕ тухтăр.

Илонан вĕтеленсе ҫÿресси пĕртте чакман. Унăн та Настуҫ чупнине курас килет. Тĕрĕссипе илсен, ку питех касмас-ха ăна. Пуринчен ытла ăна Настуҫ урисене мĕнле хуҫнине тĕптĕрĕс пĕлес килни канăҫ памасть. Ҫитменнине тата пÿрнинчен венчет ҫĕррине пачах кăлармасть-ҫке. Мĕншĕн? Татьене сăмахне тĕрлĕрен ҫаптарать, ăна ăнланса пĕтерме ҫук. Часчасах вăл: «Настуҫран хăйĕнчен ыйт!» — тесе тавăрать. Настуҫĕ ҫывăха ямасть, шÿтлет ҫеҫ. Халĕ Настуҫ ялан Христина Акшар ҫыравҫăпа пăшăлтатать. Путех ăна тăхҫаласа парать пулĕ.

«Хĕрсем венчет ҫĕрри тăхăнмаҫҫĕ, — шухăшлать Илона. — Пурах-ши ун упăшки?»

Чимĕр-ха, Настуҫăн пурнăҫ тĕрки-ҫăмхи сÿтĕлнĕччĕ-ҫке, кăрлач уйăхĕнче чарăнса тăнăччĕ. Ҫав тăрăх мĕн кăтартнăччĕ-ха? Ăхă-ă, Настуҫ хăйĕн тантăшĕпе Суссанпа кинона кайнă чух ҫар училищин курсанчĕпе паллашрĕ. Каччăн ячĕ

Питахир. Çак самантран вара пурнăç тĕрки сӳтĕлме пăрахрĕ те çĕнĕрен тĕркеленме тытăннăччĕ. Суссан Питахире хăй майлă çавăрса качча тухасшăн. Ăна театра чĕнчĕ, билет та хăех туянчĕ.

Наçтуç стройкăра ĕçлет. Вăл — маляр. Каçсерен вĕренме çӳрет художество училищине. Вырсарникун хваттер илнĕ Анна Трофимовна патне (вăл чĕннипе) çĕнĕ пӳрт уявне кайнăччĕ. Алăк урати урлă каçнă-каçман вăл кунта Питахире асăрхарĕ. Пăх та кур — кĕтмен тĕлпулу!

Илсе килнĕ кучченеçе Наçтуç кил хуçи хĕрарăмне тыттарчĕ.

— Ма чăрмантăн! — ахлатрĕ Анна Трофимовна, тортпа шалалла иртрĕ. Çула май Питахире куç хĕсрĕ. «Çак хĕр ĕнтĕ вăл», тенине пĕлтерчĕ ку. Çак вăрттăнлăха иккĕшĕ кăна пĕлеççĕ вĕсем.

— Хывăнтарма ирĕк парăр, — çывхарчĕ Питахир хĕр патне.

Ун çине Наçтуç алчăравлă пăхрĕ, сăмах чĕнмерĕ.

Тĕпелелле иртерчĕç пикене.

Пырса тăчĕ вăл хăнасем умне чăн-чăн пирĕшти. Çук, ун çийĕнче хăй тин çеç туяннă çĕнĕ модăллă сарă пурçăн платье мар (ăна Суссан тăхăнчĕ-тĕр), мĕн пурĕ те симĕс юбка, шурă свитер. Вăрăм çӳçĕн пайăркисем хулпуççинех перĕннĕ, çутă шăрçаллă хăлха унки питне-сăнне илемлетет.

— Анна Трофимовна, сирĕн йăмăкăр çук пек астăватăп, мĕнле шурăппа пулчĕ ку? — кăсăкланчĕ Наçтуç пирки тетесенчен пĕри, çекĕл сăмсалли.

— Тупрăм, — йăл-йăл кулкаларĕ хавассăн кил хуçи хĕрарăмĕ аллипе авăсса.

— Сухатнăччĕ-им? — тĕпчеме пăрахаймарĕ леш.

— Çухатман, ăраскалăм парнелерĕ. Паллашăр: Наçтуç ятлă вăл. Унăн алли ылтăн. Паçăр эсир хваттер тăрăх «экскурсире» çӳрерĕр. Кăмăлăрсене çĕклентертĕр, тĕлĕнтĕр илемлĕ пӳлĕмсем курса. Çак хĕр ĕçĕ ĕнтĕ вăл.

— Апав! Чăн-чăн художник!
— Пултаран!

— Маттур! — мухтарĕç Наçтуçа пĕри те тепри.

Пурне те сĕтел хушшине чĕнчĕ Анна Трофимовна. Питахире Наçтуçпа юнашар лартрĕç. Капла аван та. Хĕр вăтаннипе ним те астивсе пăхаймĕччĕ-и, тен. Халĕ йăлтах çумри каччă тиет хĕр турилкки çине тутлă кукăль-пӳремеч.

Ĕçсе-çисе самаях вăхăт иртрĕ. Арçынсем хĕрчĕç. Шавлаççĕ. Анна Трофимовна мăшăрĕ хавaслă çын иккен. Сăйланă май шӳтлесе култарать хăнисене. Ташлас! терĕ пĕри. Тархасшăн — музыка!

Чуна килентерекен чăваш кĕвви шăранать — «Линькка-линькка».

«...Йăкăш-йăкăш шукалама юман хăма кирлĕ».

Тăнлатăн, тăнлатăн та — шухăш чарăнусăр вĕçет таçталла. Чи малтан кам чĕлхинчен вĕçерĕннĕ-ши çак юрă? Ун кĕвви майăн кам-ши вĕттĕн-вĕттĕн пусса йăкăртатнă? Тем тесен те ку юрă-кĕвĕ хĕр чунĕнче çуралнă. Ытармалла мар хитре пике ĕнтĕ. Куçĕ сеп-сенкер, çӳçĕ — йĕтĕн çурăмĕ, пĕвĕ — чăрăш вулли. Пуçĕнче — тухъя, çийĕнче — икĕ аркăллă улача кĕпе. Паллах, кăмăлĕ хаваслă, сасси — шăнкăрав. Ячĕ мĕнле-ши? Темшĕн ăна Хĕвелпи тесе чĕннĕ пек туйăнать. Пулĕ, пулĕ. Çав пике тантăшĕсемпе вăйă картине тăрсан уçă сассипе юрă пуçланă-тăр, вăйăç умĕнче ташша илтернĕ-тĕр. Çамрăксен çĕнĕ юрри, вăйă-кулли пĕтĕм яла савăнтарнă ĕнтĕ:

«...Чуп-чуп чуптума чипер ача кирлĕ».

Кунта, çĕнĕ çурт ĕçкинче, кил хуçи, линькка-линькка ташă кĕввипе çунатланнăскер, хĕр хăна умне пырса аллине тăсса пуç тайрĕ. Ăçтан танланса тăрăн? Наçтуç сынна хисеплеме пĕлет. Йĕркеллĕ вăл. Тухрĕ ташша. Çу-у-ук, ку кĕвĕ çынна папуассен ретне тăма, асар-писер сиккелесе хуçкаланма ирĕк памасть.

Пурте алă çупаççĕ. Урай варринче — икĕ ташăçă, çӳреççĕ каллĕ-маллĕ... Лăпкă кӳлĕре мăнаçлăн ишекен мăшăр акăша аса илтереççĕ.

Кил хуçипе хăна хĕр пуçласа панă ташă вăй илчĕ. Акă, вальс пуçланчĕ. Ку хутĕнче Наçтуçа хăйпе ташлама Питахир чĕнсе кăларчĕ. Çаврăнаççĕ пăлтăр-палтăр. Майлă самантра Питахир сăмах вĕçертрĕ:

— Наçтуç, ыран хăш вăхăтра ĕçрен тухан?

— Тăваттăра.

— Пырам-и сан пата?

— Май çук, — хирĕçлерĕ Наçтуç. — Килте пулмастăп. Вĕренме каятăп художество училищине.

Курсантăн театра кайма вăхăт çитсе иртрĕ, вăл пур çаплах Наçтуçпа тапăртатать.

Аранах вĕçленчĕ ташă.

Арçынсем хĕл сиввинчен хăрамасăр балкона тухрĕç чĕлĕм туртма. Хĕрарăмсем шалти пӳлĕме пухăнчĕç. Вĕсен хăйсен калаçăвĕ, мĕнле пĕçермелле тутлă çимĕç: печени, торт татах тем те пĕр.

Залра никамах та юлман. Çак самантпа усă курса Наçтуç киле кайма авăрланчĕ. Кĕрĕкне тăхăнма пикеннине Анна Трофимовна сисрĕ, вăл хыпаланса пычĕ вешалка патне. Тытăнчĕ ӳкĕтлеме. Татах сăйланмалла имĕш. Сăлтавсем тупрĕ хĕр васкама. Тем чухлĕ тилмĕрсен те кил хуçи хĕрарăмĕ хал çитерейменĕ чарма пикене. Ирĕксĕрех вара алне пачĕ, килсе çӳреме тархасларĕ.

 Уйрăлчĕç. Коридор картлашки тăрăх чупсах анчĕ Наçтус

Картишӗнче лампӑсем ҫунмаҫҫӗ-мӗн. Юр шурри парӑнтараймасть тӗттӗме. Хура каҫ чуна сӳлеттерет. Яриех уҫӑ хапха патне ҫитме ӗлкӗрнӗччӗ Наҫтуҫ, сасартӑк ун сулахай аллинчен тахӑш кап ярса тытрӗ.

— Ай! — шартах сикрӗ Наҫтуҫ. Ҫумӗнчи ҫынна ялт ҫаврӑнса пӑхрӗ. Палласа илчӗ Питахир-мӗн. — Аю-ях, сехӗрлентертен.

— Каҫар, хӑратас теменччӗ, — каччӑн сасси йӑвашшӑн тухрӗ. — Наҫтуҫ, эсӗ куҫран сисӗнчӗксӗр ҫухалма ӑста иккен. Тепӗр тесен, тӗрӗс тунӑ. Паҫӑрах сана урама чӗнес шухӑшӑм пурччӗ.

Утрӗҫ такӑр тротуар тӑрӑх. Хӑш тӗле ҫитсен каччӑ унпа сывпуллашать-ши? Ун паян Суссанпа театрта лармалла-ҫке. Наҫтуҫ ҫакна пӗлмӗше хывврӗ. Кирек те мӗн хӑтланччӑр, хушша-хуппа кӗни сӗмсӗрле.

Ҫумра ҫар тумӗ тӑхӑннӑ каччӑ. Урасем харӑс-харӑс пусаҫҫӗ. Наҫтуҫименет. Хӑюлӑх ҫукшӑн тепӗр чух кулянать те вӑл. Чухламасть яшпа юнашар утнӑ чух мӗн ҫинчен сӑмах вакламаллине, ҫитменнине, вӑл чуна килӗшет пулсан. Ӑшри туйӑм та юмахламалли тӗвӗ тупса памасть.

Питахир та тӳрех хутӑрлама сӑмах пуҫламӑшне тупаймарӗ. Пӗрремӗш хут тӗл пулнӑранпа ҫак хӗр ун пуҫӗнчен самантлӑха та тухман. Суссан ун чӗрине кӗпер хывма питӗ тӑрӑшрӗ, карлӑкне илемлетесшӗн шырарӗ кӗрен чечек. Анчах каччӑн кӑмӑл алӑкӗ уҫӑлмарӗ. Наҫтуҫпа тӗл пулман-тӑк, каятчех-ши вӑл театра? Темӗн. Йывӑр-ҫке питех те тӳсме, чунра урӑх хӗр пурӑннӑ чух сан хулӑнтан тепри ҫакӑнса пырсан. Халӗ ӑраскал хӑй пулӑшрӗ темелле ӗмӗтри хӗрпе пӗрле утма. Тен, ҫак минутра Наҫтуҫа йӑлтах чуна уҫса памалла? Малалла мӗн калас тени ӗнентерӳллӗ тухтӑр тесех сӑмах тапратрӗ-ха, анчах темле кӑнттамла килсе тухрӗ:

— Наҫтуҫ, мӗнле пурӑнан?

— Хӗр ӗмӗрӗ ыранпа паян хушшинче иртет, теҫҫӗ.

— Пур-и сан савни?

— Ку — хӗр вӑрттӑнлӑхӗ.

— Эпӗ сана юратрӑм, чи пуҫласа курсанах.

Наҫтуҫ шалт тӗлӗнчӗ. Тӳрех ҫапла палканӑшӑн кӳренчӗ те. Тен, ку каччӑ кашни тӗлпулан хӗрӗн хӑймипе киленме хӑнахнӑ?..

— Мӗнле-ха апла? Эсӗ Суссана качча илме пулнӑ вӗт-ха.

— Суссана качча илме? — тӗлӗнчӗ — хӑй черечӗпе — курсант. — Вӑл хӗр мана пачах килӗшмест.

— Кӑмӑл туртман хӗрпе театра кайма килӗшмеҫҫӗ пуль...

— Хакла: эпӗ халь санпа-ҫке. Ытти хӗрсем темпӗр аташнӑшӑн мана ан айӑпла. Эпӗ сана юрататӑп. Анна аппа Трофимовна (вӑл атте йӑмӑкӗ) сана чунтан килӗштернӗ. «Питахир.

лайăх хĕр тупса паратăп», тесе йăнкăртатрĕ санпа паллашнăранпах. Паян эсĕ вĕсем патне пырса кĕтĕн те, «Акă хайхи хĕр!» тесе пăшăлтатрĕ хăлхаран. Ăшăмра култăм: ара, сана паллатăп-иç. Эсĕ хăнаран тухса кайнине те Анна аппа систерчĕ. Эпĕ сан сăмахна илтесшĕн.

Наçтуç ни апла, ни капла чĕнмест — шăл шурри те кăтартмасть. Утать вăл чĕмсĕррĕн каччăпа юнашар. Чунра — савăнăç. Унта хĕвел, унта сар çу. Анчах хĕрĕн хаваслă сăнпитне каç чаршавĕ хупланă. Ахăртнех, чее пулĕ вăл. Тем тесен те, каччă асаплантарасшăн кăшт. Куçĕсем ăшшăн йăлкăшнине курнă пулсан-и, пĕр сăмахсăр ĕненĕччĕ йĕкĕт хĕр хăйне чунтан юратнине.

Умра юр тултарнă ăшăх çырма. Ун урлă каçмалла. Наçтуç сиссе те юлаймарĕ, ăна Питахир ялт çĕклесе илчĕ.

— Ай-ай! Ўкерен! — кăшкăранçи турĕ хĕр. Хăй йĕкĕте мăйĕнчен хыттăн ыталарĕ.

— Ан хăра, ўкерместĕп, — терĕ Питахир. — Сана ĕмĕр тăршшĕпех çапла çĕклесе çўрĕп.

— Ывăнмăн та-и?

— Юратнă çын вăл питĕ-питĕ çăмăл, хур мамăкĕ.

Ытла ырă-çке каччă аллинче. Халиччен Наçтуçа никам та çапла çĕклемен. Ку çырма урлă час-часах чупса каçма тивнĕ. Васканипе хашкана ернĕ.

Ĕнтĕ общежити çывăхрах. Уйрăлмалла. Кая юлсан кĕртмесçĕ. Питахир ăнланать. Училищĕри пурнăç хăйĕн те çавнашкал. Наçтуçа вăрахчен тытса тăма юрамасть.

— Ыранччен, эппин, — хĕр аллине тытрĕ Питахир.

— Сывă пул! — Наçтуç аллине каччă ывăçĕнчен туртса кăларчĕ. Вара чупрĕ çўлелле картлашка тăрăх.

Питахир пĕр вырăнта хытса тăчĕ ури тымар янăн. Куç илмесĕр пăхрĕ хĕр алăкран кĕрсе çухаличченех.

Пĕрле ирттернĕ каç пĕр минута çеç тăсăлнă пек туйăнчĕ вĕсене. Чĕрисем çумне пыл хĕвĕнчĕ, тата иккĕшне те тĕпсĕр шухăш кўллине ывăтрĕ. Пурнăçăн хăш кимми çине ларма тиве-ши?

Юратнисем пĕр-пĕринпе тĕл пулнине вăхăт килĕштермест-ши вара? Ара, çывхарать-çке Питахирĕн Шупашкар хулинчен тухса каяс самант, мĕн пурĕ те виçĕ кун кăна юлчĕ. Унччен чи кирлине туса ĕлкĕрмелле.

## 14

Кăнтăр апачĕ хыççăн Суссан кантăк умне тăчĕ хурала. Амăшне вăл ир-ирех асăрхаттарса хунă:

— Паян хайхи летчик, санăн кĕрў пуласси, килет. Хатĕрле

тутлă апат. Тата телле пек ан çӳре, тăхăн леш пурçăн халатна.

— Пӳремеч пур. Çĕркаçах пĕçертĕм. Халĕ, тен, хуран кукли тавас?

— Хăвăн ирĕкӳ. Анчах тутлă пултăр, чĕлхене çăтса ямалли! — мăнаçланчĕ хĕрĕ. Унтан вăл кантăк умне кайса тăчĕ каллех. Урамалла пăхать шăтарасла. Мĕншĕн иртерех килмест ку Питахир?..

Кун каç енне сулăнсан, тӳсеймерĕ Суссан, хăпăл-хапăл хура тир кĕрĕкне тăхăнчĕ те вĕçтерчĕ каччă патне.

Тарăхмалла, темĕн чухлĕ шăнкăравласан та хваттер алăкне уçмарĕç. Киле таврăнсан, Наçтуçăн сарă пурçăн кĕпине тăхăнчĕ те Суссан пĕчченех тухса чупрĕ театра. Килмерĕ Питахир кунта та. Чунĕ тӳсмелле мар тулашать хĕрĕн. Сцена çине пăхсан та, тăна кĕмерĕ ним те. Антракт. Залран тухса çӳрерĕ уткаласа. Пĕри çыпăçрĕ ун çумне. Киле пĕрле кайма сĕнчĕ. Çамрăкках мар çынни. Арăмĕ çук-тăр, унсăрăн театра мĕн-ма пĕччен килĕ? Хĕрĕккĕрехххи палăрать. Тепĕр тесен, кам халĕ эрех ĕçмест? Çапах та килне пĕчченех таврăнчĕ Суссан. Питахир асне килчĕ те кăмăлĕ пăсăлчĕ. Театрта çыпăçнă арçынна ăсаттарманшăн кулянчĕ хăш та хăш сывласа.

Икĕ кун вутра çуннăн иртterчĕ Суссан. Ним тума аптранă енне вăл, акă, троллейбуса кĕрсе ларчĕ. Çын сахал. Часах вăрман хĕррине çитрĕ троллейбус. Ку юлашки чарăну. Тухрĕ Суссан троллейбусран. Аякрах та мар тăхăр хутлă çурт ларать, тин çеç тăрланăскер. Шалта Наçтуç ĕçлет. Ăна шыраса тупасшăн Суссан. Анчах чăрманма тивмерĕ ăна. Курма ĕмĕтленнĕ юлташĕ хирĕç киле парать. Ихĕлтеткелесе ыталанчĕç. Ку ĕнтĕ пĕр-пĕрне саламлани пулчĕ. Вара малалла утрĕç.

— Итле-ха, Наçтуç, ман упăшка çухалчĕ, темле асамçă хăй арчине тытса хупрĕ пуль, — шӳтлĕ-мĕнлĕ пакăлтатать Суссан. — Эй, пăрăç хутаççи! Пĕлетĕп-ха...

— Альберт çухалчĕ-и? — анланмана хыврe Наçтуç.

— Альберта тахçанах маннă эпĕ.

— Кам пирки пăшăрханатăн, эппин?

— Питахир таçта мурта çӳрет. Анчах чухлатăп пек-ха, — тути йӳçенкĕллĕн сарăлчĕ ирĕксĕр кулма пикеннĕ Суссанăн. — Туя хатĕрленет пулĕ-ха пĕр-пĕччен. Парнесем илсе тултарчĕ-тĕр ман валли. Пулас арăмне хĕрхенет мар-и.

Наçтуç юлташне тĕрĕссине пĕлтерме хăяймарĕ. Çĕркаç Питахир ăна илме художество училищине пычĕ. Хĕл сиввине уямасăр çӳрерĕç урам тăрăх пуплесе. Наçтуç хăй юратăвне пытараймарĕ. Вара вĕсем ĕмĕре пĕрле иртterме тупа турĕç.

Суссан юлташĕнчен юлмарĕ, общежитие те кĕчĕ.

Çăвăнкаланă хыççăн сĕтел хушшине ларчĕç чей ĕçме. Сасартăк алăка шаккарĕ такам.

— Питĕрмен! — сас пачĕ Наçтуç.

Пӳлĕме Питахир кĕрсе тăчĕ.

— Ай, эсĕ-и, савниçĕм! — кăшкăрса ячĕ Суссан. Çиçĕмле хăвăртлăхпа ыткăнчĕ ун патне. Питахире мăйĕнчен ыталарĕ, чуптурĕ. — Чĕрем çурăлса тухатчĕ. Чирлемерĕн пулĕ те?

— Чим, Суссан, — хăй çумĕнчен сирчĕ ăна каччă. — Эсĕ кунта пурри питĕ лайăх. Эпĕ сана мар, ăна юрататăп. — пуçне сулчĕ вăл Наçтуç еннелле. Çулла килсен çырăнатпăр. Ăна эпĕ ĕçлеме янă çĕре илсе каятăп.

Питахир самант Наçтуçăн сылтăм аллине ярса тытрĕ те ятсăр пӳрнине кĕсйинчен кăларнă ылтăн çĕрĕ тăхăнтартрĕ.

— Эттере! — кăшкăрса ячĕ Суссан. — Ах, намăссăр Наçтуç! Эсĕ Питахир айĕнче пулма та ĕлкĕртĕн-и? Сарăхатăн, эппин, çар каччи аллинче!

— Мĕн кирлĕ мара пакăлтататăн эсĕ, Суссан! — чунтан кӳренчĕ Наçтуç юлташне. — Хăвах илтрĕн-иç: эпир Питахирпе çырăнман. Ĕлкĕреймерĕмĕр. Вăл ыран Ленинграда вĕçет. Качча кайиччен хĕр чысне çухатассăм çук.

Суссанăн сăнĕ-пичĕ темле ăнланмалла мар кĕтесленсе тĕссĕрленчĕ, вупăр карчăк пек курăнса кайрĕ хĕр. Унччен те пулмарĕ, ухмаха ернĕн эхĕлтетсе илчĕ. Кулли суя, янăрамарĕ чăнкăр-чăнкăр. Тухса кайма алăк хăлăпне тытнăскер, юрă ĕнерлеме тытăнчĕ Суссан: «Ман савнине каякан сарра кайтăр сакăр çул, тăрайми выртттăр тăхăр çул...»

Юрă сăмахĕсене ни Наçтуç, ни Питахир тимлемерĕ. Вĕсен Суссан шухăшĕ мар, ӳлĕмхи пирки калаçса татăлмаллисем нумай. Ма тытса тăрас Суссана, кайтăрин! Кунта виççĕмĕш çын ытлашши.

## 15

Наçтуçăн каялла чакнă кунçул тĕрки тĕркеленет те тĕркеленет паянхи тапхăрах çывхарать. Айтуру-ах, ку тăрăхра халиччен курман чи хăрушă инкек: çĕр çурăлни, çĕр хушăкне ӳкни е аçа-çиçĕмлĕ пушарта çунни, кĕл пулса тĕнче тăрăх вĕçни... Тата мĕнпе танлаштармалла-ши? Вулакан хăй хаклатар ентĕ.

...Ăсатса ячĕ Наçтуç хăйĕн варлине. Çăмăллăн çӳрет вăл. Тĕнчере юратнă çын пурри çапла савăнтарать çынна. Ара, вăл — сурасçнă хĕр-çке. Ĕçлет, вĕренет, Питахиртен çыру кĕтет. Çапах та вăхăт тимĕр шапа уттипе утать. Ку кăмăла хуçать те, пурпĕрех катăлать шутлă кун. Кĕтсе илетех вăл хăйĕн мăшăрĕ пулмалли паттăра. Ăна чарма нимле усал та сиксе ӳкме хăяймĕ! Килĕ каччă. Хут уйăрттарĕç. Туйне ăçта ирттерĕç? Куç курĕ унта. Вара вăл Питахирпе пĕрле ăна ĕç-

леме янӑ Ҫар чаҫне кайӗ. Тен, ҫав Ҫар чаҫӗ пысӑк хулара. Апла пулсан, унта художество училищи пурах. Наҫтуҫ вӗренӗ кӑна. Кайран, вӗренсе тухсан, ӗҫлӗ вара ҫынсен савӑнӑҫӗшен.

Акӑ, юр ирӗлсе пӗтрӗ, ҫутҫанталӑк вӑранчӗ. Капӑрланчӗ симӗс тумпа йывӑҫ-курӑк. Ҫӗр пичӗ пӗркенчӗ чечеклӗ кавирпе.

Ҫуркуннене пурте кӗтеҫҫӗ. Унпа пӗрле уяв та ҫитет — Майӑн пӗрремӗшӗ.

Суссан хӑнана чӗнчӗ Наҫтуҫа.

— Аттепе анне Канаш хулине тӑвансем патне хӑнана каяҫҫӗ, — терӗ вӑл. — Хӗр улахӗ тӑватпӑр. Каччӑ тени санӑн та, манӑн та ҫук. Питахир, паллах, Ленинград пикисемпе ҫӳрет. Хальхи каччӑсене мӗн шанмалли пур!

Наҫтуҫ чӗрре кӗресшӗнччӗ, анчах шӑлне ҫыртрӗ. Мӗн усси, Суссана ҫӗнтерме хӗн.

Демонстраци хыҫҫӑн Наҫтуҫ хӗр тантӑшӗсемпе Атӑл хӗррине анчӗ. Халӗ Атӑл ҫынсене пӑр кайнипе савӑнтарма пӑрахнӑ. Пурпӗрех илӗртет ҫынна. Леш енчи хыр вӑрманӗ кӑнкӑвак. Юханшыв урлӑ карлать чуна тыткӑнлакан тутлӑ сывлӑш.

Каҫ кӳлӗм тин ҫитрӗ Наҫтуҫ Суссан патне.

— Ну-и! Пӑрӑҫ хутаҫҫи! Ӑҫта ҫӳретӗн эсӗ паян?! — ӳпкелешсе тӑвать Суссан. — Сӑй апачӗпе сӗтел ури аванчӗ-тӗр! Ирт хавартрах.

Суссан тӗрӗсех каларӗ-мӗн. Сӗтел ҫинче тем те пур. Сыпмалли те темиҫе кӗленче. Унччен те пулмарӗ, шалти пӳлӗмрен Альберт Аверкеев йӑпшӑнса тухрӗ. Ҫуллӑ куҫӗсене вылятат хаи.

Сӗтел хушшине ларчӗҫ. Суссан черккесене тултарчӗ.

— Эпӗ ӗҫместӗп, — пуҫне пӑркаларӗ Наҫтуҫ.

Иккӗн тан хӗтӗртеҫҫӗ хӑна хӗрне. Тӗлӗнтермӗш! Ҫӑварӗнчен тытса ярасшӑн тытӑнчӗҫ кӗрешме. Ӗҫ тухмарӗ. Вара Альбертпа Суссан, кӳреннӗскерсем, пӗр-пӗрин черккисене шаккакаларӗҫ те янклаттарчӗҫ эрехе. Альбертӑн, унченех сыпнӑскерӗн, пичӗ ҫине тӗмпӗл-тӗмпӗл хӗрлӗ тапса тухрӗ. Суссан музыка кӗрлеттерме пуҫларӗ.

— Мӗн-ма ҫитеймерӗҫ-ха манӑн ӗҫри хӗрсем? Эсир ларӑрха, эпӗ хирӗҫ кайса пӑхам, — тухса кайрӗ Суссан.

— Чӗнсе кил хӑвӑртрах хӗрсене! — кӑшкӑрса юлчӗ Альберт. — Кичем. Наҫтуҫ ав курнӑҫланать, пирӗнпе ӗҫмест.

Альберт хваттер алӑкне питӗрчӗ шӑкӑр-шакӑр. Хӑй пиҫнӗ рак пек хӗрлӗ. Тепӗр черкке тултарса ӗҫрӗ эрех.

— Ну-с, улах чух атя выляса илер, — терӗ вӑл Наҫтуҫ ҫине кушак шӑши ҫине пӑхнӑн пӑхса.

— Мӗ-ӗн? — тарӑхса кайрӗ Наҫтуҫ ҫакна илтсен.

— Тăр! Атя спальнине. Санпа вылямасан, паян чун канмастех ман, — ахăлтатать йĕксĕк.

Туртса кăларчĕ вăл Настуçа сĕтел хушшинчен. Тăлпалантарать кăна, çывăрмалли пÿлĕме сĕтĕрсе кĕчĕ, çиййĕнчи тумтирне парахре.

— Хывăн! — ĕрлет Альберт, хĕр кофтине чăр-чар çурса.

— Сана парăнас-тăк, тĕнчере пурăнас мар! — тапаçланать Наçтуç. Хушăран вăл ăна урипе тапать вирлĕнех. — Сирĕл, çĕлен! Унсăрăн пăвса вĕлереп!

— Ха-ха-ха!! — ахăлтатать сĕмсĕр. — Сан пеккисене эпĕ вуншарăшне хам ая пĕтĕрсе чикнĕ. Кайран хăпма пĕлмеççĕ, кашни кĕтесре сыхласа ăнтан яраççĕ мурсем.

Çаплах чарăнмасть Альберт чăрсăрланма. Чăтма çук тулăксăрланать. Наçтуçăн юбкине чĕрсе антарчĕ чăр-чар, татăкĕсене алăк патнелле ывăтрĕ.

— Пурпĕрех çарапаккалантаратăп! — ĕрлешет хăямат. — Наçтуçа çĕклерĕ те çавăрса çапрĕ вырăн çине, хăй лÿпперĕн йăванчĕ ун çине.

Çак самантра Наçтуç тепле майпа Альбертăн сăмсине шатăрт çыртрĕ, кĕçех хăсса ямарĕ, чĕрнисемпе ун питне чăрмаларĕ. Куçне чавмарĕ-ши? Унсăрăн урине капкăн çапса хĕстернĕ арăслан пек урăм-сурăм кăшкăрса ямĕччĕ урнă йĕксĕк. Пĕтĕм çурт чĕтренчĕ, ахăр, ун тискер сассипе. Юн юхать. Те сăмси татăлчĕ, те куçĕ шăтрĕ...

Наçтуçа пăвакан хĕскĕч йăшăл-л пушанчĕ. Çак самантра курах кайрĕ хĕр: балкон алăкĕ уçă! Пĕтĕм вăйран тапрĕ йĕкĕте. Ура çине тăма вăй çитерчĕ хайхискер. Алхасакан этем айккинелле сирпĕнчĕ. Хĕрсе кайнă Наçтуç балкон патне ыткăнчĕ, тухрĕ, ниме уямасăр сикрĕ аялалла. Виççĕмĕш хутран-çке! Çакна шута илесси асăнче те пулман. Ÿкрĕ нăчлатса чуллă, çур шывĕпе çуркаланнă, катăлнă, тĕпреннĕ асфальт çине. Хăвăртрах тармалла! Хуса ан çитейтĕр тискер йытă. Тăма пикенчĕ. Ăçта унта, итлемеççĕ урасем. Мĕн амакĕ? Хаяр ырату касса кайрĕ пĕтĕмпе. Тăнне çухатрĕ хĕр...

— Ай-уй, çÿлти хутран ÿкрĕ! — кăшкăрчĕ таçта пĕри.

— Тĕртсе ячĕç-им? — тĕпчерĕ тепри.

 Иртен-çÿрен кĕпĕрех пухăнчĕ Наçтуç тавра. Тахăшĕ автомат-телефон патне чупрĕ.

— Вилмен-и?

— Сывлать!

Куç умĕнчи инкекĕн хăй тавра халăха пухас йăла пур. Кашниех чарăнать амак сăлтавне пĕлесшĕн. Ыйтаççĕ, тĕпчеççĕ, тĕлĕнеççĕ. Пĕри шеллесе ахлатать, теприн, чурăс чунлин, пÿрне вĕçĕ те хускалмасть. Кайран пĕр сăмах çумне пин сăмах хушать те алласа парать тĕл пулана, тĕлĕнтерет хăйĕн хыпарĕпе.

Васкавлă пулăшу машшини çитрĕ. Санитарсем Наçтуçа насилкка çине вырттарса машшина вырнаçтарчĕç. Илсе кайрĕç вара ăна травматологи пульницине.

х х х

Суссан, килне таврăнсан, унта мĕн пăтăрмахĕ пулнине пĕр самантра ăнкарса илчĕ.

— Ых-х, çулламан пăру! — ятларĕ вăл Альберта. — Хĕре те пăсаймастăн!

— Пурте, сан пек, тĕкĕннĕ-тĕкĕнмен сарăлса выртмаççĕ, — тавăрчĕ каччă мĕскĕнĕн.

Шутсăр тарăхрĕ Суссан: ара, тавăраймарĕ-çке Питахире. Малтанхи хут тĕл пулнă чухнех, Суссана тĕртнĕ пек: «Каччă аллинче сарăхнă хĕре юратмастăп», терĕ. Ку пĕрре. Тата Питахир ăна мар, Наçтуçа качча илмеллех юратрĕ, ăна таса хĕр вырăнне хучĕ. Çавăншăнах Альберта (хăй кĕвĕçнине пăхмасăр) хушрĕ Наçтуçа пăсса мăшкăллама. Кайран, Наçтуçа качча илсен, Питахиртен пĕç çапса кулса: «Аха-а, пуçламан, таса хĕр лекмерĕ-и?!» — тесшĕнччĕ... «Тавăру ытлашшипех те-и, тен. Наçтуç — уксах. Чунĕ мана аса илсе те пайтах ыратĕ-ха», — çапла лăплантарчĕ хăйне Суссан.

Нумаях та вăхăт иртмерĕ, мăшăрланса çитеймен Альбертпа Суссанăн уйрăлма тиврĕ. Вăрманта иккĕшĕ ĕçсе-çисе ашкăннă хыççăн инкеке лекрĕç. Альберт хĕрĕнкĕ пуçĕпе машшинипе урам урлă каçакан Христина Акшар çыравçа çапса ўкерчĕ. Лешин ури хуçăлнă. Икĕ тискер ĕçшĕн йĕрлеме тытăнчĕç хайхискерсене. Айăплас самант ситиччен килтен тухса тарчĕç иккĕшĕ икĕ енне. Темĕн чухлĕ пытанса çўресен те, тавăру вĕсене хуса çитетех. Тĕрĕслĕхрен хăтăлаймĕç.

Пуçлăхрах юлайĕ-ши Альберт ашшĕ Аверкеев? Çавнашкал хура чунлă этем ăçтан ĕçлейтĕр халăхшăн ĕçре. Халĕ вăхăчĕ ĕлĕкхи мар — çĕнетў тапхăрĕ. Малышев милиционе-следователь чаплă хваттерлĕ пулса юлчĕ: паллах, унтан кăларса ывăтмĕç. Çапах та... шăмă кăшлама хăнăхнă йытă пăрахмĕ кăшлама. Анчах кĕтсех тăр, пырне капланатех шăмă, чыхăнатех хăçан та пулин.

## 16

Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ Наçтуçăн «вăрттăнлăхне».

— Айван вăл Наçтуç, — терĕ Илона.

— Чăнкăрăм, мĕншĕн апла хак паран? — терĕ Татьене.

— Тăна ил: хĕр чысне сыхласа вăл уксах пулса юлнă. Хальхи вăхăтра кам хаклать унашкаллине, кам хаклать хĕр чыслăхне пуçламаннинине?! — шăрчăклать Илона хăйĕн шу-

хăш çиппине. — Сана ку тарана çитсе те никам та юратман Мана та эсĕ кирлĕ мар, тейĕ акă каччи.

— Эсĕ, Илона, айвансем ушкăнне явăçнă курăнать, — чарлаттарса пăхрĕ Татьене Илона куçĕнчен. — Таса сĕтел хушшине апат ларса çиме мĕн тери кăмăллă. Çын юлашкине лĕрккеме мĕн тери паккăç! Наçтуçăн каччи Çар училищи пĕтернĕ. Вăл — лейтенант. Ленинградран паян-ыран килсе çитмелле вăл Наçтуçа илме.

— Лейтенант? Ну-и ухмах каччă вăл. Ленинградра хĕр тупман, кунта уксаххине илме килет.

— Наçтуç чăн-чăн ырă чунлă хĕр. Ăна арăм тума хапсăнакансем татах пур-тăр.

Татьене сăмахĕсем çамрăк Илонăна шухăша ячĕç. Ăна илчех ĕнтĕ аслă тусĕн сăмахне. Вăл ыран килмест кунта, практика вĕçленчĕ ун.

Саккăрмĕш палатăна пырса кĕчĕ Татьене хăйĕн яланхи ĕçĕпе.

Часах ку палата пушанса юлать. Христина Акшар çыравçа киле яраççĕ, уринчи йĕпписене кăларнăранпа чиперех утать. Юлмасть кунта Наçтуç та. Вăл, каланă пек, чупаймасть, çапах та аванах яра-яра пусать.

— Сирĕн иксĕрĕн те утас, утас пулать, — тет тухтăр вĕсене.

Христина Акшар халлĕхе пурăнма хăй патне илсе каять Наçтуçа, йăпатать ăна:

— Сипленме поликлиникăна пĕрле çӳрĕпĕр: парафинпа ăшăтĕç, массаж тăвĕç...

Питахир аппăшĕ Анна Трофимовна кĕрсе тăчĕ пĕррехинче палатăна. Аран-аран шыраса тупнă вăл Наçтуçа. Вăл та хăй патне пурăнма чĕнчĕ. Килĕшĕ-и вара унашкал сĕнӳпе йĕркеллĕ хĕрупраç? Тем тусан та!..

Таксипе таврăнчĕ пульницаран Христина Акшар хăйĕн çамрăк тусĕпе.

Эрне те иртмерĕ, Наçтуç телеграмма илчĕ. Питахир çаптарнă...

Хакĕ 20 пус
Индекс 73987

Библиотека «ЯЛАВА» № 2 (86)

ЭЛЬБИ Валентина Андреевна

ДО ЗАМУЖЕСТВА

Повесть

На чувашском языке

Редактор П. К. Львов
Худ. редактор В. П. Сидоров

Издательство Чувашского обкома КПСС

НТ 36085. Сдано в набор 2.01.90 г. Подп. к печати 30.01.90 г.
Усл. печ. л. 2,6. Формат 70х100 1/32. Объем 2 п. л. Уч. изд. л.
3,02. Авт. л. 3,0. Заказ № 22. Тираж 10000. Цена 20 коп.
Типография издательства Чувашского обкома КПСС,
г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.